К 81.635.1
С32
32776-чув

В. И. СЕРГЕЕВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧИ ЯПАЛА ЯЧĔ

Вĕренӳ пособийĕ

Шупашкар 1990

Национальная библиотека ЧР
4-032776

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

РСФСР НАУКА ТАТА АСЛĂ ШКУЛ ĔÇĔСЕН ПАТШАЛĂХ КОМИТЕЧĔ
И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ

К 81.635.
С 32

В. И. СЕРГЕЕВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧИ ЯПАЛА ЯЧĔ

Вĕренӳ пособийĕ

Шупашкар 1990

81.635.1-923-2

Сергеев В. И. Имя существительное в чувашском языке: Учеб. пособие / Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1990. 64 с.
ISBN5—230—17996—1

Учебное пособие подготовлено в соответствии с «Программой по лингвистическим курсам» и предназначено для студентов дневного и заочного отделений.

Пособие состоит из двух частей, введения и заключения.

В вводной части ставятся основные задачи изучения имен существительных чувашского языка. В первой части рассматриваются категориальные формы, а во второй — некатегориальные формы. В заключительной части даются обобщающие выводы по двум разделам.

Пособие отличается полнотой охвата вопросов, предусмотренных программой.

Утверждено Редакционно-издательским советом университета в качестве учебного пособия

Научный редактор: канд. филол. наук, доцент **Ю. М. Виноградов**

Рецензенты: кафедра чувашского языка и литературы Института усовершенствования учителей Чувашской АССР; д-р филол. наук, профессор **Л. П. Сергеев**

ПРОВЕРЕНО
20 10

32776 чув

Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ISBN5—230—17996—1

© Чувашский государственный университет, 1990

## Сăмах тата сăмах формин улшăнăвĕ

### УМСĂМАХ

Ку таранччен эпир, вырăс чĕлхин морфологи курсне тĕпе хурса, сăмах улшăнăвĕ çинчен кăна калаçнă. Чăваш чĕлхи агглютинациллĕ чĕлхе шутланать, çавăнпа та сăмах улшăнăвĕ пирки кăна вĕрентни пирĕн чăваш чĕлхи морфологийĕшĕн пачах та çителĕксĕр.

Тĕслĕхрен, *çынпа, çынсемпе, çыннисемпе* сăмах формисем грамматика енчен пачах расна: *çынпа* тенĕ чухне *çын* сăмах пĕрлелĕх падежĕнче пулнине пĕлетпĕр, анчах та *çынсемпе* тенĕ чухне çав сăмахăн нумайлă хисеп форми пĕрлелĕх падежĕнче тăрать, *çыннисемпе* тĕслĕхре камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат форми нумайлă хисепре тата пĕрлелĕх падежĕнче. Асăрхăр, *çынпа* сăмахăн пĕрлелĕх падеж форми малалла ытти категори формисене пачах та йышăнмасть.

Халĕ *çынсем* нумайлă хисепĕн категори формине илер. Ку форма ирĕклĕнех вĕçленет, апла пулсан, пур падеж аффиксне те йышăнать: *çынсен, çынсене, çынсенче, çынсенчен, çынсемпе, çынсемсĕр, çынсемшĕн.* Унсăр пуçне эпир *çынсемех, çынсемччĕ* теме те пултаратпăр.

*Çынни* — камăнлăх категорийĕ, 3-мĕш сăпат форми. Вăл вĕçленет: *çыннин, çыннине, çыннинче, çыннинчен, çыннипе, çыннисĕр, çыннишĕн;* вăлах нумайлă хисеп формин аффиксне йышăнать те каллех туллин вĕçленет: *çыннисен, çыннисене, çыннисенче, çыннисенчен, çыннисемпе, çыннисемсĕр, çыннисемшĕн.* Çав вăхăтрах эпир *çынниех, çынниччĕ* формăсене те тĕл пулатпăр: *хамăр ял çынниех вăл; кӳршĕ ял çынниччĕ вăл.*

Ку таранччен мĕн каланине çакăн пек ӳкерчĕк туса кăтартма пулать:

| | | |
|---|---|---|
| I | *çын* (сăмах, лексика единици) | туллин вĕçленет: *çынăн, çынна, çынта, çынтан, çынпа, çынсăр, çыншăн*<br>нумайлă хисепре пулать: *çын(+)сем*<br>камăнлăх категорийĕн пур афф. йышăнать: *çыннăм, çынну, çынни, çыннăмăр, çыннăр*<br>*çын(+)ччĕ* япалан иртнĕ вăхăтри тăрăмне палăртать<br>*çын(+)ах* вăйлату форминче пулать |

| | | |
|---|---|---|
| II | *çынпа*<br>(пĕрлелĕх падеж форми) | *çын-па-х* (вăйлату форминче)<br>*çын-па-ччĕ* (иртнĕ вăхăтра)<br>*çын-п-и(н)-е çынпах килчĕ* (палăрту форминче + пару падежĕнче)<br>*çын-па-скер* (палăрту форминче) |
| III | *çын-сем*<br>(нумайлă хисеп категори форми) | туллин вĕçленет<br>*çын-се-нн-и* (камăнлăх падежĕнче + палăрту формине)<br>*çын-сем-ех* (вăйлату формине)<br>*çын-сем-ччĕ* (иртнĕ вăхăтра) |
| IV | *çынн-и*<br>(камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат форми) | туллин вĕçленет<br>н. х. пулать: *çынн-и-сем*<br>*çынниччĕ* (иртнĕ вăхăтра)<br>*çынниех* (вăйлату формине) |

Çапла вара, эпир сăмах улшăнăвĕ çинчен кăна мар, сăмахăн вăл е ку форми мĕнле улшăнни çинчен ирĕккĕнех калаçма пултаратпăр. **Сăмах улшăнăвĕ** вăл — сăмах тĕпĕ (лексика единици) тĕрлĕрен сăмаха улăштаракан аффикссене хăй çумне тӳрех йышăнма пултарни. Сăмах формин улшăнăвĕ çинчен калаçнă чух сăмах тĕпĕ çумне хушăнакан форма малалла мĕнле аффикссем йышăннине шута илетпĕр.

Паллах, тĕрлĕрен пуплев пайне лекекен сăмахсен е сăмах формисен улшăнăвĕ пĕр мар. Тĕслĕхрен:

| | |
|---|---|
| *пысăк*<br>(паллă ячĕ) | *пысăк-рах* (танлаштару категори формине)<br>*пысăкк-и* (палăрту категори формине)<br>*пысăк-скер* (палăрту категори формине)<br>тулли мар вĕçленӳре пулать: *пысăка (хур), пысăкран, пысăкшăн*<br>*пысăкк-ăн* (мĕнлелĕх категори формине) |

Паллă ячĕн грамматика формисене хăшпĕр чухне япала ячĕсем те йышăнма пултараççĕ: *ача-рах, тиха-рах, курăк-рах* — япала ячĕн танлаштару форми; *ача-скер, тиха-скер* — япала ячĕн палăрту форми. Кун пек чухне вĕсем, суйлавлăх принципне пăхăнса, категорисĕр формăсем шутланаççĕ. **Грамматика формисем вăл е ку пуплев пайĕнчи мĕнпур е чылай сăмах çумне çыпçăнма пултараççĕ пулсан, эпир вĕсене категори форми теетпĕр.** Акă **-сем** нумайлă хисеп аффиксĕ пур япала ячĕ çумне те çыпçăнма пултарать. Апла пулсан, япала ячĕн нумайлă хисеп категори форми пур. Пур япала ячĕ те вĕçленнине шута илсен, япала ячĕн вĕçленӳ тата падеж категорийĕсем пурри курăнать.

Уйрӑм сӑмахсем кӑна йышӑнакан грамматика формисем суйлавлӑх принципне пӑхӑнаҫҫӗ. Акӑ *ачарах (вӑл ачарах-ха халь)* теҫҫӗ, анчах ҫав пӗлтерӗшпех *юманрах, калемрех* формӑсемпе усӑ курма ҫук. **Сайра усӑ куракан формӑсене категорисӗр формӑсем теме пулать.** Ҫапла вара, *ача-сем*—япала ячӗн нумайлӑ хисеп категорийӗн форми, *ача-рах (вӑл ачарах-ха халь)* — япала ячӗн танлаштару форми, вӑл категорисӗр форма шутланать. Категори формисем пӗтӗмлӗх (е чылайлӑх) принципне пӑхӑнаҫҫӗ. Вӗсем, вӑл е ку пуплев пайӗнчи пур (е чылай) сӑмах ҫумне ҫыпҫӑнса, грамматика пӗлтерӗшне туллин палӑртаҫҫӗ. Процент тӗлӗшӗнчен шутласан, категори формисем вӑл е ку пуплев пайне кӗрекен пӗтӗм сӑмахӑн 75—100 процентне хушӑнма пултараҫҫӗ.

Категорисӗр формӑсем суйлавлӑх принципне пӑхӑнаҫҫӗ. Ҫыпҫӑнасса вӗсем вӑл е ку пуплев пайӗнчи сӑмахсен пӗрре виҫҫӗмӗш е унтан та каярах пайӗ ҫумне кӑна ҫыпҫӑнаҫҫӗ. Хушӑран вӗсем уйрӑм сӑмахпа е сӑмах формипе ҫӳреҫҫӗ.

Ҫапла вара, чӑваш чӗлхинче сӑмах улшӑнӑвӗ тата сӑмах формин улшӑнӑвне кӑна мар, категориллӗ формӑсемпе категорисӗр формӑсен улшӑнӑвне те тӗпчемелле. **Пуплев пайӗсем тата ҫав пуплев пайӗсене кӗрекен сӑмахсен е вӗсен категори формисемпе категорисӗр формисен улшӑнӑвӗпе пӗлтерӗшӗсем ҫинчен вӗрентекен чӗлхе наукин пӗр пайне морфологи теме юрать.**

Чӗлхемӗрте сӑмах тата сӑмах формин улшӑнӑвӗ пурри куҫкӗретлӗ. Ҫавӑнпа та кашни пуплев пайне тӗпченӗ чухне ҫав уйрӑмлӑха шута илсе пымалла. Ку вара чылай грамматика пулӑмӗсене ансат та уҫӑмлӑ ӑнлантарма май парать. Категори формисемпе категорисӗр формӑсем пуплев пайӗсене хӑйсене пахалӑх виҫипе шайлаштарма, пӗр-пӗринчен тӗрӗсрех уйӑрма май параҫҫӗ.

## 1 §. ЯПАЛА ЯЧӖ

*Кам? мӗн?* ыйтура тӑрса япалана пӗлтерекен, сӑпат, хисеп, падеж тӑрӑх улшӑнакан сӑмахсене япала ячӗ теҫҫӗ.

Ку таранччен ӗҫсенче япала ятне лексика пӗлтерӗшӗ тӑрӑх кӑна палӑртнӑ: 1) япалалӑха пӗлтерекен пуплев пайне япала ячӗ теҫҫӗ; 2) *кам? мӗн?* ыйтура тӑракан, япалана пӗлтерекен пуплев пайне япала ячӗ теҫҫӗ. Ку палӑртӑмсем тулли мар, мӗншӗн тесен вӗсенче япала ячӗн морфологи паллисене пачах та асӑнман.

Чӑваш чӗлхинче *кам?* ыйтӑва ҫынна палӑртакан сӑмахсем кӑна хуравлаҫҫӗ. Чӗрӗ мар япаласен, чӗрчун ячӗсене *мӗн?* ыйту паратпӑр: *сӗтел — мӗн? сысна — мӗн? ҫын — кам? Ванюк — кам?*

Япалана пĕлтерекен тенине çапла ăнланмалла: чăн пурнăçри япаласем (вĕсене алпа тытса пăхма, куçпа курма май пур пулсан) пурте морфологире япала ячĕ пулаççĕ, анчах та япала ячĕ шутне алпа тытма май çук, куçа курăнман пулăмсемпе абстрактлă ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем те кĕреççĕ: *юрату, курайманлăх, тасалăх, çылăхлăх* т. ыт. те. Кун пек сăмахсене япала ячĕн ретĕнче тивĕçлĕ категори формисене йышăнма пултарнине ăсласа пăхмалла.

Япала ячĕ сăпат тăрăх улшăнни унăн камăнлăх-сăпат категорийĕ пуррине ĕнентерет: *кĕнекем, кĕнекӳ, кĕнеки, кĕнекемĕр, кĕнекĕр*. Хисеп тăрăх улшăнни хисеп категорийĕ çинчен калаçма хистет: *ача — ачасем, çурт — çуртсем, хĕр — хĕрсем, Ивановсем* т. ыт. те. Вĕçленӳ туллилĕхĕ вĕçлевлĕх категори шайĕнче тăнине кăтартать.

Морфологи курсĕнче пайăр ятсемпе пайăр мар ятсене уйăрса пăхаççĕ. Тĕрĕссипе илсен, вĕсем хушшинче нимĕнле морфологи уйрăмлăхĕ те çук. Пĕлтерĕшĕсем çеç расна. Апла пулсан, çак икĕ ушкăна лексикологире тата ономасиологире кăна тĕпчемелле.

Çавăн пекех чăваш чĕлхинче паллăлăхпа паллăмарлăх категорийĕ пурри çинчен те калаçаççĕ. Ку категори ăнлав çинче никĕсленет. Паллă пулнипе пулманнине лексика, морфологи мелĕпе те, синтаксис мелĕпе те палăртма пулать. Паллăлăхăн та, паллăмарлăхăн та ятарлă аффикссем çук. Çавăнпа та кун пек чух морфологи категорийĕ çинчен калаçма май килмест.

Несĕл пĕлтерĕшне илес пулсан, ăна тĕрлĕ мелсемпе палăртатпăр:

1) лексика мелĕпе: *хĕр — ывăл, арçын — хĕрарăм, аçа — ама, хĕрсем* «золовка» — *ывăлсем* «деверь»;

2) синтаксис мелĕпе: *арçын ача — хĕр ача, сысна аçи — сысна ами, кăвакал аçи — кăвакал ами, хур аçи — ама хур; аçа сысна — ама сысна*;

3) вырăс чĕлхинчен е ун урлă кĕнĕ сăмахсенче вырăс чĕлхинчи морфологи мелĕпе: *активист — активистка; учитель — учительница, поэт — поэтесса, комсомолец — комсомолка* т. ыт. те.

Ку ретре чăваш чĕлхин аффиксĕ курăнмасть. Апла пулсан, чăваш морфологийĕн курсĕнче несĕл категорине тишкермелле мар.

## 2 §. ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧИ ХИСЕП КАТЕГОРИЙĔ

Морфологин категори формисем тесе, пĕр-пĕрне хире-хирĕç тăракан пĕр йышши пĕлтерĕшлĕ формăсен системине калама йышăннă. Хире-хирĕç тăракан формăсенчен пĕрин ятарлă аффиксĕ пулмасан та пултарать. Ку таранччен категори формисем çинчен калаçма хирĕçлетĕве лекекен тепĕр формăн

(е формăсен) ятарлă аффиксĕ пулсан тин май пур тетчĕç. Тĕслĕхрен, чăваш чĕлхинче пĕрреллĕ хисепĕн ятарлă аффиксĕ çук, нумайлă хисепĕн аффиксĕ— *-сем: ача — ачасем; кĕнеке — кĕнекесем.* Чĕлхемĕрте нумайлă хисеп категорийĕ пулсассăн, *-сем* аффикс пур (е чылай) япала ячĕсемпе çӳреме тивĕç. Чăнах та, *-сем* аффикс пайăр ятсем çумне те, пайăр мар ятсем çумне те хушăнать: *йывăç — йывăçсем, Иван — Ивансем.* Тĕрлĕрен пĕлтерĕш уйрăмлăхсене палăртнă чух *-сем* аффикс йышăнман япала ячĕ чĕлхемĕрте çук та темелле. Çавăнпа та шкул учебникĕнче «нумайлă хисепре каламан япала ячĕсем те пур» тенипе килĕшме йывăр. Чăваш чĕлхинчи *-сем* аффикс, нумайлăха пĕлтернисĕр пуçне, сăмахсене тĕрлĕ пĕлтерĕш сĕмĕ парать. Апла пулин те, ăна эпир нумайлă хисеп аффиксех тетпĕр. Тĕпчевçĕсем час-часах грамматикăн хисеп категорине ăнлав категорийĕпе пăтраштараççĕ. Пĕрреллĕх тата нумайлăх категорийĕсем — ăнлав (логика) категорийĕсем. Пĕрреллĕ хисеп тата нумайлă хисеп тенисем — морфологи (грамматика) категорийĕсем. Ăнлав категорийĕпе шайлашуллă морфологи категорийĕ пуррипе çуккине ĕнентерес тесен, ăна тивĕçлĕ аффикс шырамалла. Енчен те çавăн пек аффикс çук пулсан, грамматика категорийĕ çинчен те калаçма май килмест.

Пĕрреллĕ хисепĕн аффиксĕ çук. Апла пулсан, чĕлхемĕрте пĕрреллĕ хисепĕн морфологи категорийĕ çук темелле пек, пĕрреллĕ хисепе наукăра нуль (∅) морфемăпа палăртма йышăннă.

Пĕрреллĕхе, пĕчченлĕхе кăтартма чĕлхемĕрте пирĕн çак куçкĕрет майсем пур:

а) лексика мелĕ: *ача, пукан, юман, çĕр, çын* т. ыт. те;

ă) синтаксис мелĕ: *пĕр ача, хăрах ура, тырă пĕрчи, такам ачи* т. ыт. те.

Нумайлă хисеп чăваш чĕлхинче — морфологи категорийĕ. Унăн ятарлă аффиксĕ — *-сем.*

Нумайлăх ăнлав категорине эпир тĕрлĕ мелсемпе палăртатпăр:

а) *-сем* аффикспа: *ачасем, çынсем, çуртсем* (морфологи мелĕ);

ă) мăшăр тата икĕ хут каланă сăмахсемпе: *ача-пăча, чашăк-тирĕк, хир-хир, ял-ял* (лексика мелĕ);

б) сăмах майлашăвĕсемпе: *пилĕк ача, темиçе çын, нумай кĕнеке* (синтаксис мелĕ);

в) контекстпа: *пĕр витре хăяр* тенĕ чухне *хăяр* сăмах паллă мар нумайлăха палăртать (лексикăпа синтаксис мелĕ);

г) интонаципе: *пӳлĕмре шăн-а-а; урамра ача-а-а* (фонетика мелĕ, тĕрĕсрех: синтаксиспа фонетика мелĕ).

Чăваш чĕлхинче нумайлă хисеп кăна морфологи категорийĕ шайĕнче тăрать тени «грамматика категорийĕсем пĕр-

пĕрне хире-хирĕç тăракан пĕр йышши пĕлтерĕшлĕ формăсен системине кĕреççĕ» тенине хирĕçлет. Çавăнпа пулас, юлашки çулсенче морфологире хирĕçтăравлă формăсемсĕр çӳрекен грамматика категорийĕсем çинчен те çыраççĕ[1].

Малалла *-сем* аффикслă япала ячĕсен пĕлтерĕшĕсем çинчен калаçăпăр.

Чăваш чĕлхинчи *-сем* аффикслă япала ячĕсем чи малтанах япаласен паллă мар хисепне палăртнине кăтартмалла: *сĕтелсем, çынсем, кашкăрсем* тесен, эпир *сĕтел, çын, кашкăр* нумаййине пĕлетпĕр, анчах вĕсен шучĕ, йышĕ-хисепĕ миçе пулни паллă мар. Нумайлă хисеп формине сыхласа хăварса, япалан хисепне тĕрĕс кăтартас тенĕ чухне *-сем* аффикслă япала ячĕ хыççăн (умĕн мар!) тĕрлĕ хисеп ячĕсем лартма пулать: *сĕтелсем виççĕ илтĕмĕр, пукансем тăваттă.* Анчах та кун пек йĕрке ытларах калаçура тĕл пулать.

Сăмахсен хупăрлавĕнче (контекстра) *-сем* аффикслă япала ячĕ темиçе пĕлтерĕшлĕ те пулма пултарать:

1. *Куçмасем* (Куçма ятлă темиçе çын);

2. *Куçмасем вăрмана кайрĕç* (Куçма тата унпа пĕрле каякан çынсен ушкăнĕ);

3. *Куçмасем патне хăнана кайрăмăр* (Куçма тата унăн килйышĕ, çемйи);

4. *Куçмасем — патĕнче пултăм* (Куçма пĕччен пурăнать пулсан та, çапла калатпăр); кунта нумайлă хисепри ятăн сăпайлăх (е евĕклĕх) пĕлтерĕшĕ палăрать.

Çак пĕлтерĕшсенех пайăр ятсенче те (уйрăмах тăванлăха пĕлтерекен сăмахсенче) асăрхама пулать:

1. *Аттесем патне кайрăм* (атте тата унăн çемйи).

2. *Аттесем ферма тăваççĕ* (атте тата унпа пĕрле ĕçлекен ушкăн).

3. *Аттесем патĕнче пултăм* (атте килте пĕчченех пурăнать пулсан та, çапла калатпăр, сăпайлăх — ачашлав пĕлтерĕшĕ).

Нумайлă хисеп аффиксне йышăннă япала ячĕсем пĕрелле е пĕччен лĕхе палăртни сăмахсен хупăрлавĕнче уççăнах палăрать:

*Эпĕ элĕксем, эсĕ муркашсем, вăл елчĕксем* тенĕ чухне *элĕксем, муркашсем, елчĕксем* сăмахсем нумайлăха палăртассипе çыхăнман пулин те, вăл сăмахсене эпир нумайлă хисепри япала ячĕ тетпĕр, пĕлтерĕш уйрăмлăхне асăрхаттарса хăваратпăр. *Эпир элĕксем, эсир муркашсем, вĕсем елчĕксем* тенĕ чухне пĕлтерĕшĕ грамматика формипе тӳр килет.

*Эпĕ элĕксем, вăл муркашсем* йышши сăмах çаврăнăшĕсенче *-сем* аффикс сăмаха улăштаракан формантран сăмах тăвакан аффикс пĕлтерĕшлĕ пулма пуçлани курăнать: *-сем* аф-

---

[1] Бондаренко А. В. О системно-структурной организации грамматических категорий слова // Слово в грамматике и словаре. М.: Наука, 1984. С. 29—37.

фикслӑ япала ячӗсем лексикализациленнин тӗслӗхӗсем те пур чӗлхере. Акӑ *хӗрсем* «золовка», *ывӑлсем* «деверь» япала ячӗсем словарь единицисем шутланаççӗ. Вӗсене словарьсенче реестра кӑларса çыраççӗ. Нумайлӑха палӑртас тенӗ чухне нумайлӑ хисеп аффиксне икӗ хут калаççӗ: *хӗрсемсем, ывӑлсемсем*. Калаçу чӗлхинче тепӗр чухне *хӗрсемсем* тени те пӗр çынна кӑна палӑртать (сӑпайлӑх е евӗклӗх пӗлтерӗшӗ).

Нумайлӑ хисеп аффиксне шута тивӗçмен абстрактлӑ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем те хушӑран йышӑнаççӗ:

— *Сывлӑхсем мӗнле, Иван Петрович?* (Игн. Иккӗмӗш тӗлпулу). Çынӑн сывлӑхне пӗрре, иккӗ... тесе шутлама май çук, çавӑнпа та ку пуплеври *сывлӑхсем* сӑмах урлӑ эпир хамӑр сӑпайлӑха е евӗклӗхе кӑтартатпӑр, хамӑрпа калаçан çынна хисепленине палӑртатпӑр.

Хушӑран, *-сем* аффикслӑ сӑмахсемпе усӑ курса, эпир хамӑрпа калаçакан çынна йӗплесе илме те пултаратпӑр. Сӑмахран, *Чӗлхӳ сан хӑвӑнтан вӑрӑм* тени *Чӗлхӳсем сан хӑвӑнтан вӑрӑм* тенинчен стиль тӗлӗшпе уйрӑлса тӑрать. Нумайлӑ хисеп аффиксне йышӑннӑ сӑмахсен стиль уйрӑмлӑхӗсене фольклорта тата поэзире асӑрхама пулать:

Çакӑ хуçанӑн *ӗçки-çикисем*
Пурте ватӑ хуртӑн *пылӗсем*

(Ашм. Синт. 1. С. 50)

*Пылӗсем* сӑмахпа кунта янравлӑхшӑн кӑна усӑ курман, ӗçме-çиме чаплӑ пулнине çапла палӑртнӑ.

Традицие пӑсас мар тесен, паллах, морфологире пӗрреллӗ хисеп пурри çинчен каламалла, анчах та япала ячӗсенче пӗрреллӗ хисепӗн ятарлӑ аффиксӗ çук иккенне манма кирлӗ мар, мӗншӗн тесен морфологи категорийӗн ятарлӑ форми (аффиксӗ) пулмаллах. Вӑл çук пулсан, морфологи категорийӗ çинчен калаçма йывӑр. Çуккине пур туса кӑтартни пирӗн чӗлхере татах та тӗл пулать. Тӗслӗхрен, тӗп падежӑн, кӑтарту наклоненийӗн, çирӗплетӳ аспекчӗн, тӗп залогӑн ятарлӑ аффикссем çук. Ку категорисене морфологи курсӗнче вӗрентмеллипе вӗрентмелле марри çинчен уçӑмлӑн калама вӑхӑт çитнӗ. Çав сӑлтава пулах камӑнлӑх-сӑпат категорийӗн тӗп форми пуррине ку таранччен никам та асӑнман.

## 3 §. КАМӐНЛӐХ-СӐПАТ КАТЕГОРИЙӖ

Камӑнлӑх категорийӗ — ӑнлав категорийӗ, камӑнлӑх-сӑпат категорийӗ — морфологи (грамматика) категорийӗ. Мӗнпе уйрӑлса тӑраççӗ-ха вӗсем пӗр-пӗринчен?

Қамӑнлӑха (ӑнлав категорине) чӗлхере тӗрлӗ мелсемпе палӑртма май пур:

а) синтаксис мелӗпе:

| | |
|---|---|
| ман кӗнеке | пирӗн кӗнеке |
| сан кӗнеке | сирӗн кӗнеке |
| хам ҫурт | хамӑр ҫурт |
| хӑвӑн ҫурт | хӑвӑр ҫурт |

ӑ) синтаксис тата морфологи (аффикс) мелӗпе:

| | |
|---|---|
| ман кӗнекем | пирӗн кӗнекемӗр |
| сан кӗнекӳ | сирӗн кӗнекӗр |
| ун кӗнеки | вӗсен кӗнеки |
| хамӑн кӗнекем | хамӑр кӗнекемӗр |
| хӑвӑн кӗнекӳ | хӑвӑр кӗнекӗр |
| хӑйӗн кӗнеки | хӑйсен кӗнеки |

б) морфологи (аффикс) мелӗпе:

| | |
|---|---|
| 1 с. кӗнеке-м | кӗнеке-м-ӗр |
| 2 с. кӗнек-ӳ | кӗнек-?-ӗр |
| 3 с. кӗнек-и | ? кӗнек-и |

Тӗрӗссипе илсен, морфологире камӑнлӑх пӗлтерӗшне сӑпатсем тӑрӑх аффикссемпе палӑртнине кӑна вӗренмелле. Синтаксис мелне морфологи курсӗнче пӑхса тухмалла мар, ӑна асӑнса иртсен ҫитет. Синтаксис тата морфологи мелӗ — хутӑш мел.

Ҫапла вара, морфологире япалине те, хуҫине те сӑпат аффиксӗсемпе кӑтартакан формӑна кӑна камӑнлӑх-сӑпат категорийӗ темелле.

Қамӑнлӑх категорийӗн аффиксӗсем япала ячӗ ҫумне хушӑнса пынине ҫак таблицӑра кӑтартма пулать:

| Япала ячӗсен тата сӑпатсен хисепӗсем | Япала ячӗ те, сӑпат аффиксӗ те пӗрреллӗ хисепре | Япала ячӗ пӗрреллӗ хисепре, сӑпат аффиксӗ нумайлӑ хисепре | Япала ячӗ нумайлӑ хисепре, сӑпат аффиксӗ пӗрреллӗ хисепре | Япала ячӗ те, сӑпат аффиксӗ те нумайлӑ хисепре |
|---|---|---|---|---|
| 1-мӗш сӑпат | -м<br>-ӑм<br>-ӗм | -м-ӑр<br>-ӑм-ӑр<br>-ӗм-ӗр | -м-сем<br>-ӑм-сем<br>-ӗм-сем | -м-ӑр-сем<br>-ӑм-ӑр-сем<br>-ӗм-ӗр-сем |
| 2-мӗш сӑпат | -у<br>-ӳ | ? -ӑр<br>? -ӗр | -у-сем<br>-ӳ-сем | -?-ӑр-сем<br>-?-ӗр-сем |
| 3-мӗш сӑпат | -ӗ<br>-и | ?<br>? | -ӗ-сем<br>-и-сем | ? -сем<br>? -сем |

Ку таблицӑна эпир И. П. Павлов кӗнекинчен[2] илтӗмӗр, анчах та унта ҫӗнӗлӗхсем кӗртрӗмӗр. Уҫӑ сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем ҫумне камӑнлӑх-сӑпат категорийӗнче *-м* алломорф хушӑннине халиччен палӑртман пулнӑ, анчах та унсӑр май ҫук: *ача-м, кӗнеке-м, лаша-м, урапа-м, ҫуна-м.*

*Ачам-пӑчам* пит айван
Халиччен суха тытайман (Фед.)

И. П. Павлов таблицинче 2-мӗш сӑпат аффиксӗ нумайлӑ хисепре мӗнле иккенне уҫӑмлатман. Ҫавӑнпа сӑпатӑн пӗрреллӗ хисеп форми вырӑнне ыйту палли лартмалла.

Ку таранччен камӑнлӑх-сӑпат категорийӗн 3-мӗш сӑпат аффиксӗ пӗрреллӗ хисепре те, нумайлӑ хисепре те *-и, -ӗ* пулать, тенӗ. Ку пачах та тӗрӗс мар. Чӑваш чӗлхинче 3-мӗш сӑпат нумайлӑ хисепре пулнине кӑтартакан ятарлӑ аффикс ҫук. Апла пулсан, 3-мӗш сӑпатӑн нумайлӑ хисепӗ те ҫук. Вӑл яланах пӗрреллӗ хисепре.

Ку таранччен, япала ячӗн 3-мӗш сӑпачӗ пӗрреллӗ хисепре те, нумайлӑ хисепре те пӗр формӑллӑ пулнине асӑрханӑ пулин те, ӑнлав категорийӗпе грамматика категорийӗ хушшинчи уйрӑмлӑхсене курманнипе, сӑпачӗ нумайлӑ хисепре пулнине синтаксис мелӗпе палӑртма май пур тенӗ[3]: *унӑн кӗнеки* тенӗ чух *кӗнеки* — 3-мӗш сӑпатра, пӗрреллӗ хисепре, *вӗсен кӗнеки* тенӗ чух *кӗнеки* — 3-мӗш сӑпатра, нумайлӑ хисепре пулса тухнӑ. Ку ҫул ҫине тӑрас пулсан, *пирӗн кӗнекем, сирӗн кӗнекӳ* тенӗ чухне те *кӗнекем, кӗнекӳ* сӑмахсен сӑпат аффиксӗ нумайлӑ хисепре теме лекет, анчах апла никам та, ниҫта та каламан. Автор, паллах, категори формисем шутне уйрӑм сӑмахсен формисене кӑна мар, ытти мелсене те кӗртет. Халичченхи теорие тӗпе хурас пулсан, сӑмах майлашӑвӗсемпе сӑмах ҫаврӑнӑшӗсен пӗлтерӗш уйрӑмлӑхӗсене сӑнанӑ май, *пилӗк кӗнеке* сӑмах майлашӑвӗнчи *кӗнеке* сӑмаха та нумайлӑ хисепре теме лекӗччӗ. Кунпа, паллах, килӗшме юрамасть.

Малалла сӑмах морфонологи пулӑмӗсем ҫинчен пулӗ.

Камӑнлӑх-сӑпат аффиксӗсене йышӑннӑ чух сӑмах тӗпӗпе аффикс ҫӗвӗкӗнче ҫакӑн пек улшӑнусем пулса иртеҫҫӗ:

а) енчен те япала ячӗ <а, е> уҫӑ сасӑсемпе пӗтет пулсан, 2-мӗш тата 3-мӗш сӑпат аффиксӗсем хушӑннӑ чух сӑмах тӗпӗнчи <а, е> сасӑсем тухса ӳкеҫҫӗ:

| | | |
|---|---|---|
| 2 с. лаш-у | ӗн-ӳ, | анчах (1 с. лаша-м, ӗне-м) |
| 3 с. лаш-и | ӗн-и | |

[2] Павлов И. П. Хальхи чӑваш литература чӗлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 77 с.

[3] Ҫавӑнтах. 85 с.

ă) япала ячĕ <ă, ĕ> сасăсемпе пĕтет пулсан, вĕсен умĕнче пĕр хупă сасă çеç пулсан, çав хупă сасă вăрăмланать:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | пуллăм | сĕллĕм |
| 2 с. | пуллу | сĕллÿ |
| 3 с. | пулли | сĕлли |

б) <у, ÿ> сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсенче çав сасăсем <ă, ĕ> сасăсемпе ылмашăнаççĕ те, 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат аффиксĕсем умĕн [в] хушăм сасă (интерфонема) кĕрсе ларать, 3-мĕш сăпат аффиксĕ умĕн [ш] пулать:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | пăру | кĕрÿ |
| | пăрă[в]-ăм | кĕрĕ[в]-ĕм |
| 2 с. | пăрă[в]-у | кĕрĕ[в]-ÿ |
| 3 с. | пăрă[в]-ĕ е пăру[ш]-ĕ | кĕрÿ[ш]-ĕ |

Танл.: *вĕсен тына пăрушĕ (пăрăвĕ);* калаçу чĕлхинче икĕ вариантĕ те тĕл пулать;

в) <и> сасăпа пĕтекен япала ячĕсенче сăмах тĕпĕпе аффикс хушшине [й] интерфонема кĕрсе ларать:

| | | |
|---|---|---|
| 1. с. | савни[й]-ĕм | пăши[й]-ĕм |
| 2 с. | савни[й]-ÿ | пăши[й]-ÿ |
| 3 с. | савни[й]-ĕ | пăши[й]-ĕ |

г) <и> сасăпа пĕтекен сăмахсенче хушăран [й] интерфонема вырăнне 1-мĕш сăпатра [ç] кĕрсе ларать: савни[й]-ĕм, савни[ç]-ĕм; Нарспи[й]-ĕм, Нарспи[ç]-ĕм:

Юлашки кун, *савнийĕм,*
Уйăраççĕ вĕт пире!
Ĕнтĕ санăн *Нарспийÿ*
Текех пулмĕ Силпире (К. Ив.);

д) [ç] интерфонема <а, е> уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен камăнлăх категорийĕн 1-мĕш сăпатĕнче те палăрать (атте[ç]-ĕм, анне[ç]-ĕм):

Эй, *аттеçĕм, аннеçĕм,*
Сетнерпеле пехиллĕр (К. Ив.).

Чăваш чĕлхинче камăнлăх категорийĕн 1-мĕш сăпат аффиксĕн алломорфĕсем юнашар та тăма пултараççĕ *(ача-м-ăм):*

*Ачамăмсем* килте ман çиччĕш
Тытма пĕлеççĕ кашăк çеç (Я. Ухс.);

е) [ç] интерфонема 1-мĕш сăпатăн йĕкĕр аффиксĕ хушшине те кĕрсе ларма пултарать (чун-ăм[ç]-ăм, чĕлхе-м-ĕм[ç]-ĕм):

1. *Çĕршывăмçăм,*
Тăван çĕршывăм,
Эс сыв пулсассăн,
Эп те сывă (Эйзин).
2. Тăван *чĕлхемĕмçĕм,* тăванлă эсĕ
Пуян та çирĕп вырăс чĕлхипе (Я. Ухс.).

Ку таранччен *аннеçĕм, пирĕштиçĕм, чĕремçĕм, ылтăнăмçăм* сăмахсенче *-çă(-çĕ)* ачашлав аффиксĕ пуррине тата çав ачашлав аффиксĕ камăнлăх категорийĕн 1-мĕш сăпат аффиксĕпе кăна çӳренине кăтартнă[4]. Хальхи вăхăтра кун пирки калаçма сăлтав çук, мĕншĕн тесен *аннеçĕ, чĕреçĕ* формăсемпе пуплевре усă курмаççĕ. Уйрăм сăмахсенче ачашлав аффиксĕ хăй пĕлтерĕшне пачах çухатнă. Вăл, М. Р. Федотов профессор ĕнентернĕ тăрăх, хăй вăхăтĕнче *хутаç, чĕкеç* сăмахсенче чĕрĕ аффиксах пулнă[5];

ĕ) <т, ть, дь, д> хупă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă чух <ч> сасăпа ылмашаççĕ:

*турат — турачĕ, тетрадь — тетрачĕ, парад — парачĕ, аппарат — аппарачĕ, съезд — съезчĕ, çунат — çуначĕ, талант — таланчĕ.*

Çав вăхăтрах тĕп чăваш сăмахĕсенче хушăран <т> сасă вăрăмланнине курма пулать:

йывăç турачĕ — йывăç туратти[й]ĕ е йывăç туратти;

арман çуначĕ — арман çунатти[й]ĕ е арман çунатти;

хĕвел пичĕ — хĕвел питтинче, анчах хĕвел питĕнче.

Тăванлăха пĕлтерекен сăмахсем камăнлăх категорийĕн аффиксĕсене хăйне евĕрлĕ йышăнаççĕ:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | атте-м | анне-м | пичче-м | инке-м | мучи[й]-ĕм |
| 2 с. | аçу | анн-ӳ (диал. аму) | пичч-ӳ | инк-ӳ | муч-у |
| 3 с. | ашшĕ | амăшĕ | пиччĕшĕ | инкĕшĕ | мучă[ш]-ĕ |

*Аçу-аннӳ* каланине
пуçна хыв (Эйзин).

Морфологи тишкерĕвĕ тунă чух сăмах тĕпĕ вырăнне, паллах, *атте, анне* сăмахсене илмелле, анчах та 2-мĕшпе 3-мĕш сăпатсенче çав сăмахсен тĕпĕ *аça, ама* пулни сисĕнет. Тăванлăха кăтартакан сăмахсем <и, а, е> сасăсемпе пĕтнĕ чух 3-мĕш сăпатра вĕсем <ă, ĕ> сасăсемпе ылмашаççĕ: *мучи — мучă[ш]ĕ, инке — инкĕ[ш]ĕ, кукка — куккă[ш]ĕ, аппа — аппă[ш]ĕ.* Вĕсенче [ш] сасса интерфонема теме юрать*.

---

[4] Çавăнтах. 79—80 с.

[5] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. 3. С. 16.

* <у> сасăпа пĕтекен пĕртен-пĕр *пăру* сăмах чăваш чĕлхинче, тăванлăха кăтартакан сăмахсем пек, 3-мĕш сăпат аффиксне йышăнать: *пăру — пăру[ш]ĕ:*

Ула ĕне *пăрушĕ*
Ула пулать-и вара? (Чăв. хал. юрри)

Чĕлхе историкĕсем камăнлăх-сăпат аффиксĕсем местоименисенчен пулса кайнă теççĕ. Вĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, *кĕнекем < кĕнеке + ман* тенинчен, *кĕнекӳ* ытти тĕрĕк чĕлхисенче *китобын,* юлашки сăмахри *-ын* аффикс *син* (чăв. *сан*) местоименипе хурăнташлă[6], анчах та Л. С. Левитская пĕрреллĕ хисепри 2-мĕш сăпат аффиксĕ *-у(-ӳ)* формăран пулса кайма пултарнă тесе ĕнентерет[7]. М. Р. Федотов, Н. И. Ашмарин каланине тĕпе хурса, *-у( -ӳ)* аффикс *-ăв(-ĕв)* аффиксран пулнă тесе шутлать, мĕншĕн тесен *-ăв(-ĕв)* азербайджан чĕлхинчи камăнлăх категорийĕн пĕрреллĕ хисепри 2-мĕш сăпатăн аффиксне тӳр килет: азерб. чĕлхин диалектĕнче *ату-в* (чăв. *аçă-в>аçу)*[8]. Ку аффикс авалхи тĕрĕк чĕлхинче те пулнă. *Кĕнеки, кинĕ* сăмахсенчи *-и, -ĕ* 3-мĕш сăпат аффиксĕ маньчжур чĕлхинчи *i* «вăл» местоименипе тӳр килет иккен[9].

Камăнлăх формисем, нумайлă хисеп аффиксĕ пекех, хăшпĕр сăмахсенче лексикализаци лекнĕ. Тĕслĕхрен, *шăллăм, хунчăкам, хуньăм* сăмахсем словарь единицисем шутланаççĕ. Вĕсенче хальхи вăхăтра камăнлăх-сăпат категорийĕн 1-мĕш сăпат аффиксне палăртма май çук пек, мĕншĕн тесен хальхи чĕлхере *шăл (шăллăм* пĕлтерĕшпе), *хунчăка (хунчăкам), хуняка (хунякам)* пĕлтерĕшпе çӳремеççĕ. Вĕсенче хăй вăхăтĕнче 1-мĕш сăпат аффиксĕ пулни ытти тĕрĕк чĕлхисенчи çав пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе танлаштарсан курăнать: *шăллăм,* диал. *шăнкăлăм,* ав. тĕр. чĕлхинче *синил,* каракалпаксен *сингли,* узб. *сингил,* тут. *сенел* (ЭСЧЯ 333)[10].

М. Р. Федотов чăваш чĕлхинчи *-шă, -шĕ, -ш* 3-мĕш сăпат аффиксĕ сăмах тăвакан аффикс функцине пурнăçланине асăрхать. Кун пек чух, автор каланă тăрăх, юлашкинчи *-ĕ* тухса ӳкет: *пысăк-ăш(ĕ), тарăнăш(ĕ), хулăнăш(ĕ), урлăш(ĕ)*[11].

Халĕ ятарласах К. В. Иванов «Нарспи» поэмăра камăнлăх-сăпат категорийĕн формисемпе усă курнин тĕслĕхĕсене пăхса тухар. Пĕтĕмĕшле илсен, поэт 3-мĕш сăпат формине хисеплерех панă. Акă «Нарспи» поэмăри 11-мĕш страницăра[12] 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат аффиксĕсене пачах тĕл пулмастпăр пулсан, 3-мĕш сăпат аффиксĕ вĕçĕмсĕрех тухса пырать: *кайăк юрри, çын сасси, çыннисем, ачи-пăчисем, хĕрĕсем, тен-*

---

[6] Федотов М. Р. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштару грамматики. Шупашкар, 1975. 13 с.

[7] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М.: Наука, 1976. С. 14.

[8] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1983. Ч. 2. С. 46.

[9] Çавăнтах. 49 с.

[10] Егоров В. Г. Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964. С. 333.

[11] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 3. С. 24.

[12] Иванов К. В. Нарспи. Шупашкар, 1976. 11 с. Малаллахи тĕслĕхсене те çак кĕнекерен илнĕ, страницисене скобкăра кăтартнă.

*кисем, Силпи ялӗнче, шывсем ҫинче, ҫӗр ҫинче* (танл.: *шывсен ҫийӗсем, ҫӗр ҫийӗнче. — В. С.), хӑй тӗнчине, каләм эрнинче, нӳхреп ӑшӗнче.*

Поэмӑри сӑпат форми уйрӑмлӑхӗсене кашнине уйрӑмшарӑн пӑхса тухар. Малтанах тӗп падежра тӑракан формӑсене тишкерер:

Пӗртен-пӗрех *пуҫӑм* пур,
Вӗри юнлӑ *чӗрем* пур,
Ватӑ карчӑк *аннем* пур
Урхамах пек *утӑм* пур.
*Чунӑм* савни эсӗ пур...
Икӗ вӑйлӑ *аллӑм* пур...
*Лашам* ҫине лартӑттӑм...

Пӗр страницӑрах 1-мӗш сӑпат формине ҫине-ҫинех калани стиль тӗлӗшӗнчен килӗшӳллӗ, вулакана та, итлекене те йӑлӑхтармасть. Ку чӗререн каланине ҫирӗплетмелли мел.

Камӑнлӑх-сӑпат категорийӗн 1-мӗш сӑпат аффиксӗ хыҫҫӑн тӗрлӗрен падеж аффиксӗсем тӑма пултараҫҫӗ:

а) сайра-хутра камӑнлӑх падеж:

Пушмак ҫук-и *хӗрӗмӗн?* (18 с.);

ӑ) пару падеж:

Акнӑ *тыррӑма* ӑнтар (13 с.).
Ӗҫӗм пултӑр *хӗрӗме* (27 с.);

б) вырӑн падеж:

Кӗмӗл тенкӗ, тӗртнӗ пир
Сахал-ши мӗн *ҫӳпҫемре?* (18 с.);

в) пӗрлелӗх падеж:

Анчах ҫапах ҫак куна
Ҫамрӑк *пуҫӑмпа* куртӑм (25 с.);

г) пирке падеж:

*Хӗрӗмшӗнех* тӑрӑшса
Куҫӑмсене хупмарӑм (102 с.).

Поэмӑра кӳртсе лартнӑ [ҫ] сасӑпа кӑткӑсланнӑ вариантсем те час-часах тӗл пулаҫҫӗ:

1. Ҫаплах вара, *Нарспиҫӗм,*
   Ҫук-ши манӑн ӑраскалӑм? (24 с.).
2. Эй, *кӗрӳҫӗм* Тӑхтаман (68 с.).
3. Ан хуйхӑрсам, *инкеҫӗм* (73 с.).
4. Эй, *аннеҫӗм, аннеҫӗм* (52 с.).
5. Эй, *аттеҫӗм, аннеҫӗм* (56 с.).
6. Ырӑ Нарспи *аппаҫӑм* (38 с.).

Ку тӗслӗхсенче автор тавталогирен, пӗр ӑнлава палӑртакан грамматика формисене икӗ хут калассинчен, хӑтӑлнӑ темелле, *инкеҫӗм, аттеҫӗм* формӑсем *инкемҫӗм, аттемҫӗм, аннемҫӗм* тенисенчен кӗскелсе пулнӑ.

Пĕр сăмахрах 1-мĕш сăпат аффиксĕпе икĕ хут усă курнин тĕслĕхĕсем сахал:

1. Эй, *каччăмçăм* Тăхтаман,
   Манпа ырă курас çук (57 с.).
2. Эй, *чунăмçăм,* çамрăк пуç (112 с.).

Çавăн пекех, автор 1-мĕш сăпат аффиксĕ хыççăн нумайлă хисеп формипе те сахал усă курать:

*Тантăшăмсем* пухăнсан,
Кĕçĕр туйне лартмалла (27 с.).

Поэма авторĕ 1-мĕш сăпат аффиксне япала ячĕсем çумне кăна мар, *мĕн* ыйту местоимени çумне те хушать:

Михетерĕн мĕн çитмен?
*Мĕнĕм* çук-ши çуртăмра?

Паллах, *мĕнĕм (мĕн+-ĕм)* тени чĕлхере анлă сарăлман, ку местоимение К. В. Иванов сăмах майлашăвĕ вырăнне (*мĕн япала* кăна çук-ши) е икĕ хут каланă *мĕн-мĕн* сăмах вырăнне усă курать.

Тĕлĕнмелле пулин те, автор 1-мĕш сăпатăн япала ячĕ те, сăпат аффиксĕ те нумайлă хисепре тăракан сăмахсене поэмăна пачах та кĕртмен. Ку силлабика виçине тытса пырассипе çыхăнма пултарнă. Сайра-хутра япали нумайлă хисепре, сăпат аффиксĕ пĕрреллĕ хисепри япала ячĕсем тупăнкалаççĕ:

Хĕрĕмшĕнех тăрăшса
*Куçăмсене* хупмарăм (102 с.).

Камăнлăх-сăпат категорийĕн 2-мĕш сăпат аффиксне йышăннă сăмахсем тĕрлĕ падежра тăраççĕ:

а) тĕп падежра:

Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăратăн?
*Каччу* ытла ватă-им?
*Парнӳ* ытла сахал-им? (26 с.).

Эсĕ юта кайсассăн,
Мĕн тăвĕ-ши *Сетнерӳ*
Ырă Нарспи аппаçăм,
Ăçта санăн *телейӳ?* (38 с.);

ă) камăнлăх падежĕнче:

Пĕр Сетнершĕн тăктартăн
*Аçу-аннӳн* шур çӳçне (103 с.);

б) пару падежĕнче:

1. Ака пуçне тӳрлетсе,
   *Урапуна* тирпейлес (13 с.).
2. Нарспи, хĕрĕм, пил сана!
   *Упăшкуна* ан пăрах (31 с.).
3. Шеллеместĕн *аннӳне*
   Ах, çĕр çăтманă пуçна! (102 с.);

в) пĕрлелĕх падежĕнче:

1. *Тутăрупа* шăл куçна (73 с.).
2. Пуян хĕрĕ *пуçупа* (100 с.).

К. В. Иванов чылай чухне *-у(-ÿ)* аффиксăн авалхи *-ă(-ĕ)* варианчĕпе усă курать:

1. Тăшман, выртăн хускалмăн
Нарспи пулмĕ *çуртăнта* (91 с.).

Асăрхăр: *çуртăнта* вырăнне *çуртунта* теме майĕ пулнă. Тепĕр тĕслĕхрех <у> сасă <ă> сасăпа ылмашман:

Пуян хĕрĕ *пуçупа (пуçăпа* мар. — *В. С.).*
Мĕншĕн çапла хăтлантăн? (100 с.).

Час-часах автор *-у(-ÿ)* аффикса ырăянравлăхшăн сиктерсе хăварать:

1. Çук, кин, санăн *ывăлна,*
Турă çырни çаплалла (44 с.).
2. Ăçта тартăн, усал хĕр?
*Пуçна* çийĕп тупăнсан (51 с.).
3. Тарнă-мĕн-ха вăрмана
*Туйна* тунă çĕртенех (74 с.).

Япала ячĕ пĕрреллĕ хисепре, сăпат аффиксĕ нумайлă хисепре чухнехи тĕслĕхсем те çителĕклех:

1. Ĕнтĕ, ÿсĕр чăвашсем,
*Урăр* çине тăрăр-ха (13 с.).
2. Пĕртен-пĕрех *хĕрĕре*
Тата пĕр çул усрăр-ха (28 с.).
3. Анчах *хĕрĕр, мĕскĕнĕр,*
Асап курса пурăнать (78 с.).
4. Анчах эсир, тăлăхсем,
Курассăр çук *хуçăра* (84 с.).

Пĕрремĕш сăпатри пекех, 2-мĕш сăпатăн япала ячĕ те, сăпат аффиксĕ те нумайлă хисепре тăракан сăмахсене поэмăна кĕртмен.

Мăшăр сăмахсенче 2-мĕш сăпат аффиксне икĕ компоненчĕ те йышăннине асăрхама пулать:

Ах, телейĕм çук-тăр çав,
*Аçу-аннÿ* пит пуян! (24 с.).

Кунта, паллах, *атте-аннÿ* тени килĕшÿсĕр.

Каларăмăр ĕнтĕ, камăнлăх-сăпат категорийĕн 3-мĕш сăпат аффикслĕ сăмахсем поэмăра 1-мĕш, 2-мĕш сăпат аффикслисенчен 3—4 хут ытларах. 3-мĕш сăпат аффиксĕ хыççăн пур падеж аффиксĕ те тăнин тĕслĕхĕсем пур:

а) тĕп падеж:

1. Шăпăр *сасси* илтĕнмест,
*Шăпăрçи* те курăнмасть (49 с.).
2. *Уйранĕ* те пулмасан (12 с.);

32776 гув

2. 856.

ă) камăнлăх падежĕ:

Каччи пуян тенипе
*Хĕрин* чунне пĕлмерĕ (28 с.);

б) пару падежĕ:

Сарă каччă калаçса
Хăй *лашине* шăварать (23 с.);

в) камăнлăх + вырăн падежĕ:

Пуш уйăхĕн *вĕçĕнче*
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш *ялĕнче*
Юр ирĕлчĕ васкаса (3 с.);

г) камăнлăх + туху падежĕ:

Сарă хĕрĕн *куçĕнчен*
Анать куççулĕ юхса (48 с.);

д) пĕрлелĕх падежĕ:

*Стариккипе* карчăкки
Хура пӳртре вăрçаççĕ (49 с.);

е) пирке падежĕ:

Килне çитрĕ, йĕрсе ячĕ
*Сетнерĕшĕн* хурланса (26 с.).

К. В. Иванов хушăран 3-мĕш сăпатăн *-ĕ* аффиксĕ вырăнне *-и* вариантне кĕртсе ярать:

1. Савăннипе *Сетнерин*
Чĕри кăлт-кăлт сикет-çке (21 с.).
2. Каччи пуян тенипе
*Хĕрин* чунне пĕлмерĕ (23 с.).
3. *Хĕрин туйин* савнăçĕ
Çĕклет иккен ват пуçа(37 с.).
4. *Хĕрин* туйне ăсатма
Ашшĕ-амăш пыраççĕ (58 с.).
5. Силпи *ялĕн* çыннисем
Кайрĕç тутлă ыйăха (109 с.).

Поэмăра 3-мĕш сăпат аффиксĕн икĕ вариантне те пĕр харăсах усă курни час-часах тĕл пулать:

1. Шăпăр сасси чарăнсан,
Туй *юррийĕ* пуçланать (36 с.).
2. Çӳллĕ сăран *кӳмийĕ*
Тантăш патне çӳретет.
Хĕр-çуммисен *юррийĕ*
Таçта çитиех илтĕнет (39 с.).

Халĕ *атте, анне* сăмахсемпе автор 3-мĕш сăпатра мĕнле усă курнине сăнăпăр:

*Атте-анне* пит пуян,
Хăйсен пуянлăхĕпе
Пăрăнаççĕ çук çынран.

Кунта *атте-анне* сăмах сăпат аффиксĕсене йышăнман.

*Амăшĕ* сăмах тулли формăра та, кĕске формăра та тĕл пулать:

1. *Амăшĕ* те çавăнтах
   Тăрать йĕрсе, хурланса (52 с.).
2. Ватă карчăк *амăш* пур (20 с.).

Иккĕмĕш тĕслĕхри пек формăсенче калаçу чĕлхинче <ă> сасă <ĕ> сасса куçать: *амăш,* юлашки сасси çемçен илтĕнет. Кун пек çемçелĕхе автор уйрăм илнĕ *амăш* сăмахра та, *ашшĕ-амăш* мăшăр сăмахра та палăртмасть:

1. Курка тулли сăрипе
   *Ашшĕ-амăш* пехиллет,
   *Ашшĕ-амăш* умĕнче
   Хĕрĕ хурланса йĕрет (31 с.).
2. Хĕрин туйне ăсатма
   *Ашшĕ-амăш* пыраççĕ (58 с.).

Поэмăра падеж аффиксĕсем *амăшĕ* сăмахăн тулли форми çумне те, кĕске форми çумне те çыпăçаççĕ:

1. *Амăшĕпе* çак пӳртре
   Сетнер ача пурăнать (20 с.).
2. Чирлĕ Сетнер çавăнтах
   Тăрать хăйĕн *амăшпе* (59 с.).

Хушăран автор *ашшĕ-амăш* тата *атте-анне* вариантсене пĕр пĕлтерĕшпех усă курать:

Çапла иртрĕ пурăнăç,
Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах,
*Ашшĕ-амăш* ухмахран
Пĕтрĕ хуйхă-суйхăпах.
Курчĕ çутă тĕнчене
Пӳлĕх турă пӳрнипе,
Ӳсрĕ, пулчĕ сарă хĕр
*Атте-анне* пăхнипе.

Тĕрĕссипе, юлашки йĕркери *атте-анне* мăшăр сăмаха *ашшĕ-амăш* темелле пулнă.

Çавнах эпир ун хыççăн пыракан куплетра та куратпăр:

Пӳлĕх туррăн кăмăлĕ
Аслă турĕ хăй хĕрне.
*Атте-анне* ирĕкĕ (*ашшĕ-амăш* ирĕкĕ. — *В. С.*)
Çирĕ сарă хĕр пуçне (114 с.).

Чăваш чĕлхинче *атте, анне* сăмахсем сăпат аффиксĕсене йышăнман чух 1-мĕш сăпат пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа çӳлерехри йĕркере

*Атте-анне* ирĕкĕ

тени йăнăш пулса тухать. Тÿрременех ăнлансан, К. В. Ивановпа Нарспин пĕр *ашшĕ-амăш* пулнă пек курăнать. Пурнăç чăнлăхĕ пире апла шухăшлама ирĕк памасть. Çавăнпа та илсе кăтартнă йĕркере

*Ашшĕ-амăш* ирĕкĕ

сăмахсем вырăнларах.

## 4 §. ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ПАДЕЖ КАТЕГОРИЙĔ

### Чăваш чĕлхинчи вĕçлев, вĕçленÿ тата вĕçлевлĕх

Чĕлхемĕре хисеплеменнипе-и е чĕлхеçĕсен тирпейсĕрлĕхне пула (калама йывăр!), паян кун та чăваш чĕлхин грамматикинче *падеж* термин хуçаланать. Ку терминпа пĕрле учебниксенче *вĕçле, вĕçленет, вĕçлемелле, вĕçленÿ* сăмахсем те тĕл пулаççĕ. Хирĕçÿлĕхе пĕтерес тесен, Тимухха Хĕветĕрĕн сĕнĕвĕпе килĕшмелле те *падеж* тенине *вĕçлевлĕх* сăмахпа улăштармалла. *Вĕçлев* е *вĕçленÿ* тенисем вырăс чĕлхинчи «склонение» сăмаха тÿр килеççĕ.

Хальхи чăваш чĕлхинче çакăн пек вĕçлевлĕхсем (падежсем) пуррине палăртаççĕ:

| Вĕçлевлĕхсем (падежсем) | Ыйтăвĕсем | Аффиксĕсем |
|---|---|---|
| Тĕп | кам? мĕн? | — — |
| Камăнлăх | камăн? мĕнĕн? | -ăн, -ĕн, -н |
| Пару | кама? мĕне? | -а, -е |
| Вырăн | камра? мĕнре? ăçта? | -та, -те, -ра, -ре, -че |
| Туху | камран? мĕнрен? | -тан, -тен, -ран, -рен,-чен |
| Пĕрлелĕх | кампа? мĕнпе? | -па, -пе, -пала(н), -пеле(н) |
| Çуклăх | камсăр? мĕнсĕр? | -сăр, -сĕр |
| Пирке | камшăн? мĕншĕн? | -шăн, -шĕн |

Чăваш чĕлхи наукин историне илсен, падеж ыйтăвĕ яланах тавлашуллисен шутĕнче тăнă.

Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхинче 6 падеж пуррине палăртнă: ят, камăнлăх, пару-тăву, пĕрлелĕх, вырăн тата туху[13].

Тимухха Хĕветĕрĕн ĕçĕнче çакăн пек вĕçлевлĕхсем пур: ят, харкам (хальхи: камăнлăх), пару, айăплав, вырăн, туху, пирке, ен, тухупа пĕрпулу[14].

---

[13] Ашмарин Н. И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 122.

[14] Тимухха Хĕветĕрĕ. Чăваш чĕлхийĕн крамматикĕ. Шупашкар, 1924. 94 с.

Вырăсла «винительный» тенине автор *айăплав* тесе куçарнă, хальхи пĕрлелĕх вĕçлевлĕхне *пĕрпулу* тенĕ, ен вĕçлевлĕхĕ *-лла (-лле)* сыпăкпа пулнине палăртнă та çакăн пек тĕслĕхсем илсе панă: *хуланалла, килелле, вăрманалла, унталла, çавăнталла.*

*Кĕртенпе, çавăнтанпа, пулнăранпа, кайнăранпа* йышши тĕслĕхсене тухупа пĕрпулу вĕçлевлĕхĕнче пулаççĕ тесе палăртнă.

Çав хушăрах автор йĕкĕр вĕçлевлĕхри сăмахсене те кăтартать: *вĕçнерехре — вĕçнерехрен, вĕçĕнчерехре — вĕçĕнчерехрен, варринчерехре — варринчерехрен.* Анчах та кунта ăнлантарусем çук. *Вĕçнерехре — вĕçнерехрен* тенĕ чух йĕкĕр вĕçлевлĕх курăнать пулсан, *варринчерехрен* сăмахсенче йĕкĕр вĕçлевлĕх мар, виçĕ вĕçлевлĕх пурри куç умĕнчех: *варр-и-н-че-рех-рен;*

*варр(-варă)*—тымар морфема, *-и*—камăнлăх-сăпат категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ, *-н* — камăнлăх вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ, *-че* — вырăн вĕçлевлĕхĕн, *-рех* — танлаштару форми, *-рен* — тухху вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ.

Пирке вĕçлевлĕхĕ пуррине Ф. Т. Тимофеев 1924 çултах палăртнă: «Чăваш чĕлхинче пирке вĕçлевлĕхĕ пур тесе калама пулать — -шăн(-шĕн) сыпăкпа пĕтекен вĕçлевлĕх: *лашашăн, маншăн....* Пирке вĕçлевлĕхĕ çĕнĕ вĕçлевлĕх... Ытти тĕрĕк чĕлхисенче пирке вĕçлевлĕхĕ çук. Унта *-шăн, -шĕн* вырăнне пулакан *ӧчӧн* сăмах ялан çемçе пулать, ăна умĕнчи сăмахпа уйрăм çыраççĕ: вăл «сăмах хыçĕ» (хальхи пек каласан, хыççăмах. — *В. С.).*

Çак ĕçрех автор япала ячĕсем уйрăм тăрсан кăна вĕçленнине, тепĕр япала ятне пăхăнса тăнă чух вĕçленменнине кăтартать (95 с.). Чăнах та, *йывăç çурт, чул кĕпер* йышши сăмах майлашăвĕсенче иккĕмĕш вырăнта тăракан япала ячĕ кăна вĕçленет: *йывăç çуртăн, йывăç çурта, йывăç çуртра, йывăç çуртран* т. ыт. те.

М. Р. Федотов хальхи чăваш чĕлхе вĕрентĕвĕнче падеж ыйтăвне татса паманнине палăртать[15]. Автор чĕлхемĕрте 12 падеж пур тесе çирĕплетет: 1) номинатив (хальхи тĕп падеж); 2) вокатив (чĕнӳ падежĕ); 3) генетив (камăнлăх падежĕ); 4) датив (пару падежĕ); 5) директив (сулăну падежĕ); 6) аккузатив (автор чăваш чĕлхинче тăву падежĕ пару падежĕпе пĕрлешсе кайнине, хăй тĕллĕн ытти тĕрĕк чĕлхисенче çеç тĕл пулнине палăртать); 7) локатив (вырăн падежĕ); 8) партатив (пай падежĕ) — ку падеж аффиксĕ тухху падеж аффиксĕпе пĕр килнине пула ăна халĕ тухху падежĕ теççĕ; 9) аблатив (тухху падежĕ); 10) комитатив (пĕрлелĕх падежĕ);

---

[15] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1983. Ч. 2. С. 26—42.

11) абесив (çуклăх падежĕ); 12) каузалис (пирке падежĕ). Çавăнпа пĕрлех, автор шухăшĕпе, чăваш чĕлхин грамматикинче пурлăх падежĕ те (пушкăртла: *барлык килеш*) пулмалла, ахаллĕн çуклăх падежĕ хăйĕн мăшăрĕсĕр юлать, çавна май системăлăх пĕтет.

М. Р. Федотов сĕнекен вĕçлевлĕхсем пурте хальхи чăваш чĕлхинче пур тесе çирĕплетме май çук, мĕншĕн тесен хăшĕсем пĕтĕмлĕх принципне пăхăнмаççĕ.

1953—1954 çулсенчи дискуссире падеж ыйтăвĕ чи çивĕччисенчен пĕри пулнă, çапах вĕçлевлĕх ыйтăвне тивĕçлĕ татса панă.

Чăнах та, мĕне кура чăваш чĕлхинче 8 вĕçлевлĕх тухса тăрать? Тен, вĕçлевлĕхсен хисепне пĕлтерĕш тăрăх палăртмалла?

Пĕлтерĕше кăна тĕпе хурсан, хальхи пару вĕçлевлĕхне татах та 3 вĕçлевлĕхе пайламалла пулĕччĕ: 1) *командира пĕлтернĕ* — пару вĕçлевлĕхĕ; 2) *армана кайнă, вăрмана кайнă* — сулăну; 3) *çырлана кайнă* — тĕллев.

Çавăн пекех, пĕрлелĕх вĕçлевлĕхне те ваклама пулĕччĕ: 1) *Мирунпа Хаврунь пыраççĕ* тенĕ чух — çывăхлăх вĕçлевлĕхĕ; 2) *çĕре плугпа сухалаççĕ* — кăрал; 3) *вăрманпа пыраççĕ* — вырăн.

Асăрхарăр пулĕ, пĕлтерĕшне кăна шута хунипе пирĕн пĕр формăллă темиçе вĕçлевлĕх пулса каять. Вара вăл е ку сăмах хăш вĕçлевлĕхрине кăтартма йывăрланĕччĕ. Тĕслĕхрен, *Çак шухăшпа вăл правление пырса кĕчĕ* предложенири *шухăшпа* сăмаха абстрактлă пĕлтерĕшлĕ вĕçлевлĕхре теме лекĕччĕ.

Сăмахсен синтаксисри пĕлтерĕшĕпе членлăхне шута хурсан, пирĕн чĕлхере çакăн пек вĕçлевлĕхсем пулмалла: подлежащи, определени, дополнени, обстоятельство, сказуемăй вĕçлевлĕхĕсем.

Вĕçлевлĕхсене ку йĕркепе те палăртса тухма май çукки куç умĕнчех.

Вĕçлевлĕхсене пĕр-пĕринчен уйăрнă чухне чылай чухне сăмахăн формине (морфологи паллине кăна) шута илеççĕ.

Тĕпчевçĕсем сĕннĕ тăрăх, вĕçлевлĕхсене палăртнă чухне пĕр харăсах грамматика формине те, çав формăн грамматика пĕлтерĕшне те, сăмахăн лексика пĕлтерĕшне те шута илмелле. Хальхи чĕлхере 8 вĕçлевлĕх пуррине харăс темиçе критери тăрăх палăртаççĕ.

Асăннă 8 вĕçлевлĕхĕн кашнийĕнех хăйĕн форми пур. Формине кура тата контекстри çыхăнăвне шута илсе, эпир вĕсен пĕлтерĕшне уçăмлах палăртма пултаратпăр. Нихăш вĕçлевлĕхĕн те форми теприн формипе пĕр килсе тухмасть. Çавна май эпир сăмах хăш вĕçлевлĕхрине тӳрех калама пултаратпăр. Формине кура вĕсен хăйсене тивĕçлĕ тĕп ыйтăвĕсем пур: вĕсем кашни вĕçлевлĕхĕнех иккĕ: *кам, мĕн? кама, мĕне? кам-*

*па, мӗнпе?..* Ку ыйтусем кашни вӗҫленекен сӑмахах пырса тивеҫҫӗ пулин те, хӑшпӗрисем уйрӑм япала ячӗсемпе кӑна ҫыхӑннӑ. Сӑнӑр (тӗслӗхсене А. И. Иванов ӗҫӗнчен илнӗ):

| Тӗп в. | Пӗлтерӗшӗ | Тӗслӗхсем | Ыйтӑвӗсем | Пред. членӗ |
|---|---|---|---|---|
| афф. ҫук | субъект | *Студент вулать* | *кам?* | подл. |
| | объект | *Эпӗ кӗнеке вулатӑп* | *мӗн?* | доп. |
| | ҫыхӑну | *Парти членӗ* | *мӗнле?* | определ. |
| | вырӑн | *Кавказ тӑвӗсем* | *мӗнле?* | определ. |
| | вӑхӑт | *Эпир вырсарникун вӗренетпӗр* | *хӑҫан?* | обст. |
| | | *Унтанпа уйӑх иртрӗ ӗнтӗ* | *мӗн чухлӗ?* | обст. |
| | виҫе | *Эсӗ километр чупрӑн* | *мӗн чухлӗ?* | обст. |
| | тӗллев | *Ӗне вити* | *мӗн?* | определ. |
| Кам. в. *-ӑн(-ӗн)* | камӑнлӑх | *Университетӑн корпусӗ* | *мӗнӗн?* | определ. |
| | объект | *Учителӗн нумай пӗлмелле* | *камӑн?* | доп. |
| | | *Колхозӑн ҫӗр нумай* | *камӑн? мӗнӗн?* | доп. |
| | май, мел (способ) | *Укҫан тӳленӗ* | *мӗнле?* | обст. |
| | евӗрлӗх | *Вӑрманӑн курӑнать* | *мӗнле?* | обст. |
| | вӑхӑт | *Кунӑн тӳлеҫҫӗ* | *мӗнле?* | обст. |
| | виҫе | *Пӑтӑн сутаҫҫӗ* | *мӗнле?* | обст. |
| Пару в. *-а(-е)* | тӳрӗ объект | *Агронома куртӑм* | *кама?* | доп. |
| | | *Ӗнене апат патӑм* | *мӗне?* | доп. |
| | тӳрӗ мар объект | *Студента каланӑ* | *кама?* | доп. |
| | вырӑн | *Вӑрмана кайнӑччӗ* | *ӑҫта?* | обст. |
| | вӑхӑт | *Каҫа юлтӑм* | *хӑҫана?* | обст. |
| | тӗллев | *Ҫырлана, кӑмпана кай* | *ӑҫта?* | обст. |
| | евӗрлӗх | *Ашшӗне хывнӑ* | *кама?* | доп. |
| Вырӑн в. *-ра(-ре)* | хуҫа пулни | *Петровра икӗ кӗнеке* | *камра?* | доп. |
| | вӑхӑт | *Уйӑхра вӑтӑр кун* | *мӗнре?* | доп. |
| *-та(-те)-че* | шут | *Теҫеткере икӗ пиллӗк* | *мӗнре?* | доп. |
| | вырӑн | *Хирте ӗҫлет* | *ӑҫта?* | обст. |
| Туху в. *-ран(-рен)* | уйрӑлу | *Студентран ыйтрӑм* | *камран?* | обст. |
| | танлаштару | *Йытӑран пысӑк* | *мӗнрен?* | обст. |
| | | *Тимӗртен ҫирӗп* | *мӗнрен?* | обст. |
| *-тан(-тен) -чен* | материал | *Тимӗртен тунӑ* | *мӗнрен?* | доп. |
| | вырӑн | *Ялтан тухнӑ* | *ӑҫтан?* | обст. |
| | вӑхӑт | *Эрнерен килет* | *хӑҫан?* | обст. |
| | хисеп, шут, виҫе | *Ӑсран тухнӑ* | *мӗнрен?* | обст. |
| | мӗнлелӗх | *Йӗркерен ларса тухнӑ* | *мӗнле?* | обст. |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Пĕрлелĕх в. | пĕрлелĕх | *Ашшĕпе ачи* | *кампа?* | доп. |
| *-па(-пе)* | ĕç хатĕрĕ | *Çĕçĕпе кас* | *мĕнпе?* | доп. |
| *-пала(-пеле)* | вырăн | *Уйпа пырать* | *ăçта?* | обст. |
| *-палан(-пелен)* | вăхăт | *Ирпе килтĕмĕр* | *хăçан?* | обст. |
| | ушкăнлăх | *Ялĕпех тухнă* | *мĕнле?* | обст. |
| | сăлтав | *Ăшăпа сарăлнă* | *мĕн пирки?* | доп. |
| | тĕллев | *Сивĕпе ĕнтĕркенĕ* | *мĕн пирки?* | доп. |
| Пирке в. | | *Миршĕн кĕреш* | *мĕншĕн?* | доп. |
| *-шăн(-шĕн)* | | *Укçашăн ĕçлет* | *мĕншĕн?* | доп. |
| | сăлтав | *Ĕçри çитĕнӳсемшĕн преми панă* | *мĕншĕн?* | доп. |
| Çуклăх в. | май, мел | *Лашасăр сухалаймăн* | *мĕнсĕр?* | доп. |
| *-сăр(-сĕр)* | хатĕр | *Çĕçĕсĕр касаймăн* | *мĕнсĕр?* | доп. |
| | услови | *Кĕнекесĕр вĕренмелле* | *мĕнсĕр?* | доп. |
| | вăхăт | *Эрнесĕр килес çук* | *хăçан?* | обст. |
| | пирке | *Ыйхăсăр аптранă* | *мĕнсĕр?* | доп. |

Схема акă мĕн кăтартать: вĕçлевлĕхĕн ыйтăвĕсем *кам? мĕн? камăн? мĕнĕн?...* кăна мар, сăмахăн формипе пĕлтерĕшне кура тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Пĕлтерĕшĕсене те эпир кунта палăртса çитертĕмĕр теме çук.

Пулса кайни енчен пăхсан, чăваш чĕлхинчи вĕçлевлĕхсене икĕ ушкăна уйăрма пулать: 1) авалах пулса кайнисем; 2) хальтерех пулса кайнисем.

Авалах пулса кайнисем ытти тĕрĕк чĕлхисенче те пур: *тĕп, камăнлăх, пару-тăву, вырăн, туху*. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *пару* тата *тăву* вĕçлевлĕхĕсем уйрăммăн çӳреççĕ (мĕншĕн тесен формипе те, пĕлтерĕшĕсемпе те пĕр-пĕринчен уйăрălса тăраççĕ). Чăваш чĕлхинче вĕсем, иккĕшĕ пĕрлешсе, пĕр вĕçлевлĕх пулса тăнă.

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче çуккисем хальтерех пулса кайнисем шутне кĕреççĕ: çуклăх, пирке, пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕсем. В. Г. Егоров чăваш чĕлхинче çуклăх падежĕ пуррине 1953—54 çулсенчи чĕлхе ыйтăвĕсемпе пулса иртнĕ тавлашусемччен палăртнă[16].

Çапла вара, дискусси вăхăтĕнче А. И. Иванов сĕннĕ вĕçлевлĕхсен системи автор пĕччен шухăшласа кăларнă çĕнĕлĕх пулман. Ку ĕçе тума ăна тĕпчевçĕсем халиччен мĕн каланине тĕплĕ тишкерни пулăшнă. А. И. Иванов сĕннĕ тăрăх, вĕçлевлĕхе лекекен сăмахсен 1) *кам? мĕн?* местоименисемпе çыхăннă хăйне калăплă ыйтăвĕ пулмалла: *камăн? мĕнĕн? кама? мĕне?* т. ыт. те; 2) вĕçлевлĕх аффиксĕ шутланакан форма

[16] Егоров В. Г. Современный чувашский язык в сравнительно-историческом освещении. Чебоксары, 1954. 202 с.

пур япала ячĕпе те çӳремелле; з) аффикссем сингармонизм саккунне пăхăнмалла[17].

Пурлăх вĕçлевлĕхне йышăнас пулсан, çакна асра тытмалла: *-лă(-лĕ), ллă(-ллĕ)* аффикс пайăр ятсемпе çӳреймест. Çавна май унăн ыйтăвĕ те хăрах: *мĕнле?* Ытти енпе вăл вĕçлевлĕхсен шутне кĕме тивĕçлĕ. Ку аффикспа паллă ячĕсем те пулаççĕ (аффиксăн икĕ функцилĕхĕ палăрать), анчах та ку формăсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме шанчăклă виçе (критери) пур: *-лă(-лĕ)* аффикслă паллă ячĕсем танлаштару категорийĕн *-рах(-рех)* аффиксне йышăнаççĕ — пурлăх тата çуклăх вĕçлевлĕхĕнчисем йышăнмаççĕ. Танлаштарăр:

*илемлĕ ял — илемлĕрех ял (илемлĕ* — паллă ячĕ);
*илемсĕр ял — илемсĕртерех ял (илемсĕр* — паллă ячĕ);

танл.: *магазинлă ял — ? (магазинлă* — пурлăх вĕçлевлĕхĕнчи япала ячĕ);
*магазинсăр ял — ? (магазинсăр* — çуклăх вĕçлевлĕхĕнчи япала ячĕ).

Халлĕхе ку ыйтăва эпир сĕнӳ вырăнĕнче хăваратпăр. Тен, тĕпчевçĕсем, тарăнрах шухăшасан, эпир сĕннĕ падежа чăваш чĕлхине кĕртес тейĕç.

Халĕ чăваш чĕлхинче çирĕпленнĕ вĕçлевлĕхсене кашнине уйăммăн пăхса тухар.

## 5 §. ТĔП ВĔÇЛЕВЛĔХ (ПАДЕЖ) ПИРКИ

Тĕп падеж тени чăваш чĕлхинче çĕнĕ падеж шутланмасть. Дискуссиччен (дискусси хыççăн та) шкул учебникĕсенче ăна *ят падежĕ* тенĕ. Унăн, ытти вĕçлевлĕхсемпе танлаштарсан, аффиксĕ çук. Аффикссăрскер, вăл ытти тĕп мар падежсене хирĕçлет, мĕншĕн тесен ыттисен пурин те хăйсене тивĕç аффиксĕсем пур. Ку таранччченхи чăваш грамматикисенче нихăшĕнче те тĕп падеж çукки çинчен калани пулман, анчах та юлашки вăхăра тюркологире аффиксĕ çуккине кура ăна вĕçлев категорийĕнче тăма тивĕççĕр тесе пăхма пуçларĕç[18].

Тĕп падеж çуккине В. Г. Гузевпа Д. М. Насилов хăйне майлă сăлтавлаççĕ. Тĕрĕк чĕлхисенчи пĕрреллĕ хисепĕн ятарлă аффиксĕ çук. Апла пулсан, пĕрреллĕ хисеп категорийĕ çинчен калаçу та пулма кирлĕ мар. Кăмăнлăх категорийĕн тĕп формине категори форми теме май çук. Тĕрĕссипе, ăна никам та ку таранччен камăнлăх категорине кĕртмен. Апла пулсан,

---

[17] Иванов А. И. К вопросу о падежах в чувашском языке в связи с изучением специфики его // Зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1953. Вып. 8. С. 175.

[18] Гузев В. Г., Насилов Д. М. Словоизменительные категории в тюркских языках и понятие «грамматическая категория» // Сов. тюркология. 1981. № 3. С. 26—29.

∅ (нуль) аффикслӑ тӗп вӗҫлевлӗх те вӗҫлев системинче тӑмалла мар.

Кун пек шухӑш халӗ ҫеҫ ҫуралнӑ темелле мар. Тӗслӗхрен, пирӗн ӗмӗр пуҫламӑшӗнчех Гуго Шухард ят (тӗп) падеж ҫукки ҫинчен ҫырнӑ[19].

Ҫамӑнлӑх категорийӗн тӗп форми ҫукки акӑлчан чӗлхеҫине Ч. Е. Базелла (Бейзелла) агглютинациллӗ чӗлхесенче хисеп категорийӗпе падеж (вӗҫлев) категорийӗсене урӑхларах ӑнлантармалла текен шухӑш патне илсе ҫитернӗ. Вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Отсюда возникает вопрос, не указывает ли так называемый нулевой суффикс именительного падежа просто на отсутствие падежа, а так называемый нулевой суффикс единственного числа — просто на отсутствие числа»[20].

Ҫӳлерех каланисене шута илсе, ҫакӑн пек ыйту лартма пулать: тӗп падежа вӗҫлев категорийӗнчен кӑларни чӗлхе наукине мӗнле ҫӑмӑллӑхсем парать?

Тӗпчевҫӗсем шутланӑ тӑрӑх, чӗлхесен историйӗнче вӗҫлевлӗхсем пулман вӑхӑт та пулнӑ. Сӑмахсем хушшинчи ҫыхӑнӑва вӗҫлевлӗх аффиксӗсемпе мар, сӑмахсен йӗркипе палӑртнӑ. Сӑмах йӗрки ҫыхӑну мелӗ пулнине хальхи чӑваш чӗлхинчи фактсемпе ӗнентерме пулать: *Пӳрт ларать. Петӗр пӳрт лартать. Петӗр йывӑҫ пӳрт лартать. Пӳрт лартма Петӗр ӗнер икӗ машина йывӑҫ тиесе килчӗ.* Ку предложенисенчи *пӳрт* тата *йывӑҫ* сӑмахсем, тӗп вӗҫлевлӗхре тӑрса, тӗрлӗрен предложени членӗ пулаҫҫӗ.

А. И. Иванов ҫирӗплетнӗ тӑрӑх, тӗп падеж кӳлепи аффикссем тухса ӳкнипе пулса юлнӑ пулӑм мар. Вӑл вӗҫлевлӗхсем пулманхи тапхӑртан сыхланса юлнӑ[21]. Падежсем тӗрлӗ вӑхӑтра йӗркеленсе пынӑ.

В. А. Андреев хӑйӗн кандидат диссертацийӗнче падеж ыйтӑвӗсене пур енлӗн тӗпчет, тӗп падеж пур тесе ӗнентерет[22].

## 6 §. ҪАМӐНЛӐХ ВӖҪЛЕВЛӖХӖ (падежӗ)

Ҫамӑнлӑх падежӗ авалхисенчен пӗри. Унӑн аффиксӗсем— *-ӑн(-ӗн), -н,* ытти тӗрӗк чӗлхисенче *-ын(-ин), -ун(-ӳн), -нын (-нин), -дын(-дин), -тун(-тӳн)* т. ыт. те. Чӑваш чӗлхин диалекчӗсенче *ачанӑн, анненӗн, лашанӑн* тени сыхланса юлнӑ,

[19] Кун пирки О. П. Суникӑн «Существительное в тунгусо-маньчжурских языках» (Л., 1982) кӗнекине (163 с.) вуласа пӗлме пулать.

[20] Базелл Ч. Е. Лингвистическая типология // Принципы типологического анализа языков различного строя. М.: Наука, 1972. С. 23.

[21] Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1967. Вып. 34. С. 76.

[22] Андреев В. А. Категория склонения в чувашском языке: Автореф. дис. ...канд. филол. наук. М., 1987. С. 8—9. Вӑлах: Основной падеж в системе категории склонения в чувашском языке // Совершенствование преподавания общетюркологических дисциплин в вузе: Материалы конференции. Чебоксары, 1986. С. 97—103.

анчах та ку форма халӗ литература норми шутланмасть. Ытти тӗрӗк чӗлхисенче чылайӑшӗнче камӑнлӑх вӗҫлевлӗхӗн *-н* варианчӗ палӑрман пирки тӗпчевҫӗсем ӑна кайрантарахри пулӑм тесе пӑхаҫҫӗ. Г. И. Рамстедт вара камӑнлӑх падежӗн малтанхи аффиксӗ *-н* пулнине ӗнентерет, чӑваш чӗлхинче вӑл хӑйӗн авалхи формине сыхласа хӑварнине ҫирӗплетет. Ку аффикс, ун шухӑшӗпе, монгол, тунгус тата корей чӗлхисенче ҫав халлӗнех ҫӳрет, уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен сӑмахсенче *-н* аффикс умне ҫыхӑнтаракан уҫӑ сасӑ кӗрсе ларать[23].

Ку ыйтупа тӗпчевҫӗсем халлӗхе пӗр шухӑш патне пырса тухман-ха[24]. Г. И. Рамстедт каланине тӗрӗс тесе шутласан, чӑваш чӗлхинчи *лаша-н, ӗне-н, ача-н, качака-н, ӳпле-н* йышши формӑсем чи малтанхи формӑсем пулма тивӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем ҫумне *-ӑн(-ӗн)* аффикссем хушӑнса пынӑ пулать: *пӳрт-ӗн, ҫурт-ӑн, вӑрман-ӑн, йывӑҫ-ӑн, хир-ӗн.* Тулли вариант тесе пӑхакан *-нӑн(-нӗн)* аффикс *-н* кӗске формипе *-ӑн(-ӗн)* ҫурма тулли форми пӗрлешнипе пулнӑ иккен: *-н+-ӑн>-нӑн*; *-н+ӗн>-нӗн: ӗненӗн, лашанӑн, хуланӑн, ачанӑн, урапанӑн.*

Ҫак шухӑша малтан хирӗҫлесе калакансенчен пӗри К. Гренбек шутланать. Вӑл, падеж аффиксӗсем тулли сӑмахсенчен пулса кайма пултарнине шантарса, камӑнлӑх падежӗн *-нӑн(-нӗн)* тулли формине *нӑн* «япала» сӑмахран пулнӑ тесе ҫырать[25].

Ку шухӑша Н. А. Баскаков ырлать, анчах та малтанхи схемӑна вӑл ҫакӑн пек кӑткӑслатать: *-нӑн(-нӗн)<нэнэ<нэмэнэ* «япала»... «кӗлетке»[26].

К. Гренбекпа Н. А. Баскаков каланӑ тӑрӑх, камӑнлӑх падежӗн тулли формин малтанхи, ҫурма тулли тата кӗске варианчӗсем тулли форма вакланнипе пулса кайнӑ: *качаканӑн> качакан, ӗненӗн > ӗнен* т. ыт. те. Ҫав вӑхӑтрах хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсенче (икӗ хупӑ сасӑ пӗрле тӑма юратманнине пула) ҫурма тулли вариант хушӑнса пырать-мӗн: *сурӑх-ӑн, вӑкӑр-ӑн, ут-ӑн, ашак-ӑн* т. ыт. те. Чи кӗске *-н* вариант вара уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен сӑмахсенче сарӑлнӑ, хальтерех пулса кайнӑ: *ачанӑн > ачан, лашанӑн > лашан* т. ыт. те.

Камӑнлӑх падеж аффиксӗ пулӑвне К. Гренбекпа Н. А. Баскаков каланӑ пек татса парас пулсан, (н) интерфонема ыйтӑвӗ тухса тӑмасть. Г. И. Рамстедт шухӑшне тӗпе хурсан та ҫавах.

---

[23] Рамстедт Г. И. Введение в алтайское языкознание. М.: Изд-во иностр. лит. 1957. С. 33.

[24] Кун пирки: А. М. Щербак. Очерки по сравнительной морфологии тюркских языков: Имя. Л.: Наука, 1977. С. 29—35.

[25] Grönbech K. Der türkische Sprachbau. Kopenhagen, 1936. S. 106—107.

[26] Баскаков Н. А. О соотношении значений личных и указательных местоимений в тюркских языках // Докл. и сообщения ИЯ АН СССР. 1952. С. 135.

И. П. Павлов *лаша(н)-ăн, ĕне(н)-ĕн* йышши сăмахсенчи скобкăра илнĕ (н) сасă интерфонема пулнине Етĕрне таврашĕнчи калаçури *лаша(й)-ăн, ĕне(й)-ăн* формăсемпе танлаштарса ĕнентерет[27]. Кунта историре пулса иртекен *-н~т(д)~-й* ылмашăва шута илме тивет. Тĕрĕссипе, <н> сасă интерфонема мар, *-нăн(-нĕн)* аффиксăн тепĕр варианчĕ кăна иккен[28]. Чăнах та, ытти тĕрĕк чĕлхисенче *-ның, -нин* аффикссемпе пĕрлех камăнлăх падежĕн *-тын(-тин), -дын(-дин)* варианчĕ çÿрени *-н~-т(-д)* ылмашу пулнине куçкĕрет ĕнентерет. Монгол чĕлхинче камăнлăх падежĕн аффиксĕ *-йин* пулни *-д(-т)~й* çинчен хыпарлать: *ага-йин*[29]. Истори тĕлĕшĕнчен илсен, *лаша(й)-ăн, ĕне(й)-ăн* формăсенчи <й> сасă интерфонема шутланма тивĕç мар. Хальхи вăхăтра ăна, чăваш тата ытти тĕрĕк чĕлхисен материалĕпе ăнлантарма май çуккине кура, интерфонема теççĕ[30]. Ку шухăша Н. И. Ашмарин хăйĕн лекцийĕсенчех каласа хăварнă, камăнлăх падежĕн *-н, -ăн(-ĕн), -нăн(-нĕн), -йĕн* аффикссем пулнине кăтартнă. Япала ячĕсем <и> сасăпа пĕтеççĕ пулсан, камăнлăх падежĕнче *-йĕн* аффикс йышăннине (*шăши — шăшийĕн, пăри — пăрийĕн, Укаххи — Укаххийĕн*) курать пулин те, автор <й> сасса кÿртĕм сассен ретне кĕртет. Тĕпчевçĕ çырнă тăрăх, ку аффикс хăшпĕр диалектсенче тĕрлĕрен вариантпа çÿрет: *лашан, лашанăн,* Кăрмăш калаçăвĕнче — *лашайăн*[31].

Хальхи чăваш чĕлхинче «и» сасăпа пĕтекен сăмахсенчи *-йĕн* аффикса камăнлăх падеж аффиксĕ тесе шутлама май пур: *шăши-йĕн, пăши-йĕн, сесси-йĕн* т. ыт. те. Паллах, ку шухăша хирĕçлекенсем [й] интерфонема камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат форминче те пулнине ĕнентерме тăрăшĕç: *шăши(й)ĕ, пăши(й)ĕ.* Тĕрĕк чĕлхисен грамматикисенче камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕпе камăнлăх падежĕн аффиксĕн çыхăнăвне тĕрĕс татса парас пулсан, ку ыйту çине чылайăшĕ урăхларах пăхнă пулĕччĕç. Ку ыйтăвăн кăткăслăхĕсене хăйĕн кĕнекинче Г. Ф. Благова кăтартнă[32].

Çапла вара, хальхи чĕлхере хушма сасă, интерфонема (е интерфикс) тесе пăхнă сасăсем, истори тĕлĕшĕнчен пăхсан,

---

[27] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 96 с.

[28] Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап./ Филология. Чебоксары, 1967. Вып. 34. С. 78.

[29] Севортян Э. В. Категория падежа // Исследования по сравнительной грамматике тюркских языков: Морфология. М.: Изд-во АН СССР, 1956. Ч. 2. С. 47—48.

[30] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1983. Ч. 2. С. 30—31.

[31] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Чувашский язык / Тр. ЧНИИ. Чебоксары, 1976. Вып. 66. С. 26—27; Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1969. Вып. 39. С. 114.

[32] Благова Г. Ф. Тюркское склонение в ареально-историческом освещении. М.: Наука, 1982. С. 31—36.

пĕлтерĕшлĕ пулни сисĕнет. Тĕслĕхрен, И. П. Павлов хальхи чĕлхере <у, ў> сасăсемпе пĕтекен сăмахсем вĕçленнĕ чух камăнлăх падежĕнче çав сасăсем <ă, ĕ> сасăсемпе ылмашнине тата падеж аффиксĕ умĕн кĕртсе лартнă <в> сасă пуррине кăтартать. М. Р. Федотов, çак факта истори тĕлĕшĕнчен пăхса, [в] сасă интерфонема мар тесе ĕнентерет. Хальхи чăваш чĕлхинчи *-у(-ў)* аффикс, автор шухăшĕпе, уçă сасăпа *+-γ~-г* пĕрлешнипе пулнă; *-γ~-г>-в* витĕмĕпе камăнлăх падежĕнче вăл каллех хăй вырăнне йышăнать: чăв. *пăру* (ав. тĕрĕк чĕл. *бузаγ*): *пăрăв-ăн; ту* (ав. тĕрĕк чĕл. *таγ*): *тăв-ăн.*

Паллах, интерфонема ыйтăвне татса пани ытти падеж формисенче тухса тăракан «хушма сасăсен» шăпине те çутатса пама пулăшать. Çав хушăрах пирĕн тĕп вĕçленӳпе камăнлăх вĕçленĕвне те шута илмелле. *Камăнлăх вĕçленĕвĕ* тесе эпир вĕçлевлĕх аффиксĕсем *-ăн, -ĕн, -н* аффикссем хыççăн хушăнса пыракан тĕслĕхсене калатпăр.

Асăрхăр: Н. И. Ашмарин *ывăлу* сăмаха вĕçленĕ чух — пар. *ывăлна,* выр. *ывăлăнта (ывăлунта.—В. С.),* тух. *ывăлăнтан (ывăлунтан. — В. С.)* падежсенчи «н» камăнлăх суффиксĕ тесе палăртать, анчах та *ывăлне, ывăлĕнче, ывăлĕнчен* сăмахсенчи «н» сасă эвфони сасси (хальхи пек каласан, интерфонема) пулать иккен[33].

А. И. Иванов, интерфонема ыйтăвне аякка хăварса, камăнлăх-сăпат категорийĕн 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш сăпатсенчи сăмахсем вĕçлевлĕх аффиксĕсене тĕп форма çумне мар, камăнлăх вĕçлевлĕхĕн форми çумне хушса пынине кăтартать[34]: *сăмахун, сăмахун-та, сăмахун-тан, сăмахĕн-че, сăмахĕн-чен.*

И. П. Павлов тĕпчевçĕ сăпат местоименийĕсен вĕçлевне кăтартнă май: «Чĕлхе историне туллин тĕпчемесĕр, сăмах тĕпĕпе падеж аффиксĕ хушшине кĕрсе ларакан *-ĕн* мĕне пĕлтернине халлĕхе калама йывăр», — тесе çырать[35].

Пирĕн шутпа, кунта чĕлхе историне тĕпчени кирлех те мар, тĕп вĕçленӳпе камăнлăх вĕçленĕвне хальхи чĕлхе материалне тишкернипех палăртма пулать.

Тĕслĕхрен, кăтарту е сăпат ятçумĕсен (местоименийĕсен) улшăнăвĕ пĕтĕмпех камăнлăх вĕçлевĕпе çыхăннă, мĕншĕн тесен тĕп форма ытти вĕçлевлĕхсенчи формăсенчен уйрăм тăрать, вĕçлевлĕх аффиксĕсем камăнлăх вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ çумне хушăнса пыраççĕ.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Тĕп. | эпĕ | эсĕ | вăл | çав | ку |
| Кам. | ман | сан | ун | çав-ăн | ку-н |
| Пар. | ман-а | сан-а | ăна | çав-н-а | кă-н-а (е ку-н-а) |

[33] Ашмарин Н. И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 142.
[34] Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке. Вып. 39. С. 77.
[35] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 189 с.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Выр. | ман-та | сан-та | ун-та | çав-ӑн-та | ку-н-та |
| Тух. | ман-тан | сан-тан | ун-тан | çав-ӑн-тан | ку-н-тан |
| Пӗрл. | ман-сӑр | сан-сӑр | ун-сӑр | çав-ӑн-сӑр | ку-н-сӑр |

Енчен *ман, сан, ун* сӑмахсене хальхи чӗлхере камӑнлӑх вӗçлевлӗхӗн форми тесе пӑхатпӑр пулсан, чӗлхе историне кӗмесӗрех, вӗçлевлӗх аффиксӗсем камӑнлӑх падеж форми çумне çыпçӑнса пыни куçкӗретлӗ. Ку йӗрке 1-мӗш, 2-мӗш сӑпат местоименийӗсене нумайлӑ хисепре вӗçленӗ чух улшӑнать теме пӑхаççӗ хӑшпӗр тӗпчевçӗсем, анчах та чылай чухне вӗçленӳ уйрӑмлӑхӗсене асӑрхамаççӗ.

Нумайлӑ хисепре тӑракан *вӗсем* ятçумӗ (местоимени) икӗ тӗрлӗ вӗçленӗве лекнине ку таранччен асӑрхаман тесен те юрать:

| | | |
|---|---|---|
| Тӗп. | вӗ-сем | вӗ-сем |
| Кам. | вӗ-сен | вӗ-сен |
| Пар. | вӗ-сен-е | вӗ-сенн-е |
| Выр. | вӗ-сен-че | вӗ-сен-че |
| Тух. | вӗ-сен-чен | вӗ-сен-чен |
| Пӗр. | вӗ-сем-пе | вӗ-сен-пе |
| Çук. | вӗ-сем-сӗр | вӗ-сен-сӗр |
| Пирке | вӗ-сем-шӗн | вӗ-сен-шӗн |

Асӑрхӑр: *Пирӗн япаласене илсе кайнӑ, вӗсенне нимӗн те илмен. Эпир кӗреçесем илсе кайман, вӗсенпе ӗçлеме лекрӗ. Вӗсенсӗр пуçне кӗтӳре урӑх качака тавраш çукчӗ. Хамӑр япаласене эпир хӑвӑртах куçарса пӗтертӗмӗр, вӗсеншӗн чылай вӑхӑт урттерме лекрӗ.*

Енчен те сӑпат е кӑтарту ятçумӗсем камӑнлӑх вӗçлевӗнче пулаççӗ пулсан, япала ячӗсем те çак вӗçленӗве йышӑнмалла.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тӗп. | тӑван | тӑван-ӗ | тӑван-сем | |
| Кам. | тӑванӑн | тӑван-ӗ-н | тӑван-сен | (е тӑван-се-н) |
| Пар. | тӑвана | тӑван-н-е | тӑван-сен-е | (е тӑван-се-н-е) |
| Выр. | тӑванта | тӑван-ӗ-н-че | тӑван-сен-че | (тӑван-се-н-че) |
| Тух. | тӑвантан | тӑван-ӗ-н-чен | тӑван-сен-чен | (тӑван-се-н-чен) |
| Пӗрл. | тӑванпа | тӑван-ӗ-н-пе | тӑван-сен-пе | (тӑван-се-н-пе) |
| Çукл. | тӑвансӑр | тӑван-ӗ-н-сӗр | тӑван-сен-сӗр | (тӑван-се-н-сӗр) |
| Пирке | тӑваншӑн | тӑван-ӗ-н-шӗн | тӑван-сен-шӗн | (тӑван-се-н-шӗн) |

*Ирӗклӗхшӗн вилнӗ тӑвансенӗн юнӗ* (Çеçп.) тенӗ чухне *тӑвансенӗн* сӑмахра камӑнлӑх вӗçлевлӗхӗн аффиксӗпе икӗ хут усӑ курнӑ: нумайлӑ хисеп аффиксӗ *-се+-н+-ӗн.*

Хальхи чӑваш чӗлхинче тӗп вӗçленӳпе камӑнлӑх вӗçленӗвӗн 3-мӗш сӑпат формисем камӑнлӑх падежӗнче пӗр килсе тухаççӗ пек:

Тӗп. хӗр хӗрӗ

Кам. хӗр-ӗн хӗрӗ-н, анчах та, сӑнарах пӑхсан, кун пек калани тӗрӗс марри курӑнать, мӗншӗн тесен тӗп вӗçленӳри сӑ-

мах камӑнлӑх вӗҫлевлӗхӗнче *-ӗн* аффикс йышӑнать, камӑнлӑх категорийӗнчи — *-н* аффикс. Революциччен вӗсене анатри калаҫура пӗр-пӗринчен уйӑрса илме питех те ҫӑмӑл пулнӑ, мӗншӗн тесен камӑнлӑх вӗҫленӗвӗнче *-и+-н* аффикссем хуҫаланнӑ. «Нарспи» поэмӑри йӗркесенех илер: 1. *Савӑннипе Сетнерин* (асӑрхӑр: *Сетнер-и-н*). 2. *Хӗрин туйин савнӑҫӗ (туй-ин).* Танл.: *Сӑр вӑрманин хӗрринче* (А IV 200).

Хальхи литература чӗлхинче эпир *Сетнер-ӗн, хӗр-ӗн,* е *хӗр-ӗ-н, туй-ӗ-н* тетпӗр.

Камӑнлӑх падежӗн *-ӑн(-ӗн), -н* аффиксӗ сӑмах тӗпӗ ҫумне кӑна мар, ытти сӑмаха улӑштаракан е форма тӑвакан аффикссем хыҫҫӑн та ҫӳреме пултарать. Сӑмахран, *тултарахрийӗн (тул-та-рах-р-и(й)ӗ-н), ҫӳлтинчен (ҫӳл-т-и-н-чен).*

Камӑнлӑх вӗҫлевлӗхӗн аффиксӗ япала ячӗсем ҫумне кӑна мар, ытти пуплев пайӗнчи сӑмахсем ҫумне те ҫыпҫӑнма пултарать: *ачаш-ӑн, вулакан-ӑн, ҫав-ӑн* т. ыт. те.

## 7 §. ПАРУ ВӖҪЛЕВЛӖХӖ (падежӗ)

Чӑваш чӗлхинчи ку падежӑн аффиксӗсем тӗрлӗрен пулнине палӑртаҫҫӗ. И. П. Павлов *-а(-е)* аффикс пуррине кӑтартать пулсан, Н. И. Ашмаринпа А. И. Иванов пару вӗҫлевлӗхӗн аффиксӗсем *-а(-е), -на(-не), -йе* пулнине ҫирӗплетеҫҫӗ[36].

*Ачана, пӗренене, лашана, урапана* йышши сӑмахсенче И. П. Павлов [н] интерфонема пуррине палӑртать пулсан, Н. И. Ашмаринпа А. И. Иванов *н* элемента пару вӗҫлевлӗх аффиксӗн тытӑмне кӗртеҫҫӗ. Анчах Н. И. Ашмарин *ывӑлна* сӑмахра *-на* вӗҫлевлӗх аффиксӗ мар тет, *-н* авалхи камӑнлӑх категорийӗн 2-мӗш сӑпат аффиксӗ пулнине ӗнентерет[37].

Пӗр шутласан, *-на(-не)* аффикс икӗ аффикс пӗрлешсе ларнипе пулнӑ теме май пур пек:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тӗп. | юлташу | хӗрӳ | ывӑлу |
| Кам. | юлташу-н | хӗрӳ-н | ывӑлу-н |
| Пар. | юлташ-(н)а | хӗр?-(н)е | ывӑл?-(н)а |

Ку шухӑша вӗҫне ҫитиех тытса пырас пулсан, вӑл вырӑнпа туху вӗҫлевлӗхӗсенче те пӗрлешсе ларнӑ темелле пулса тухать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Выр. | юлташу-нта | хӗрӳ-нте | ывӑлу-нта |
| Тух. | юлташу-нтан | хӗрӳ-нтен | ывӑлу-нтан |

Ку таранччен никам та, ниҫта та *-нта(-нте)* вырӑн вӗҫлевлӗхӗн аффиксӗ, *-нтан(-нтен)* туху вӗҫлевлӗхӗн аффиксӗ пулнине кӑтартман. Апла пулсан, кунта япалана хӑй ячӗпех ка-

---

[36] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка. С. 28; Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке. Вып. 39. С. 114.

[37] Ашмарин Н. И. Асӑннӑ ӗҫ. С. 33.

лама лекет: камăнлăх-сăпат категорийĕн 1, 2, 3-мĕш сăпат аффиксĕсем йышăннă сăмахсен вĕçленĕвĕнче пару, вырăн, туху вĕçлевлĕхĕсен аффиксĕсем камăнлăх вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ çумне çыпçăнса пыраççĕ.

Халĕ тĕп вĕçленӳри <а, е> сасăсемпе пĕтекен сăмахсене илер:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп. | хула | кĕнеке | лаша |
| Кам. | хула-н | кĕнеке-н | лаша-н |
| Пар. | хула-(н)-а | кĕнеке-(н)-е | лаша-(н)-а |

Кунта каллех *-а(-е)* аффикс камăнлăх вĕçлевлĕхĕн форми çумне хушăнать теме май пур. Вырăнти калаçусенче <н> сасă вырăнĕнче <й> сасă пулать: *н~й: хулайа, ĕнейа, лашайа.*

М. Р. Федотов *н~й* ылмашу мар, *г~й* ылмашу пуррине ĕнентерет; мĕншĕн тесен чылай тĕрĕк чĕлхисенче пару падеж аффиксĕ *-ка(-ке)-ге* шутланать: тут. *бала-га,* узб. *балага*[38]~ чăв. *ачана,* диалектсенче: *ачайа.* Асăрхăр: ытти тĕрĕк чĕлхисенче камăнлăх вĕçлевлĕхĕн *-н~-й*[39] ылмашăвĕ пур. Вăл пирĕн шухăша тепĕр хут çирĕплетет. Танл.: *ачанăн ~ ачайăн, ачана ~ ачайа.*

Тĕлĕнмелле пулин те, узбек чĕлхин диалекчĕсенче пару падежĕн *-йэ* варианчĕ хупă сасăсем çумне хушăнать: *дэптэр-йэ* «тетраде». Г. Ф. Благова кăтартнă тăрăх, *-йэ* аффикс вырăнĕнче пару падежĕн *-гэ* аффиксĕ те тăма пултарать: *тэп-тэр-гэ ~ тэптэр-йэ.* Çавăнпа *г ~ й* ылмашу куç умĕнчех[40].

Чăваш чĕлхинче <у, ӳ> сасăсемпе пĕтекен сăмахсенче <в> сасă мĕнле майпа тупăннине те тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. М. Р. Федотов çирĕплетнĕ тăрăх, [в] интерфонема пулмасть, кунта *г~в* ылмашу çинчен кăна калаçмалла.

Чăнах та, *ăру~ăрăва* тенĕ чух <в> сасă ытти тĕрĕк чĕлхисенчи <*к, ғ, г*> сасăсене тӳр килет: *урук, урык, уруғ, уруг* (ЭСЧЯ 42); çав вăхăтрах <в> сасă ытти тĕрĕк чĕлхисенче <й> сасăпа ылмашнин тĕслĕхĕсем те пур: *пӳ ~ пĕве кай;* танл.: *бой, буй, пой* (ЭСЧЯ 170); *сĕв ~ сӳ;* тут. *суй,* хак., тув. *сой* (ЭСЧЯ 198). Çак тĕслĕхсене тĕпе хурсан, тĕрĕк чĕлхисенче *в ~ й* ылмашу пуррине курма пулать. Тĕслĕхрен, *çу* «масло»: *çăвăн, çăва;* хăшпĕр тĕрĕк чĕлхисенче: *йаг ~ яв* (ЭСЧЯ 215); *çу* «мыть»: *çăвăн* «мыться»; ног. *юв,* уйг. *жуй,* алт. *дьуг,* хак. *чуг* (ЭСЧЯ 216).

Чăваш чĕлхинчи пару вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ тĕрлĕ ушкăнри сăмахсемпе çӳреме пултарать. 1) Паллă ячĕсемпе: *л а й ă-*

---

[38] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 2. С. 31.

[39] Тенишев Э. Р. Строй саларского языка. М., 1976. С. 106. Автор кунта огуз ушкăнне кĕрекен тĕрĕк чĕлхисенчи *й~н* ылмашу пирки çырать.

[40] Благова Г. Ф. Тюркское склонение в ареально-историческом освещении: Юго-восточный регион. М.: Наука, 1982. С. 68.

*х а пурте кĕтетпĕр, ĕмĕтленетпĕр; л а й ă х а курсан, лайăх пулать, я п ă х а курсан, япăх пулать* (хал. сăм.). Сайра-хутра пару падеж формине *-лă(-лĕ)* аффикслă паллă ячĕсенче те лартма пулать. *Вулакан тухать ă с л а* (Хус. Тăван çĕршыв). 2) Хисеп ячĕсемпе: *п и л л ĕ к е çитнĕ вăл; а л л а, х ĕ р ĕ х е, в ă т ă р а, у т м ă л а, ç и т м ĕ л е çывхарса пырать.* 3) Местоименисемпе пуринпе те. 4) Хальхи причастисемпе: *вулакана, килекене, çӳрекене, пĕлекене, ларакана*; пулас причастисемпе: *ӳ к е с с е пĕлсен, вырăн сарма хушнă* (хал. сăм.); хирĕçлев аспектĕнчи иртнĕ причастисемпе: *пулă к у р м а н а шӳрпе теç-çĕ* (хал. сăм.); яланхи причасти (субстантиваципеннĕ чухне те, субстантиваципенмен чухне те) пару падеж аффиксне йышăнать: *кашни к и л е н - к а я н а куçласа ан тăр!* (калаç.). *Урлă в ы р т а н а тăрăх çавăрса хумасть* т. ыт. те. 5) Наречисемпе: *Паян тумалли ĕçе ы р а н а ан хăвар* (хал. сăм.).

Қалаçура выльăх-чĕрлĕхе сăмах хушнă чухне пару падеж аффиксне час-часах сиктерсе хăвараççĕ: *кĕр карта! хас карта! ил ура!*

Қуна эпир *Қачча каяс, качча кайсан, аннѐ каяс* (хал. сăм.) предложенире те куратпăр. Тулли формăра чух ку çапларах янăрать: *Қаччăна каяс, каччăна кайсан...,* анчах та хальхи литература чĕлхинче тулли формăра çирĕпленмен.

## 8 §. ВЫРĂН ВĔÇЛЕВЛĔХĔ (падежĕ)

Вырăн падежĕн аффиксĕсем — *-ра(-ре), -та(-те), -че.* Вĕсене вырăн падеж аффиксĕн варианчĕсем (алломорфĕсем) тени тĕрĕсрех. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче вырăн падеж аффиксĕсем *-да(-де), -та(-те)* кăна шутланаççĕ пулсан, чăваш чĕлхинче алломорфсем йышлă иккенни палăрать. Уйрăммăнах *-че* аффиксăн уйрăмлăхĕ çинчен калаçмалла. Пĕрремĕшĕ: вырăн вĕçлевлĕхĕн *-че* варианчĕ камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ йышăннă сăмахсем вĕçленнĕ чух кăна пулать, камăнлăх падеж форми çумне кăна çыпçăнать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп. | юлташ-ĕ | тус-ĕ | яч-ĕ |
| Қам. | юлташ-ĕ-н | тус-ĕ-н | яч-ĕ-н |
| Пару | юлташ-н-е | тус-н-е | ят-н-е |
| Выр. | юлташ-ĕ-н-че | тус-ĕ-н-че | ят-ĕ-н-че |

Вĕçлевлĕх аффиксĕсем кун пек чухне *-н* аффикс çумне хушăнса пыни куçкĕрет пулин те, тĕпчевçĕсем çак уйрăмлăха асăрхасшăн пулман, çавăнпа та ăна никам та камăнлăх вĕçленĕвĕпе çыхăнтарман. Пару падежĕнчи *юлташне* тени *юлташĕн-е* тенинчен кĕскелсе пулнă, ахаллĕн <н> сасă кӳртĕм сасă пулманнине ĕнентерме йывăр. Çав йĕркепех вырăн падежĕн *-че* аффиксĕ те хушăнса пырать: *кил-ĕ-н-че, юлташ-ĕ-н-че, тус-ĕ-н-че.* Қу йĕрке туху вĕçлевлĕхĕнче те юлать: *юлташ-*

*ĕ-н-чен, тус-ĕ-н-чен.* Çав пулăма вырăн вĕçлевлĕхĕн *-че* аффиксĕ нумайлă хисеп аффиксĕ çумне хушăнсан та асăрхатпăр: *ял-се-н-че, вăрман-се-н-че.* Кун пек чухне никам та *-сен* аффиксри <н> сасса интерфонема темен, пурте *м~н* ылмашăва кăна палăртаççĕ. Танл.: ку таранччен хи шкул учебникĕсенче пуринче те:

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп. | ял-сем | çын-сем |
| Кам. | ял-сен | çын-сен |
| Пару | ял-сен-е | çын-сен-е |
| Выр. | ял-сен-че | çын-сен-че |
| Тух. | ял-сен-чен | çын-сен-чен |

Вырăн, туху падежĕсен аффиксĕсем камăнлăх вĕçлевлĕх форми çумне камăнлăх категорийĕн 2-мĕш сăпатĕнчи сăмахсене вĕçленĕ чухне те çыпçăнса пыраççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп. | кĕнек-ӳ | ач-у |
| Кам. | кĕнек-ӳ-н | ач-у-н |
| Пару | кĕнек-ӳ-н-е | ач-у-н-а |
| Выр. | кĕнек-ӳ-н-те | ач-у-н-та |
| Тух. | кĕнек-ӳ-н-тен | ачу-н-тан |

Чăваш чĕлхинчи *-та(-те)* аффикс ытти тĕрĕк чĕлхисенчи *-та(-тэ), -да(-дэ)* аффикссемпе тӳр килет.

Чĕлхемĕрти *-та(-те)* аффикс: 1) <р> сасăпа пĕтекен япала ячĕсем çумне хушăнать: *Шупашкар-та, Улатăр-та;* 2) <л, н> сасăсемпе пĕтекен сăмахсем çумне *-ра(-ре)* вариантне те хушма пулать: *Лондон-та, Лондон-ра, Çавал-та, Çавал-ра* т. ыт. те, анчах *Атăлта, Атăлра* мар. Хальхи чăваш чĕлхинче *-ра(-ре)* вариантпа анлăрах усă кураççĕ: *пахча-ра, клас-ра, сĕтел-ре, пӳлĕм-ре, ĕç-ре, уй-ра, вырма-ра, пӳрт-ре* т. ыт. те.

М. Р. Федотов чăваш чĕлхинчи *-ра(-ре)* аффикса орхоненисей çыру палăкĕсенчи *-ра(-рэ)* сулăну падеж аффиксĕпе çыхăнтарма май пурри çинчен çырать (*köz-rä* ~ чăв. *куç-ра; baš-ra* ~ чăв. *пуç-ра),* анчах ку шухăш хирĕçӳллĕ пулнине палăртать[41].

Пирĕн шухăшпа, вырăн падеж аффиксĕн варианчĕсем пуласси фонетика законĕсемпе кăна çыхăннă: тĕрĕссипе, кунта *т ~ р; т ~ ч* сасăсен ылмашăвĕ енчен калаçмалла.

Çапла вара, чăваш чĕлхинчи *-ра(-ре)* вырăн падеж аффиксĕ ытти тĕрĕк чĕлхисенчи *-та(-тэ), -да(-дэ)* аффикспа хурăнташлă. Çитменнине тата, ку аффикс алтай ушкăнне кĕрекен чĕлхесенче пуринче те пур: монгол чĕлхисенче — *-да(-да), -де(-те), -ду(-дӳ), -дӳ(-тӳ);* тунгус-маньчжур чĕлхисенче — *-да(-де), -ду(-ту)*[42].

[41] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 2. С. 36.
[42] Рамстедт Г. И. Введение в алтайское языкознание. М., 1957. С. 43—44.

Г. И. Рамстедт, падеж аффиксěсем пурте тулли пěлтерěшлě сăмахсенчен пулса кайнине ěнентерме тăрăшакансенчен пěри, тěрěк, монгол, тунгус-маньчжур чěлхисенчи вырăн падеж аффиксě *tai* ~ *dai* «вырăн» сăмахран пулса кайма пултарнине палăртать. Ку сăмах, автор кăтартнă тăрăх, корей чěлхинче пур[43].

Г. И. Рамстедт ěнентернě тăрăх, *-тан(-тен)* — ытти тěрěк чěлхисенче *-дан(-ден)* — туху падежěн аффиксěпе *-та(-те)*, *-да(-де)* вырăн падеж аффиксě хушшинче нимле çыхăну та çук.

## 9 §. ТУХУ ВĚÇЛЕВЛĚХĚ (падежě)

Туху падежěн аффиксěсем чăваш чěлхинче те, ытти тěрěк чěлхисенче те вырăн падежěн аффиксěсенчен ауслаутра (аффикс вěçěнче) хушма *-н* пуррипе уйрăлса тăраççě: *-тан(-тен)*, *-ран(-рен)*, *-чен*. Ку аффикссене хăçан каласси те вырăн вěçлевлěхěнни пекех.

Ытти тěрěк чěлхисенче, А. М. Щербак асăннă аффикс варианчěсене шута илес пулсан, юлашки <н> сасă <й> сасăпа ылмашнине курма пулать, анчах та автор ылмашусене ку е вăл чěлхе факчěсемпе çирěплетмен[44].

Тěпчевçěсене туху падеж аффиксě *-та(-те)* аффикспа *-н* элемент пěрлешěвěнчен тăни паллă. Руна çырулăх палăкěсенче çуккине кура чěлхеçěсем ку аффикс кайрантарах пулса кайнă теççě[45].

Чăваш чěлхе наукинче туху падежěн *-ран(-рен)*, *-тан(-тен)* аффиксě пěрлелěх вěçлевлěхěн *-пе* аффиксěпе пěрлешсе наречисем тăвать текен шухăш паян кун та хуçаланать. И. П. Павлов ăнлантарнă тăрăх, ку аффикс наречисем тунă чухне япала ячěсем çумне *(ачаранпа, иртенпе, каçранпа, уйăхранпа)*, паллă ячěсем çумне *(пěчěкренпе, çамрăкранпа)*, местоименисем çумне *(çавăнтанпа, унтанпа)*, вăхăт наречиěсем çумне *(авалтанпа, ěлěкренпе, ěнертенпе, паçăртанпа)* хушăнать[46].

Автор каланине ěненес пулсан, икě падеж аффиксě пěрлешнě май вěсен семантики тěксěмленнě. Пěлтерěшне тěксěмлетменни туху падеж аффиксě хăй тěллěнех çÿреме пултарнинчен курăнать. Танлаштарăр:

---

[43] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 2. С. 36.

[44] Щербак А. М. Очерки по сравнительной морфологии тюркских языков: Имя. Л.: Наука, 1977. С. 44.

[45] Кун пирки А. М. Щербак çырнă çÿлерех асăннă ěçе вуласа пěлме пулать. 45—46 с.

[46] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чěлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 304 с.

1) *Вăл ăна ачаранпа пĕлет. Вăл ăна çавăнтанпа паллать.*
2) *Вăл ăна ачаран пĕлет. Вăл ăна çавăнтан варах пĕлет.*
3) *Вăл ăна мĕн ачаран пĕлет* тенĕ чухне вăхăт пĕлтерĕшĕ пит аван курăнать: çапах *ачаран* сăмах япала ячĕн шайĕнче тăрать. Апла пулсан, *ачаранпа* тенĕ чухне мĕншĕн-ха ăна наречи тесе пăхмалла?

Çитменнине тата, *çавăнтанпа* сăмахра юнашар виçĕ падеж аффиксĕ тăрать: *çав-ăн-тан-па.* Наречи тăвакан аффикс ку сăмахра *-танпа* мар, *-ăнтанпа* пулса тухать.

Пирĕн шутпа, *ачаран — ачаранпа, ĕмĕртен — ĕмĕртенпе* тата ытти çавнашкал формăсене япала ячĕн шайĕнчех пăхмалла (тĕрĕсрех, *-ранпа(-ренпе)* аффикссем мĕнле ушкăнри сăмах тĕпĕсем çумне хушăнаççĕ, сăмах формине çав пуплев пайĕ шайĕнчех пăхса тишкерӳ тумалла). Çак принципа пулах *-нăранпа(-нĕренпе)* аффикспа пулнă сăмахсене деепричасти[47] мар, причасти темелле, мĕншĕн тесен кунта *-нă(-нĕ)* иртнĕ причасти аффиксĕ, *-ран-па(-рен-пе)* туху + пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕсен аффиксĕсем. Кивĕ принципа тĕпе хурса вĕçне çитиех тытса пырас пулсан, *таврăннăранпа, килнĕренпе* йышши сăмахсене те наречи темелле пулнă, мĕншĕн тесен вăл сăмахсен вăхăт пĕлтерĕшĕ куç умĕнчех.

Туху падеж аффиксне сăмахсен çак ушкăнĕсем йышăнаççĕ: 1) паллă ячĕсем: *Ч ы с а ç а м р ă к р а н упра* (хал. сăм.). *Л а й ă х р а н лайăха ĕмĕтлен. Х и т р е р е н хитрине суйла.*

Мĕн *кĕçĕнрен* ӳстертĕм
Çак тарана çитерме (К. Ив.);

2) хисеп ячĕсем тулли вĕçленӳре пулаççĕ. Хăшпĕр хисеп ячĕсем вырăн, туху падеж аффиксне камăнлăх вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ хыççăн йышăнаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсенче *-ĕ* 3-мĕш сăпат аффиксĕ пурри сисĕнет. Çавăнпа та вĕçленӳ парадигмине çапларах кăтартсан тĕрĕсрех:

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп | иккĕмĕшĕ | вуннăмĕшĕ |
| Кам. | иккĕмĕшĕ-н | вуннăмĕшĕ-н |
| Пар. | иккĕмĕш-н-е | вуннăмĕш-н-е |
| Выр. | иккĕмĕшĕ-н-че | вуннăмĕшĕ-н-че |
| Тух. | иккĕмĕшĕ-н-чен | вуннăмĕшĕ-н-чен |

Валеçӳ хисеп ячĕсем туху вĕçлевлĕхĕнче пуласшăнах мар. Хушăран: *В у н ш а р т а н кая сутмасть* тенине калаçура кăна илтме пулать; 3) местоименисенчен чылайăшĕ тулли вĕçленӳре пулать; 4) причасти. Субстантиваципенĕ хальхи причастисем тулли вĕçленӳре пулаççĕ. Пулас тата иртнĕ причасти форми çумне туху падеж аффиксĕ ирĕклĕнех хушăнать: *тарасран, ӳкесрен, кĕресрен, вĕçесрен, тарнăран, ӳкнĕрен, кĕ-*

[47] Павлов И. П. Асăннă ĕç. 296 с.

*нёрен, вёçнёрен* т. ыт. те; 5) вăхăт наречийĕсем: *авалтан, ĕлĕкрен, ĕнертен, паянтан, паçăртан, тахçантан* т. ыт. те. 6) икĕ хут каланă еверлев сăмахĕсем: *ĕçсем к а л - к а л р а н, хăй в ă р - в а р т а н.*

### 10 §. ПĔРЛЕЛĔХ ВĔÇЛЕВЛĔХĔ (падежĕ)

Чăваш чĕлхинче пĕрлелĕх падеж аффиксĕн çак варианчĕсем пуррине палăртаççĕ: *-па(-пе), -пала(-пеле), -палан(-пелен)*. Хальхи чĕлхере чи анлă сарăлни —*-па(-пе)*. Çав вăхăтрах поэзире *-пала(-пеле), -палан(-пелен)* вариантсемпе те усă кураççĕ. Акă П. Хусанкай çырнă «Тăван çĕршыв» поэмăран илнĕ йĕркесем:

1. Тикĕс сарнă *çулпала*
   Унталла та кунталла
   Ыткăнаççĕ машинсем.
2. Бакуран *пуйăспалан*
   Кайнă чух — сисмесĕрех —...
3. Грузипе Азербайджан
   Пĕрлешет *Курапалан.*
4. Грузинсен *юррипелен*
   Кăшт лăпланнă йывăр кун.

Паллах, П. Хусанкай поэминче *-пала(-пеле), -палан(-пелен)* форма *-па(-пе)* формăран ытларах теме çук, мĕншĕн тесен автор *-па(-пе)* вариантпа та анлă усă курать:

1. Çулăн икĕ *хĕррипе*
   Йывăç лартнă *йĕркипе...*
2. Çӳрĕн чыслă *çипуçпа,*
   Çут медаллĕ *карттуспа...*
3. Удмуртсем *шывпа* инçе
   Юхтараççĕ сулăсем.

Чăваш чĕлхинче пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕ çĕннисенчен пĕри шутланать, мĕншĕн тесен ытти тĕрĕк чĕлхисенче ку падеж çук. Пĕрлелĕх пĕлтерĕшне унта *бирлен (билен)* хыççăмах пурнăçлать[48]. Анчах та çапла калани пур тĕрĕк чĕлхисемшĕн те кăтартуллă мар. Тĕслĕхрен, шор чĕлхинче *-ба(-бе), -па(-пе), -ма(-ме)* пĕрлелĕх падеж аффиксĕ пуррине палăртаççĕ. Караимсен чĕлхинче ку аффикс *-ба(-бе, -бя)* вариантпа тĕл пулать. Казах чĕлхинче вăл *-пен(-бен, -мен)* вариантлă: *казакпен*[49] ~ чăв. *казахпа.*

А. И. Иванов пĕрлелĕх падеж аффиксĕ тĕрлĕрен падеж аффикс формисем çумне хушăнма пултарнине палăртать: вырăн падеж аффиксĕ çумне *(пур ç ĕ р т е п е пĕрех)*; туху

[48] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М., 1976. С. 22—23.
[49] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 2. С. 39.

падеж аффиксĕ çумне (*ачаранпа*) — асăрхăр: автор *ачаранпа* сăмах наречи пулни çинчен каламасть; çавăн пекех, *-па* (*-пе*) аффикс танлаштару формиш çумне те хушăнать (*каçарахпа (каç-а-рах-па); праçник куннеллерехпе (кун-елле-рех-пе)* т. ыт. те[50].

Пĕрлелĕх падеж аффиксĕ чăваш чĕлхинчи япала ячĕсенче тĕп падеж форми çумне хушăнать тенĕ ку таранччен, анчах вăл камăнлăх падеж форми çумне те çыпçăнма пултарать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп. | хĕр | юлташ | сĕлĕ |
| Пĕрл. | хĕр-пе | юлташ-па | сĕлĕ-пе |
| Тĕп. | хĕр-ĕ | юлташсем | |
| Кам. | хĕр-ĕ-н | юлташ-сен | е юлташ-се-н |
| Пар. | хĕр-н-е | юлташ-сен-е | юлташ-се-н-е |
| Выр. | хĕр-ĕ-н-че | юлташ-сен-че | юлташ-се-н-че |
| Тух. | хĕр-ĕ-н-чен | юлташ-сен-чен | юлташ-се-н-чен |
| Пĕрл. | хĕр-ĕ-пе | юлташ-сем-пе | юлташ-сен-пе |
| | | | е юлташ-се-н-пе |

хĕр-ĕ-н-пе: Макçăм *хĕрĕнпе* Якур арăмĕн пахчисем юнашар.

Местоименисенче вăл падеж аффиксĕ камăнлăх вĕçленĕвĕпех çыхăннă:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп. | çав | эпĕ | ку | леш |
| Кам. | çав-ăн | ман | ку-н | леш-ĕн |
| Пар. | çав-(ă)н-а | ман-а | кă-н-а | леш-(ĕ)-н-е |
| Выр. | çав-ăн-та | ман-та | ку-н-та | леш-ĕн-че |
| Тух. | çав-ăн-тан | ман-тан | ку-н-тан | леш-ĕн-чен |
| Пĕрл. | çав-ăн-па | ман-па | ку-н-па | леш-ĕн-пе |

Пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ çумне ытти аффикссем хушăнма пултараççĕ: а) *-и* палăрту аффиксĕ: *çунапала — çунапали; Ĕçпине ĕçпех килсеттĕм те-ха* тенĕ чухне *ĕçпине* сăмах морфемисене çапла уйăрмалла: *ĕç-п-и(н)-е*. Хушăран пĕрлелĕх падеж аффиксĕпе *-скер* палăрту аффиксĕ те çӳрет: *лашапаскер, тăлăппаскер;* ă) хăш чух *-па(-пе)* аффикс хыççăн *-рах (-рех)* танлаштару формин аффиксĕ тăма пултарать: *сăмса п а р а х* калаçать, *в ă й п а р а х* туртса илчĕç; б) пĕрлелĕх падеж аффиксĕ пĕр харăсах *-рах(-рех)* аффикс умĕн те, ун хыççăн та тăма пултарать: *ирперехпе (килчĕç); каçпарахпа Шупашкара çитрĕмĕр* (калаç.).

Пĕрлелĕх падеж аффиксĕ тĕрлĕ пуплев пайĕнчи сăмахсемпе çӳреме пултарать: 1) паллă ячĕсемпе: *кăвакпа мар, хĕрлĕпе çырмалла пулнă; мĕн çăмăлпа çӳретĕн?* 2) хисеп ячĕсем пĕрлелĕх падеж аффиксне ирĕккĕнех йышăнаççĕ: *иккĕпе, иккĕмĕшпе, икçĕрпе, виçшерпе сутрăм, вуншарпа туянтăм* (ка-

---

[50] Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке. Вып. 39. С. 121.

лаç.); 3) местоименисемпе: пĕрлелĕх падежне местоименисем тулли вĕçленӳре чух йышăнаççĕ; 4) причастисемпе: субстантивациленнĕ хальхи причастисем тулли вĕçленӳре пулаççĕ; пулас тата иртнĕ причастисем хушăран пĕрлелĕх падежĕнче тăраççĕ (*кино п ĕ т е с п е çитрĕмĕр, кино п ĕ т н ĕ п е пĕрехчĕ; тул ç у т ă л н ă п а пĕрех);* 5) ĕç ячĕсемпе: а) Саламатпа *çапупа* (К. Ив.); ă) Лаши вĕçсе *пырупа* (К. Ив.); 6) евĕрлев сăмахĕсемпе: *х ă р - х а р п а пурăнма хăнăхман эпир; а п - ч ă х х у п а* аптăранăскер т. ыт. те.

## 11 §. ÇУКЛĂХ ВĔÇЛЕВЛĔХĔ (падежĕ)

Чăваш чĕлхинче ку вĕçлевлĕх çĕнĕ шутланать. Унăн аффиксĕ *-сăр(-сĕр)*. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче ку падеж çук: *-сыз (-сиз)* аффикс вĕсенче яланах сăмах тăваканнисен ретне кĕрет. Çуклăх падежĕ çинчен пушкăрт чĕлхеçисем çеç çыраççĕ[51].

Чăваш чĕлхинчи *-сăр(-сĕр)* аффикспа çӳрекен формăсене тĕпчевçĕсем икĕ функциллĕ теççĕ: 1) паллă ячĕ тăвакан аффикс. 2) çуклăх падеж аффиксĕ. Паллах, кун пек чухне: «Вĕсене пĕр-пĕринчен мĕнле уйăрса илмелле?» — текен ыйту сиксе тухать.

И. П. Павлов вĕрентнĕ тăрăх, *-сăр(-сĕр)* аффикс хушăнса пулнă паллă ячĕ япала ятне ăнлантарать, çуклăх падеж аффиксне йышăнсан, япала ячĕ глаголпа çеç çыхăнса тăрать[52]. Тӳрех каламалла, ку принцип ĕçе кăткăслатать. Дискусси вăхăтĕнчех *Лайăх ача лайăх вĕренет* йышши предложенисенчи *лайăх* сăмаха, япала ятне е глагола ăнлантарнине уямасăрах, паллă ячĕн шайĕнчех пăхма килĕшнĕччĕ[53]. Халĕ вара И. П. Павлов ку принципа пăсать: *сĕтсĕр ĕне* тенĕ чухне *сĕтсĕр* паллă ячĕ, *сĕтсĕр пурăнма йывăр* тенĕ чухне *сĕтсĕр* çуклăх падежĕнчи япала ячĕ пулать имĕш.

Енчен те контекстра *-сăр(-сĕр)* аффикслă сăмах япала ячĕпе те, глаголпа та çыхăнмасть пулсан *(Вăл йĕлтĕрсĕр)*, вăл мĕнле пуплев пайĕ иккенне мĕнле пĕлмелле? Сăмахран: *Эпир с п е ц и а л и с т с ă р м а р, вĕсем пирĕн иккĕн тан.*

Халĕ пĕлтерĕш енчен ăна хирĕçлетсе пăхар. *Вăл йĕлтĕрсĕр — вăл йĕлтĕрпе* тенĕ чухне çуклăх вĕçлевлĕхĕн аффикслĕ сăмах пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕнчи сăмахпа антонимлă теме пулать. *Вăл йĕлтĕрсĕр тăрса юлчĕ* тени *Вăл йĕлтĕрлĕ пулса юлчĕ* тенине хирĕçлет те, *йĕлтĕрсĕр те, йĕлтĕрлĕ те* паллă ячĕсем пулмалла пек, анчах та ку паллă ячĕсем вара темшĕн танлаштару категорийĕн аффиксне йышăнмаççĕ: *вăл йĕлтĕр-*

---

[51] Азнабаев А. М., Псянчин В. Ш. Историческая морфология башкирского языка. Уфа, 1976. С. 49.

[52] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 27 с.

[53] О дискуссии по некоторым вопросам чувашской грамматики // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1955. Вып. 12. С. 16—17.

*сěртерех, вăл йěлтěрлěрех* темеççě. Çав вăхăтрах, сăмахсем глаголпа çыхăннине пăхсан, япала ячěн падеж форми çинчен çеç калаçмалла.

Çуклăх вěçлевлěхне глаголпа çыхăнни тăрăх уйăрса илес йěркене тěрěс тетпěр пулсан, ăна ытти формăсенче те тытса пымалла пек, анчах та ăна ытти вěçлевлěхсемпе никам та çыхăнтармасть. Акă *ачан кěнеки* тата *ачан вуламалла* тенě чухне *ачан* сăмах иккěшěнче те камăнлăх вěçлевлěхěнчи япала ячех шутланать. Çав вăхăтрах *ачасăр* сăмах *ачасăр çын* тенě чух паллă ячě, *ачасăр пурăн* тенě чух япала ячě пулса тухать. Вара *ачапа амăшě* тата *пěр ачапа пурăнать* тенě чухне *ачапа* сăмаха мěнле пăхмалла? Юлашки тěслěхри *ачапа* сăмаха никам та ку таранччен паллă ячěсен ретне кěртмен. Апла пулсан, ку принципа *амăшěсěр ача, пиччěшěсěр ача* тенě чухне те пăхăнмалла[54].

Паллă ячěсен камăнлăх категорийě пулманнине пурте пěлнě çинчех[55], тăванлăха кăтартакан *-сăр(-сěр)* аффикслă сăмахсене И. П. Павлов паллă ятне куçарма пикенет. Пирěн шутпа, *амăшěсěр ача* тенě чух *амăшěсěр* — япала ячě, сăмах тěпě — *анне(ама)*, пěрремěшле сăмах, камăнлăх категорийěн 3-мěш сăпатěнче, япала ячě те, сăпат аффиксě те пěрреллě хисепре, çуклăх падежěнче.

Енчен те *амăшсěр* сăмах паллă ячě пулнă пулсан, вăл танлаштару аффиксне йышăннă пулěччě, анчах та *амăшěсěртерех ача* теме май çук.

Қăткăслăхран тухма май пур пек: 1) *-сăр(-сěр)* аффикслă сăмахсене пурне те çуклăх падежěнче тесе пăхмалла; 2) паллă ячě темелле.

Апла пăхсан та, кăткăслăхсем чакмаççě.

Чăваш чěлхинче *-сăр(-сěр)* аффикслă сăмахсене пěр тěрлě пăхни (падеж аффиксě тени)[56] вěрентӳре чылай çăмăллăхсем кӳнě пулěччě. Çуклăх падеж аффиксне ытти пуплев пайěсем те йышăнаççě: 1) хушăран *-сăр(-сěр)* аффикс паллă ячěсемпе те çӳрет *(к ă в а к с ă р вырăн юлман та)*. Палăрту категорийěнчи паллă ячěсем тулли вěçленӳре пулаççě; 2) хисеп ячěсем çуклăх падеж аффиксне ирěккěнех йышăнаççě *(пěрресěр, иккěмěшсěр, виççěмěрсěр, тăватсăмăрсăр, тăваттăшěсěр; п и л л ě к ш е р с ě р сутмасть)*; 3) местоименисем. Вěсем тулли вěçленӳре пулаççě, çавăнпа та *-сăр(-сěр)* çуклăх падеж аффиксне ирěккěн йышăнаççě; 4) *-ма(-ме)* аффикслă инфинитив. Вăл *-сăр(-сěр)* аффикса ирěккěнех йышăнать: *кайма-*

---

[54] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чěлхин морфологине вěрентесси. 29 с.

[55] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чěлхи 120 с.

[56] Андреев И. А. К вопросу о выделении категории относительных прилагательных в тюркских языках // Вопр. чув. лит. и языка: Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1966. Вып. 32. С. 103.

*сăр, килмесĕр, лармасăр, вуламасăр, кĕтмесĕр, пăхкаламасăр, вулакаламасăр* т. ыт. те. И. А. Андреев *-масăр(-месĕр)* аффикслă сăмахсене деепричасти тесе палăртать[57], анчах та глаголăн сăпатсăр формисене ятарласа тĕпченĕ ытти ĕçсенче вăл форма деепричасти пулнине никам та палăртман; 5) хальхи причасти. Вăл, субстантивациленсе, тулли вĕçленӳре пулать; 6) иртнĕ причасти. Ун çумне çуклăх падеж аффиксĕ сайрара пĕрре кăна хушăнать: *вуланăсăр пуçне çырмалла та;* 7) евĕрлев сăмахĕсем: *çемьере шăлт-шалтсăр пулмасть* (халсăм.).

Çӳлерех илсе панă тĕслĕхсенче пуринче те *-сăр(-сĕр)* аффикс çуклăх падеж аффиксĕ шутланать.

М. Р. Федотов *-сăр(-сĕр)* аффикс чăн-чăн падеж аффиксĕн шайĕнче тăманнине палăртать[58]. Автор çирĕплетнĕ тăрăх, чăваш чĕлхинче те, ытти тĕрĕк чĕлхисенче те падеж форми сăмах тăвакан аффикс йышăнма пултараймасть. Çав вăхăтрах *-сăр(-сĕр)* тĕрĕк чĕлхисенчи *-сыз* аффикс çумне сăмах тăвакан аффикссем ирĕккĕнех хушăнаççĕ: *вăйсăрлан, вăйсăрлăх.* Çитменнине тата *-сăр(-сĕр)* аффикслă паллă ячĕ тулли мар вĕçленӳре пулать: *вăйсăр-ăн, вăйсăр-а, вăйсăр-та(?), вăйсăр-тан, вăйсăр-па, вăйсăр-шăн.*

М. Р. Федотов падеж форми сăмах тăвакан аффикс йышăнма пултараймасть тенине ĕненме йывăр, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче камăнлăх вĕçлевлĕхĕн *-ăн(-ĕн)* аффиксĕ хыççăн сăмах тăвакан *-лăх(-лĕх)* аффикс хушăннин тĕслĕхĕсем пур: *камăнлăх: кам-ăн-лăх падежĕ, камăнлăх категорийĕ**.

Çапла вара, «нихăш падеж форминчен те иккĕмĕшле сăмах тума май килмест» тени чăнлăха хирĕçлет.

Чăваш чĕлхине вĕрентекенсене валли çырнă кĕнекере[59] И. П. Павлов çуклăх падежĕпе çыхăннă пĕр пулăмах икĕ тĕрлĕ ăнлантарать: 1) паллă ячĕн тытăмĕнче нумайлă хисеп аффиксĕ те, сăпат аффиксĕ те пулмасть: *кĕнекесемсĕр ача* е *кĕнекисĕр ача* темеççĕ (27 с.); 2) сăмах тăвакан *-сăр(-сĕр)* аффикс тăванлăха кăтартакан сăмахсенчен паллă ячĕ тунă чух камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ хыççăн хушăнать иккен: *амăшĕсĕр ача, пиччĕшĕсĕр ача.* Кун пек чухне паллă ятне сăмах тĕпĕ çумне сăпат аффиксĕ хушмасăр тума май килмест (29 с.).

Иккĕмĕш пунктра каланине шута илес пулсан, *Амăшĕсемсĕр ачасене интерната вырнаçтармалла* тенĕ чухне *амăшĕсем-*

[57] Андреев И. А. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1975. 2 пайĕ. 17 с.

[58] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 3. С. 17.

* Л. П. Сергеев т. ыт. хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕнче» *хăйĕнлĕх* сăмах пур (145 с.).

[59] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. 28 с.

*сĕр* сăмаха паллă ячĕ теме лекет, анчах та вăл пĕрремĕш пунктра каланине хирĕçлет. Пирĕн шутпа, *ашшĕ-амăшĕсĕр ачасем, амăшĕсемсĕр ачасем* тенĕ чухне *амăшĕсĕр, амăшĕсемсĕр* сăмахсем паллă ячĕсем мар, вĕсем çуклăх падежĕнчи япала ячĕсем.

## 12 §. ПИРКЕ ВĔÇЛЕВЛĔХĔ (падежĕ)

1953—54 çулсенчи дискусси хыççăнах ку падежа сăлтавтĕллев падежĕ тетчĕç[60], каярахпа, ку падеж ятне термин шайне лартас тата вĕрентекенсене астума çăмăлтарах пултăр тесе, *пирке падежĕ* теме пуçларĕç. Паллах, чĕлхере пирке падежĕ дискусси умĕн е дискусси вăхăтĕнче йĕркеленнĕ форма мар, вăл чĕлхере тахçанах пулнă. Чăваш чĕлхеçисенчен пирке падежне уйрăм вĕçлевлĕх тесе ят пама чи малтан сĕнекенни — Тимухха Хĕветĕрĕ. «Вĕçлевлĕхсем çинчен хушса калани» сыпăкра автор çапла çырнă: «Чăваш чĕлхинче пирке вĕçлевлĕхĕ пур тесе калама пулать, *-шăн(-шĕн)* сыпăкпа (аффикспа. — *В. С.)* пĕтекен вĕçлевлĕх. Чăнах та, вĕçленекен пур сăмахсем çумне те *-шăн(-шĕн)* сыпăк хушăнма пултарать: *лашашăн, маншăн, пирĕншĕн, усалшăн, усалскершĕн, каякантшăн, каяканнишĕн, каясшăн, каяссишĕн.* Çак сăмахсем вара пирке вĕçлевлĕхĕнче пулаççĕ»[61].

Тимухха Хĕветĕрĕ çырнă тăрăх, пирке падеж форми хăшпĕр калаçура çирĕпленсех çитеймен. Шупашкар уесĕнче хăш ялсенче *-шĕн* сыпăка çемçен кăна калаççĕ: *-шĕн* сыпăк, сăмах тĕпĕ хытă пулсан та, ялан çемçе пулать. Вĕçлевлĕх вĕçĕсем, Тимухха Хĕветĕрĕ шухăшĕпе, хытăпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен пĕрреллĕ хисепре ялан сăмах тĕпĕпе килĕштереççĕ.

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче ку аффикс çук, аффиксĕ çуккине кура, паллах, падежĕ те çук. Пирке вĕçлевлĕхĕн пĕлтерĕшне ытти тĕрĕк чĕлхисенче *ӳчӳн, ичин, ичӳн, ужун, ӳжӳн, учун* хыççăмах палăртать. Чăваш чĕлхинче *-шăн(-шĕн)* хыççăмахран куçнă. Ăна *учун, ӳчӳн* хыççăмах кĕскелсе пĕр сыпăклă юлни, сингармонизм законне пăхăнса çемçе тата хытă вариантпа çӳрени кăтартать: *лаша-шăн, ĕне-шĕн.*

Хальхи вăхăтра пирке падеж аффиксĕ чылай пуплев пайĕнчи сăмахсем çумне хушăнма пултарать: 1) паллă ячĕсем çумне: *хитрешĕн, лайăхшăн, вăрăмшăн, инçешĕн;* 2) местоименисем çумне: *маншăн, саншăн, хăвăншăн, камшăн, никамшăн, такамшăн;* 3) хисеп ячĕсем çумне: *виççĕшĕн, виççĕмĕшшĕн, виççĕмĕршĕн, виççĕршĕн, виççĕшĕшĕн, пĕрре виççĕмĕшĕшĕн;* 4) ĕлĕкрех *-шăн(-шĕн)* аффикс инфинитив çумне хушăннă пулнă: *кай-мак-шăн, ил-мек-шĕн,* анчах та хальхи чĕлхере ку аффикс инфинитив аффиксĕпе пĕрлешсе хăйĕн

---

[60] Ученые записки ЧНИИ. Вып. 12. С. 6—7.
[61] Тимухха Хĕветĕрĕ. Чăваш чĕлхин крамматикĕ. Шупашкар, 1924. 94 с.

сăн-сăпатне улăштарнă пирки *-мак-шăн, мек-шĕн* > *-машкăн, -мешкĕн* пĕр аффикс пулса тăнă[62]; 5) хальхи причастисем çумне: ку причастисем, субстантивациленсе, тулли вĕçленĕве кĕреççĕ: *вулаканшăн, лараканшăн, сутаканшăн, пĕлекеншĕн;* 6) пулас причастисем çумне: *каласшăн, вуласшăн, пулăшасшăн, сутасшăн, илесшĕн* т. ыт. те; 7) иртнĕ причастисем çумне: *ларнăшăн, кайнăшăн, сутнăшăн, çӳренĕшĕн, ĕçленĕшĕн* т. ыт. те; 8) хăшпĕр наречисем çумне: *Ы р а н ш ă н мĕн кулянан?* 9) хушăран евĕрлев сăмахĕсем çумне: *Вĕсем ш ă л т-ш а л т ш ă н эпир айăплă-им?*

Çапла вара, хальхи чăваш чĕлхинче сакăр падеж уйăрас туртăм çирĕпленнĕ, анчах та падеж ыйтăвĕ наукăра татăлнă теме иртерех-ха.

## 13 §. ВĔÇЛЕНӲ ХĂЙЕВĔРЛĔХĔ ТАТА ВĔÇЛЕНӲ КАТЕГОРИЙĔ

Чăваш чĕлхинчи вĕçленӳ уйрăмлăхĕсене пур енлĕн çырса кăтартнă пĕр ĕç те çук. Чăваш чĕлхинче те, ытти хурăнташлă тĕрĕк чĕлхисенчи пекех, вĕçленӳ пĕр тĕслĕ анчах текен ĕнентерӳ вĕçленӳ уйрăмлăхĕсене тĕрĕс çутатма чăрмантарнă. Ку таранччен «чăваш чĕлхинчи кашни падежăнах кирек хăçан та пĕрер аффикс анчах пулать. Пулсассăн та, падеж аффиксĕн фонетика варианчĕсем кăна пулаççĕ» текен шухăш хуçаланнă[63]. Вĕçленӳ вырăс чĕлхинчен урăхларах иккенне асăрханă пулин те, тĕпчевçĕсем чăваш чĕлхин вĕçленӳ уйрăмлăхĕсене тарăн уçса кăтартайман.

А. И. Иванов вĕçлев уйрăмлăхĕсене чылай чухне тĕрĕсех палăртать. Местоименисем вĕçленнĕ чух вĕçлевлĕх аффиксĕсене камăнлăх падежĕн *-ăн(-ĕн, -н)* аффиксĕ хыççăн йышăннинĕ асăрхать пулин те, çак пулăм пĕтĕм япала ячĕшĕн кăтартуллă, вĕçленӳ тĕрлĕ тĕслĕ пулнине туймасть[64].

Эпир шутланă тăрăх, чăваш чĕлхинче тĕп, камăнлăх тата хутăш вĕçленӳсем пур.

Тĕп вĕçленӳ

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп. | çын | сĕтел | халăх | хыр |
| Кам. | çын-ăн | сĕтел-ĕн | халăх-ăн | хыр-ăн |
| Пар. | çынн-а | сĕтел-е | халăх-а | хыр-а |
| Выр. | çын-та | сĕтел-те | халăх-ра | хыр-та |
| Тух. | çын-тан | сĕтел-тен | халăх-ран | хыр-тан |
| Пĕрл. | çын-па | сĕтел-пе | халăх-па | хыр-па |
| Çукл. | çын-сăр | сĕтел-сĕр | халăх-сăр | хыр-сăр |
| Пирке | çын-шăн | сĕтел-шĕн | халăх-шăн | хыр-шăн |

[62] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 261 с.
[63] Çавăнтах. 90 с.
[64] Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Вып. 34. С. 81—82.

Тĕп вĕçленӳре падеж аффиксĕсем сăмах тĕпĕ çумне тӳрех хушăнаççĕ. Куна эпир сăмах улшăнăвĕ тейĕпĕр.

Камăнлăх вĕçленĕвĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| а) | Тĕп. | кӳршĕ | Совет халăхĕ |
| | Кам. | кӳршĕ-н | халăх-ĕ-н |
| | Пар. | кӳршĕ-нн-е | халăх-ĕ-нн-е |
| | Выр. | кӳршĕ-н-че | халăх-ĕ-н-че |
| | Тух. | кӳршĕ-н-чен | халăх-ĕ-н-чен |
| | Пĕрл. | кӳршĕ-н-пе | халăх-ĕ-н-пе |
| | Çукл. | кӳршĕ-н-сĕр | халăх-ĕ-н-сĕр |
| | Пирке | кӳршĕ-н-шĕн | халăх-ĕ-н-шĕн |
| ă) | Тĕп. | çын | Тукас çынн-и |
| | Кам. | çын-ăн | çынн-и-н |
| | Пар. | çын-ăнн-е | çынн-и-нн-е |
| | Выр. | çын-ăн-че | çынн-и-н-че |
| | Тух. | çын-ăн-чен | çынн-и-н-чен |
| | Пĕрл. | çын-ăн-пе | çынн-и-н-пе |
| | Çукл. | çын-ăн-сĕр | çынн-и-н-сĕр |
| | Пирке | çын-ăн-шĕн | çынн-и-н-шĕн |
| б) | Тĕп. | Петĕр | Макçăм Петĕр-ĕ |
| | Кам. | Петĕр-ĕн | Петĕр-ĕ-н |
| | Пар. | Петĕр-ĕнн-е | Петĕр-ĕ-нн-е |
| | Выр. | Петĕр-ĕн-че | Петĕр-ĕ-н-че |
| | Тух. | Петĕр-ĕн-чен | Петĕр-ĕ-н-чен |
| | Пĕрл. | Петĕр-ĕн-пе | Петĕр-ĕ-н-пе |
| | Çукл. | Петĕр-ĕн-сĕр | Петĕр-ĕ-н-сĕр |
| | Пирке | Петĕр-ĕн-шĕн | Петĕр-ĕ-н-шĕн |
| в) | Тĕп. | колхоз | Мичурин колхоз-ĕ |
| | Кам. | колхоз-ăн | колхоз-ĕ-н |
| | Пар. | колхоз-ăнн-е | колхоз-ĕ-нн-е |
| | Выр. | колхоз-ăн-че | колхоз-ĕ-н-че |
| | Тух. | колхоз-ăн-чен | колхоз-ĕ-н-чен |
| | Выр. | колхоз-ăн-пе | колхоз-ĕ-н-пе |
| | Çукл. | колхоз-ăн-сĕр | колхоз-ĕ-н-сĕр |
| | Пирке | колхоз-ăн-шĕн | колхоз-ĕ-н-шĕн |

*Камăнлăх вĕçленĕвĕ* тесе, падеж аффиксĕсем камăнлăх падеж форми çумне хушăнса пынине калатпăр. Ку вĕçленĕве харпăрлăхлă пулма пултаракан япалана пĕлтерекен сăмахсем пурте кĕреççĕ*: 1) *ача, арçын, хĕрарăм, хĕрача*; 2) тăванлăха палăртакан сăмахсем пурте; 3) *кӳршĕ, пускил, ялйыш, çын, халăх, колхоз, совхоз, артель ~ эртел, патшалăх* т. ыт. те. Ку сăмахсем камăнлăх вĕçленĕвĕнчен нумайлă хисеп аффиксне йышăнсан та тухмаççĕ.

* Вырăсла: существительные, обозначающие предметы, которые могут обладать чем-либо.

| | Камăнлăх вĕçленĕвĕ | | Хутăш вĕçленӳ | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп. | ача-сем | | ача-сем | |
| Кам. | ача-сен | е ача-се-н | ача-сен | е ача-се-н |
| Пар. | ача-сен-е | ача-се-н-е | ачи-сен-е | ачи-се-н-е |
| | ача-сенн-е | ача-се-нн-е | ача-сенн-е | ача-се-нн-е |
| Выр. | ача-сен-че | ача-се-н-че | ача-сен-че | ача-се-н-че |
| Тух. | ача-сен-чен | ача-се-н-чен | ача-сен-чен | ача-се-н-чен |
| Пĕрл. | ача-сен-пе | ача-се-н-пе | ача-сем-пе | |
| Çукл. | ача-сен-сĕр | ача-се-н-сĕр | ача-сем-сĕр | |
| Пирке | ача-сен-шĕн | ача-се-н-шĕн | ача-сем-шĕн | |

Ку таранччен чăваш чĕлхе наукинче нумайлă хисеприяпала ячĕсем хутăш вĕçленӳре пулнине кăтартнă, анчах та ăна тĕп вĕçленӳ тесех ĕнентернĕ. Вĕçленӳ уйрăмлăхĕсене шкул учебникĕ çакăн пек таблицăсемпе ăнлантарать:

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп. | йывăç-сем | йывăç-ĕ |
| Пĕрл. | йывăç-сем-пе | йывăç-ĕ-пе |
| Çукл. | йывăç-сем-сĕр | йывăç-ĕ-сĕр |
| Пирке | йывăç-сем-шĕн | йывăç-ĕ-шĕн |
| Кам. | йывăç-сен(-ĕн) | йывăç-ĕ-н |
| Пар. | йывăç-сен-е | йывăç-н-е |
| Выр. | йывăç-сен-че | йывăç-ĕн-че |
| Тух. | йывăç-сен-чен | йывăç-ĕн-чен |

## 14 §. ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ИРТНĔ ВĂХĂТ КАТЕГОРИЙĔ

Япала ячĕсен иртнĕ вăхăт категорийĕ — чăваш чĕлхинче *-чĕ(-ччĕ)* аффикспа пулать. Ку аффикс пур япала ячĕ çумне те хушăнма пултарнине тата çак аффикслă формăсен вăхăт (иртнĕ вăхăт) пĕлтерĕшĕ пуррине шута илсе, япала ячĕсен вăхăт категорийĕ пурри çинчен калама май пур. *Пĕрремĕш аптека малтан пĕр хутлă çуртраччĕ* (Ялав. 1987. 3 №. 27 с.) предложенири *çуртраччĕ* сăмах иртнĕ вăхăтра. *Эпир иккĕн те студентчĕ. Пирĕн йывăç пӳртчĕ. Генăпа Саша ачаччĕ* предложенисенчи палăртнă сăмахсем иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшне питĕ уçăмлă палăртаççĕ: *-чĕ* аффикс хушăннăшăнах япала ячĕсем глагола тухса каяймаççĕ-ха. Ку аффикс сăмах тĕпĕ çумне кăна мар, тĕрлĕрен формăсем çумне те çыпçăнма пултарать: а) падеж формисем çумне: *Макçăмăнччĕ, Макçăмраччĕ, Макçăмпаччĕ, Макçăмсăрччĕ, Макçăмшăнччĕ; ачараччĕ, ачапаччĕ, ачасăрччĕ, ачашăнччĕ;*

ă) камăнлăх категорийĕн сăпат аффиксĕсем çумне: *Макçăм арăмĕччĕ, кӳршĕ ял çынниччĕ, юратнă тусăмччĕ, çывăх юлташуччĕ;*

б) нумайлă хисеп аффиксĕ çумне: *пĕр ял çыннисемчĕ эпир, вăл ĕçе пуçараканĕсем Ивановсемчĕ.*

Кирек мĕнле грамматика форми те нумай пĕлтерĕшлĕ пулнă пекех, ку категори формине йышăннă сăмахсен те пĕлтерĕш нумайлăхĕ палăрать. Пĕлтерĕш улăшаслăхĕ -*чĕ* аффикслă формăсем мĕнле сăмахсен хупăрлавне лекнинчен килет. Тĕслĕхрен, *Ирхине çумăрччĕ* тенĕ чухне иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшне уççăнах сисетпĕр пулсан, *Çумăрччĕ пĕрре!* предложенири *çумăрччĕ* иртнĕ вăхăта мар, ĕмĕтленнине, çав япала кирлине палăртать: *Мунчаччĕ халь!*... тени «мунча кĕрсен лайăх пулмалла» тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕрех. Ĕмĕтленни яланах пулас вăхăтпа çыхăннă.

Ку таранччен *ачаччĕ, студентчĕ* сăмахсенчи -*чĕ*(-*ччĕ*) аффикса çителĕксĕр глагол тенĕ, анчах апла калама сăлтавĕ сахалтарах. Чăваш чĕлхинчи -*чĕ*(-*ччĕ*) аффиксăн тутар чĕлхинчи *идем, идек* йышши пулăшу глаголĕсен пек паллăсем пачах çук, тата, çитменнине, -*чĕ*(-*ччĕ*) аффикс сăпатлă формăри пĕрре иртнĕ вăхăт аффиксне аса илтерет: *ил-ч-ĕ, кил-ч-ĕ* сăмахсенче -*ч*- — пĕрре иртнĕ вăхăт аффиксĕ, -*ĕ* — 3-мĕш сăпат форми.

Эпир тишкерекен -*чĕ*(-*ччĕ*) аффиксăн иртнĕ вăхăта палăртаслăхĕ япала ячĕсемпе çыхăнура тăнă чух кăна мар, ытти ушкăнри сăмахсемпе çӳренĕ чух та куçкĕретлĕ:

а) паллă ячĕсемпе: *аванччĕ, лайăхчĕ, хитреччĕ; Ĕнерхи каç тӳпе хурачче* (Эйзин);

ă) хисеп ячĕсемпе: *виççĕччĕ, вуннăччĕ, вуннăмĕшчĕ, виçсĕмĕрччĕ;*

б) местоименисемпе: *эпĕччĕ, эсĕччĕ, лешĕччĕ, унччĕ, унтаччĕ, лешĕнпеччĕ, хăвăнччĕ, пирĕннисемччĕ; манччĕ, санпаччĕ*;

в) наречисемпе: *паçăрччĕ, анчахчĕ, ĕнерччĕ, паянччĕ, ыранччĕ;*

г) причастисемпе: *лараканччĕ, ларнăччĕ,* анчах пулас причастисем çумне хушăнсан, иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшĕ палăрмасть: *ларасчĕ, килесчĕ, вуласчĕ* сăмахсем ĕмĕтленнине пĕлтереççĕ. Çавăн пекех, *çийĕттĕмччĕ, вулĕччĕ, килĕччĕ* йышши ĕçхĕлсенче пулас вăхăт пĕлтерĕшĕпе пĕрлех ĕмĕт пĕлтерĕшĕ те пур;

д) деепричастисемпе: *ларсаччĕ, килсеччĕ, курсаччĕ* т. ыт. те.

## 15 §. ПАДЕЖ СИСТЕМИНЕ КĔМЕН ФОРМĂСЕМ

Падеж системине кĕмен формăсем çинчен чăваш чĕлхе наукинче никам та, ниçта та пĕтĕмлетсе çырса кăтартни çук. «Падеж системине кĕмен формăсем» текен сăмах çаврăнăшĕчи малтанхи хут 1981 çулта тухнă «Чĕлхе пĕлĕвĕсен про-

грамминче» тĕл пулать[65]. Унта падеж системине кĕмен формăсен аффиксĕсене çаксене кăтартнă: *-алла(-елле), -чен, -серен, -çемĕн* т. ыт. те. Падеж системине кĕмен формăсем тени, пĕтĕмĕшле илсен, япала ячĕн категорийĕсен тулашĕнче тăракан формăсем тенине пĕлтерет. Çапла вара, чĕлхере категориллĕ тата категорисĕр формăсем пуррине палăртма лекет. Анчах та хушăран падеж категорийĕнче пăхма май пур формăсемех категори тулашĕнче юлнисем пур. Тавлашуллисен шутне эпир *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикслă формăсене кĕртетпĕр. Вĕсене ку таранччен никам та падеж аффиксĕ тесе пăхман, анчах апла пăхма пур сăлтав та пур: ку аффикс пур япала ячĕ çумне те (пайăр ят çумне те!) хушăнма пултарать. Хальхи падежсен шутне кĕртмен пирки ăна ирĕксĕрех падеж системине кĕмен форма теме лекет.

## 16 §. СУЛĂНУ ФОРМИ

Сулăну форми чăваш чĕлхинче *-алла(-елле)* аффикспа пулать. Анчах та ку аффикс пулăвĕ пирки тĕпчевçĕсен пĕршухăшлăх çук. И. П. Павлов калан̆ă тăрăх, *-лла(-лле)* аффикс *-а* пару падеж аффиксĕ çумне хутшăнать[66] те, сулăну форми йĕркеленет. И. А. Андреев *вăрманалла, хирелле* сăмахсенче *-алла(-елле)* аффикс пулнине кăтартать. Пуласса вăл, автор калан̆ă тăрăх, *ал* «ен» тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахран пулнă (танл.: тут. *ал* «перед, передний», кăрк. *алд* «перед, передняя часть»). Хальхи чĕлхере *ал* сăмах истори тĕлĕшĕнчен пĕтĕçсе ларса пĕр сăмах шайĕнче тăракан çак лексика единицисенче тĕл пулать: *мал<ум+ал, шал<ăш+ал, аял< ай+ал, çиел<çи+ел, хыçал<хыç+ал, тĕпел<тĕп+ел*[67].

Ыйтăва И. А. Андреев калан̆ă пек çутатса парсан та, пару падеж аффикс ыйтăвĕ сĕвĕрĕлмест, мĕншĕн тесен **-ал(-ел)* >*-алл(-елл)* аффикс хыççăн *-а* элемент пуррине курма пулать, ку элемента мĕнле хак памаллине И. А. Андреев каламан. Пирĕн шутпа, ăна *вăрман-алл+а>вăрманалла* йышши сăмахсенче *-алл(-елл)* аффикс *-а(-е)* пару падеж аффиксĕпе пĕрлешсе ларнă тесе пăхма пулать; *-алла(-елле)* сулăну форми тулли пĕлтерĕшлĕ *ал(~ел)* сăмахран пулнă тесе пăхсан, *-алла(-елле)* аффикса пур тĕслĕхсенче те И. А. Андреев кăтартнă пек уйăрмалла тени те иккĕленӳллĕ: *çулсен+ -елле; вăрман+-алла.*

---

[65] Чĕлхе пĕлĕвĕсен программи / Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1981. 12 с. (Программăн «Морфологи» пайне И. А. Андреев профессорпа И. П. Павлов доцент хатĕрленĕ).

[66] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 125 с.

[67] Андреев И. А. Рец. на кн.: И. П. Павлов. Современный чувашский литературный язык: Морфология // Вопр. чуваш. лит. и яз. Чебоксары, 1966. Вып. 32. С. 199—200.

«Нарспи» поэмăран илнĕ

Хĕвел анчĕ хĕрелсе
Хура вăрман *хыçнелле.*
Кĕтӳ анчĕ кĕрлесе
Аслă Силпи *ялнелле*

куплетри *хыçнелле (хыçĕн+-елле), ялнелле (ялĕн+-елле)* сăмахсенче *-елле* аффикс *килĕсен+-елле, çулсен+-елле* сăмахсенчи пекех камăнлăх падеж аффиксĕ çумне хушăннă тесе пăхма лекет.

Г. И. Рамстедт хăй вăхăтĕнче *-алла(-елле)* аффикса тулли пĕлтерĕшлĕ *алă* «рука» сăмахран пулнă тесе çирĕплетнĕ, *вăрманалла, хирелле* йышши сăмахсене кăтарту падежĕнче (директивра) пулнине ĕнентернĕ[68]. И. Бенцинг та *-алла(-елле)* аффикслă формăсене кăтарту падежĕ тесе палăртнă. М. Р. Федотов ку форма чăваш чĕлхинче кăна мар, финн-угр чĕлхисенче те пулнине кăтартать: фин. *ïsälle (isä* «атте»); эст. *metsale (mets* «вăрман»); мар. *тушкыла (тушко* «унта»), *тышкыла (тышке* «кунта»)[69]. Автор нимĕнле пĕтĕмлетӳ тумасть пулин те, унăн шухăшне çапларах ăнланмалла пулас: чăваш чĕлхинчи *-лла(-лле)* (ку аффиксăн тытăмне М. Р. Федотов И. П. Павлов кăтартнă пек пăхать) аффикс финн-угр чĕлхисен витĕмĕпе пулса кайма пултарнă. Анчах та, аргументсемсĕр ку шухăша йышăнма йывăр. Пире кун пек форма ытти тĕрĕк чĕлхисенче çукки те шухăшлаттарать.

Каларăмăр ĕнтĕ, *-алла(-елле)* сулăну форми чăваш чĕлхинче падеж аффиксĕ шутланма пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл пур япала ячĕсемпе те çӳремест: *çыналла, лашаналла, кĕнекенелле, Петĕрелле* теме май çук.

Чăваш чĕлхинче *-алла(-елле)* аффикс тĕп падеж форми çумне анчах мар: *вăрман-алла, хир-елле,* камăнлăх падеж аффиксĕ çумне те (*к и л ĕ с е н - е л л е саланчĕç),* вырăн падеж аффиксĕ çумне те çыпçăнма пултарать. *(Иван Кавĕрлепе пĕр ç у л т а л л а х* пулмалла). Юлашки тĕслĕхри *çулталла* сăмахра хуплашу хуçаланать: *çул-та+алл-а>çулталла.*

*Кун к а ç а л а н а сулăнать* предложенири *каçалана* сăмахра *-алла* аффиксăн *-ала* алломорфĕ тухса тăрать; *каçаланалла* сăмахра сулăну формипе икĕ хут усă курнă: *каç-ал-а-н-алл-а.*

Енчен те *-алла(-елле)* <* *ал(ел)* «ен» сăмахран пулнă тесе пăхсан, *малалла, шалалла, тĕпелелле* йышши сăмахсенче истори тĕлĕшĕнчен *ал* элемент икĕ хутчен хушăннине тĕсеме пулать: *тĕп+ел+ел(ле), тĕпел* сăмахра *-ел* сăмах тăвакан аффикс шутланать.

---

[68] Рамстедт Г. И. Введение в алтайское языкознание. М.: Изд-во иностр. лит., 1957. С. 199—200.

[69] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 2. С. 33.

Чăваш чĕлхинчи *-алла(-елле)* сулăну форми япала ячĕсем çумне кăна мар, ытти пуплев пайĕнчи сăмахсем çумне те хушăнма пултарать: а) япала ячĕленекен паллă ячĕсем çумне: *пур ўсентăран та ăшшалла туртăнать*; *ăшшалла* сăмахра сăмах тĕпĕнчи <ш> сасă вăрăмланать те *ăш+-алла*> *ăшалла* «вовнутрь» сăмахпа пăтраштарассинчен хăтарать.

Анчах асту: Михетер
Хĕрне памасть *çукалла* (К. Ив.)

предложенири *çук* сăмаха паллă ячĕ тесе пăхма май пур: *çук+-алла~çукалла* тени кунта *çук çынна* сăмах майлашăвĕпе пĕр пĕлтерĕшлĕ; ă) шут хисеп ячĕсем çумне: *Хĕрĕхелле (хĕрĕхсенелле) çывхарса пырать; Алла çитмен-ха вăл* тенĕ чух *-алла* аффиксăн алломорфĕ *-ла* кăна пулать теме май çук, *-а* кунта пару падеж аффиксĕ; танл. *аллăналла, аллăсенелле* çитнĕ çын; б) *унта, кунта, лере, ниçта, ăçта* сăмахсем çумне *(-елле)* аффикс, вырăна пĕлтерекен япала ячĕсем çумне хушăннă пекех, ирĕккĕн хушăнать: *унталла, кунталла, лерелле, ăçталла, ниçталла:*

*Унталла, кунталла* эп кайсассăн,
Ас илет-ши мана чун савни? (Юрăран).

## 17 §. ПУРЛĂ ТАТА ÇУКЛĂ ФОРМА

Чăваш чĕлхе наукинче ку таранччен глаголăн пурлă тата çуклă формисем çинчен кăна çырнă. Ят сăмахсен çуклă форми *-сăр(-сĕр)* аффикспа пулнине И. А. Андреев асăнса кăна иртет[70]. Пурнăçри ĕç пулнипе пулманнине кура çав ĕçе кăтартакан глагола икĕ формăра калама пулать: ĕç пуррине, пулнине, пулассине кăтартнă чух глагола пурлă формăра калаççĕ, ĕç пулманнине кăтартнă чух — çуклă формăра. Глаголăн çуклă формине тумалли мелсене И. П. Павлов çакăн пек таблицăра кăтартать[71]:

| Мелсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| *-ма(-ме)*<br>*-мас(-мес)*<br>*-м* аффикспа | кур-ма-рăм, кур-ма-н,<br>кур-мас-т-ăм, кур-мас-т-ăн,<br>кур-м-ăн, кур-м-иччен |
| *ан, мар, çук* татăксемпе | ан кур, ан куртăр<br>кур-ам мар, кур-ас мар,<br>кур-ас çук, кур-ма çук |

[70] Андреев И. А. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1975. 2 пайĕ. 11 с.

[71] Павлов И. П. Морфологие çĕнĕ программăпа вĕрентесси. Шупашкар, 1981. 70 с.

Тĕрĕссипе илсен, мелсен иккĕмĕш ушкăнне кĕрекен сăмах ҫаврăнăшĕсене (вĕсен *ан, мар, ҫук* татăксем пур) морфологи мелĕ тесе пăхма май килмест, мĕншĕн тесен кунта синтаксис мелĕ хуҫаланать.

Пурлăхпа ҫуклăх категорийĕсем, паллах, ăнлав категорийĕсем. Пурлăхпа ҫуклăха палăртмалли мелсем вара кашни чĕлхерех пур. Чи малтанах вĕсем шутне ятарлă *пур, ҫук* сăмахсене кĕртмелле. *Ман кĕнеке пур — ман кĕнеке ҫук; пур ҫын — ҫук ҫын; пур пултăр — ҫук пултăр.* Пурлăхпа ҫуклăха уйрăм *пур, ҫук* сăмахсемпе палăртни морфологи мелĕ мар. Япала е пулăм пуррипе ҫуккине, паллах, морфологи мелĕпе те палăртма пулать: *кĕнекепе килчĕ — кĕнекесĕр килчĕ* тенĕ чухне япала пуррине *-пе* пĕрлелĕх падеж аффиксĕ, ҫуккине— *-сĕр* ҫуклăх падеж аффиксĕ кăтартать: *-сĕр* ҫуклă форма *-лă* пурлă формăна хирĕҫлет: *кĕнекеллĕ ача — кĕнекесĕр ача.* Ҫакăн пек тĕслĕхсене тĕпе хурас пулсан, ҫуклăх формисем чĕлхере каярах пулса кайнă теме май ҫук[72]. Пурлă тата ҫуклă формăсем чĕлхере пĕр вăхăтрах аталанма пуҫлаҫҫĕ. Ҫак шухăша И. А. Андреев ҫапла палăртать: «...пурлăхпа ҫуклăх пĕр-пĕрне хирĕҫле пĕлтерĕшлĕ категорисем, пĕр-пĕринпе уйрăлми ҫыхăннă: пурри мĕнне пĕлмесĕр, ҫуккине ăнланма май ҫук, ҫавăн пекех ҫуккисĕр пурри ҫинчен те калаҫма май килмест. Пуррипе ҫукки шухăшлав енĕпе те тачă ҫыхăннă»[73].

Пурлăха палăртмалли мелсем:

| Мелсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| *-па(-пе); -пала(-пеле)* *-палан(-пелен)* | ачапа, хĕрпеле, ирпелен |
| *-лă(-лĕ)* — морфологи (аффикс) мелĕ | кĕпеллĕ, шĕлепкеллĕ, тумтирлĕ |
| пур (паллă ячĕ, местоимени, татăк) — синтаксис мелĕ | пур ҫын пуршăн кулянать; пур ҫын пĕрле пухăнсан; эс пур — ăаратăн ҫавăнта... |

Ку таранччен тĕпчевҫĕсем япала ячĕн (е ят пуплев пайне кĕрекен сăмахсен) пурлă форми пирки ниҫта та асăнман. Кун пирки И. А. Андреев ҫапла ҫырнă: «Эпир пĕлекен чĕлхесенче пуринче те ҫуклăха палăртмалли ятарлă мелсем пур, пурлăха палăртма унашкал мелсем ҫук. Ку йĕрке чăваш чĕлхинче те ҫавнашкалах»[74]. Тĕрĕссипе, пурлă тата ҫуклă форма

[72] Пауль Г. Принципы истории языка. М.: Изд-во иностр. лит., 1960. С. 157.
[73] Андреев И. А. Асăннă ĕҫ. 8 с.
[74] Ҫавăнтах.

япала ячӗсен те пур. Тӗслӗхрен, *ачаллӑ, йӑваллӑ, упӑшкаллӑ, ҫӑматлӑ, кӗрӗклӗ, шӗлепкеллӗ* сӑмахсенче *-лӑ(-лӗ)* аффикс ҫав япала пурри ҫинчен хыпарлать. Ку таранччен вӗсене пурне те паллӑ ячӗ тесе пӑхнӑ, анчах паллӑ ячӗн нормисене, категори шайӗпе виҫсе, ҫак сӑмахсем тивӗҫтернипе тивӗҫтерменнине уяман: вӑл сӑмахсем пӗри те танлаштару формине йышӑнмаҫҫӗ: *ачаллӑрах, йӑваллӑрах, упӑшкаллӑрах, кӗрӗклӗрех, шлепкеллӗрех* тенисем чӗлхере ҫук. Апла пулсан, ун пек сӑмахсене паллӑ ячӗсем тесе мар, япала ячӗсем тесе пӑхмалла, пурлӑ формӑра пулнине кӑтартмалла. Ҫак асӑннӑ аффикспа пулнӑ сӑмахсене падеж системине кӗртнӗ пулсан, эпир вӗсене пурлӑх падежӗнче тенӗ пулӑттӑмӑр, вара пурлӑ форма ҫав падеж пӗлтерӗшӗпе ҫыхӑнса пӗрлешсе кайнӑ пулӗччӗ (хальхи ҫуклӑх падежӗ япала ҫуккине кӑтартать, апла пулсан, унта ҫуклӑх пӗлтерӗшӗ те тӗвӗленнӗ).

Кун пек чухне *-лӑ(-лӗ)* аффикса *-сӑр(-сӗр)* аффикспа хирӗҫлетсе пӑхмалла: *-лӑ(-лӗ) -сӑр(-сӗр)* аффикспа пулнӑ сӑмахсене, енчен те вӗсене танлаштару категори форминче лартма пулать пулсан, паллӑ ячӗ тесе ӑнланмалла: *илемлӗ — илемлӗрех, чаплӑ — чаплӑрах, сумлӑ — сумлӑрах, вӑйлӑ — вӑйлӑрах, сӑпайлӑ — сӑпайлӑрах, хаклӑ — хаклӑрах, илемсӗр — илемсӗртерех, вӑйсӑр—вӑйсӑртарах, сӗмсӗр—сӗмсӗртерех.*

Танлаштару категори форминче пулманнине кура, *хыҫлӑ пукан, куҫлӑхлӑ ҫын, детекторлӑ приемник* сӑмах майлашӑвӗсенчи *-лӑ(-лӗ)* аффикслӑ сӑмахсене япала ячӗн пурлӑ форми темелле.

Тата *-лӑ(-лӗ)* аффикслӑ сӑмахсен тепӗр уйрӑмлӑх пуррине манмалла мар, мӗншӗн тесен вӗсем, *-сӑр(-сӗр)* аффикслӑ сӑмахсем пекех, глаголпа та ҫыхӑнма пултараҫҫӗ, ҫапах та уншӑнах япала ячӗ пулма пӑрахмаҫҫӗ: *хӗвеллӗ ҫанталӑк— кун хӗвеллӗ пулать; аслатиллӗ ҫумӑр — ҫумӑр аслатиллӗ пулчӗ.*

Пурлӑ форма япала ячӗсем ҫумне кӑна мар, ытти пуплев пайӗсем ҫумне те хушӑнать: а) паллӑ ячӗсем ҫумне: *хастарлӑ; ула-чӑлаллӑ.*

1. *Хастарлӑ,* хыт утӑмлӑ пулӑр,
   Ҫӗршывӑн хастар ачисем (Ҫ. М.).
2. *Ула-чӑлаллӑ* вырӑнсем курӑнма пуҫларӗҫ;

ӑ) хисеп ячӗсем ҫумне: *пӗрреллӗ, виҫҫӗллӗ, ҫичҫӗллӗ:* Пӗрре пӗрреллӗ, Иккӗ иккӗллӗ (ачасен выляври шут йӗрки);
б) глаголӑн яланхи причасти форми ҫумне: *шӑтан-юханлӑ.*

## 18 §. ВАЛЕҪӲ ФОРМИ

Чӑваш чӗлхинче *-шар(-шер)* аффикспа (хисеп ячӗсен валеҫу категори формипе) авалтанах усӑ кураҫҫӗ: *икшер, виҫ-*

*шер, тăватшар, ултшар...* Ку хисеп ячĕн форми япаласене пĕр пек валеçсе тухнине пĕлтерет. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче те пур ку форма: *-шар(-шер), -сар(-сер), -ар(-ер)*. Чăваш чĕлхинче *-ер* аффикс *пĕр* хисеп ячĕ çумне кăна хушăнать: *пĕр-ер*. Ытти хисеп ячĕсенче (çав шутра теçеткесенче пуринче те) *-шар (-шер)* аффикс пулать: *вуннĕр-шер, çирĕм пĕр-шер, çĕр вăтăр пĕр-шер* т. ыт. те. Хурăнташ чĕлхесенче *-ар(-ер)* аффикс питĕ анлă сарăлнă: тут., пушк. *ун-ар* ~ чăв. *вун-шар*; турк. *dörd-er* ~ чăв. *тăват-шар*.

Хакас, тофалар чĕлхисенче *-шар(-шер)* аффикс вырăнне *-лар(-лер)* аффикс пулать[75]: *ики-лер, алты-лар*. В. И. Рассадин калана тăрăх, хакас тата тофалар чĕлхисенчи *-лар(-лер)* валеçу хисеп формисем чи авалхисем шутланаççĕ. М. Рясянен хакас, тофалар чĕлхисенчи валеçу хисеп формине тĕрĕк чĕлхисенчи *-лар(-лер)* нумайлă хисеп аффиксĕн прототипĕ тесе пăхать[76]. М. Рясянен каланă шухăш тĕрĕсрех пулмалла. Чăнах та, *-шар(-шер)* аффикс валеçӳ пĕлтерĕшне кăна мар, нумайлăха та палăртать. Уйрăмах паллă мар нумайлăх пĕлтерĕшĕ *-шар(-шер)* аффикс теçеткесем, çĕрсем, пинсем çумне хушăнсан палăрать. *Тӳпере пиншер ç ă л т ă р куçĕсене мăчмăч хупаççĕ*; *Ç ĕ р ш е р çутăпа çутăлать тĕп хуламăр* т. ыт. те.

Хисеп ячĕсен валеçӳ категори форми пирки сăмах пуçарсан, пирĕн хисеп ячĕ çинчен çеç мар, япала ячĕсем çинчен те калаçма лекет. Çӳрессе *-шар(-шер)* аффикс хăшпĕр япала ячĕсемпе кăна çӳрет: *Мишăпа Сашăна у л м а ш а р патăм; Ç у л т а л ă к ш а р ларса тухрĕç вара çаксем; К у р к а ш а р сив шыв ĕçрĕç*. Танл.: *Мишăпа Сашăна пĕрер улма патăм. Пĕрер çулталăк ларса тухрĕç вара çаксем. Пĕрер курка сивĕ шыв ĕçрĕç*.

Япала темиçе, нумай пуласси кунта ĕçе тăвакансем (е çав ĕçпе çыхăннă çынсем) миçе пулнинчен килет. Чăнах та, *-шар (-шер)* аффикслă япала ячĕсене тепĕр майлă *пĕрер* валеçӳ хисеп формипе кăна улăштарма пулать. «Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕнче» *-шар(-шер)* аффикслă çак япала ячĕсене панă: *çулталăкшар, чулшар, миллиметршар, сантиметршар, метршар, çунатшар, пăтшар, уйăхшар*[77]. Çак словарьтех *-шар (-шер)* аффикс наречисем çумне хушăннин тĕслĕхĕсем те пур: *чылайшар, пăртакшар*.

Çак тĕслĕхсем валеçӳ форми хисеп ячĕсен, япала ячĕсемпе наречисен пурри çинчен калаççĕ. *Мăшăршар, çуршар, çурмашар* сăмахсем те хисеп ячĕсем мар. *М ă ш ă р ш а р ă н*

---

[75] Исхаков Ф. Г. Числительное // Исслед. по сравнительной грамматике тюркских языков: Морфология. М.: Изд-во АН СССР, 1956. Ч. 2. С. 201.

[76] **Räsänen M. Materialen zur Morphologie der türkischen Sprachen. Helsinki, 1957. S. 88.**

[77] Л. П. Сергеев т. ыт. Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕ. Шупашкар, 1985. 104—105 с.

*сак çине ваттисем лараççĕ те* (Хус. Тăван çĕршыв). Тĕслĕхсене тата та тупма пулать. Кунтах вăрăмăш виçин ячĕсем пурте лекеççĕ: *километршар (çухрăмшар) утрăмăр, метршар касса илтĕмĕр.* Йывăрăш виçин ячĕсене пурне те *-шар(-шер)* аффикспа калама юрать: *килограмшар, центнершер, тоннăшар, грамшар, миллиграмшар* т. ыт. те. Вăхăт виçине палăртаканнисем: *сехетшер, минутшар, талăкшар, уйăхшар.* Шута тивĕçекен (хисепне шутлама май килекен) япала ячĕсем валеçӳ формисенче пурте пулма пултараççĕ, мĕншĕн тесен çав япаласене пурне те пĕр пек валеçме май пур: *çĕрулмишер, кăранташшар, ручкăшар, пакетшар, михĕшер* т. ыт. те.

Чăваш чĕлхинчи япала ячĕсен валеçӳ формине падеж аффиксĕ теме май çук, мĕншĕн тесен *-шар(-шер)* аффикс пайăр ятсемпе çӳремест, тата ăна хисепе тивĕçмен япала ячĕсем те йышăнмаççĕ: *сĕтшер, шывшар, тăваршар* тени чĕлхере çук. Пурнăçра япала пĕрре кăна пулать пулсан, ăна та *-шар(-шер)* хушса валеçме май çук: *хĕвелшер, пурнăçшар* теместпĕр.

## 19 §. -скер АФФИКСЛĂ ПАЛĂРТУ ФОРМИ

Япала ячĕсем *-скер* палăрту формине йышăнма пултарнине чăваш чĕлхе наукинче чылай тĕплĕн çырса кăтартнă[76]. И. П. Павлов *-скер* палăрту формине *-и* аффикслă палăрту формипе пĕр ретре пăхать, анчах *-и, -скер* аффикссем хурăнташлă мар. Пĕр-пĕриншĕн алломорфсем те пулманнине шута илсе, пĕлтерĕшсем чылай чухне пĕр килмеççĕ пулин те, вĕсене уйрăмшарăн пăхсан тĕрĕсрех. Асăннă формăсен пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне И. П. Павлов çапла ăнлантарнă: «Ку формăсем хăйсенче палăртнă япаласăр пуçне тата тепĕр япала пуррине астутараççĕ, çав тепĕр япалана хăйĕн конкретлă ячĕпе мар, вăл камăн е мĕнĕн пулни тăрăх, хăш вырăнта тăни тăрăх, мĕнпе (мĕнле объектпа) çыхăнни тăрăх, ăçтан тухни (килни) тăрăх т. ыт. те палăртса кăтартаççĕ[79]. Кĕскенрех каласан, *-скер* аффикслă палăрту форми пĕр-пĕр япалана паллă мар ушкăнлă нумайлăхран уйăрса палăртнине кăтартать теме пулать. *Лашапаскер пирĕнтен вăшт! кăна иртсе кайрĕ* тенĕ чухне лашапа пыраканĕ пĕр çын пулнине пĕлетпĕр, лашасăррисем (çураннисем) миçе çын пулни паллă мар. Анчах та ку пĕлтерĕш тепĕр чухне çирĕппĕнех палăрмасть, малтанхи вырăна ятарласа палăртса калас сĕм кăна тухса тăрать: *Эпĕ, ачаскер, ăна-кăна чухлайман çав. Ачаскер* тенине çапларах ăнланма пулать: калаканнисĕр пуçне тата урăх (çитĕннĕ) çынсем пулнине астутарать. *Тихаскерне кӳлмелле пулман та-ха* предложенири *тихаскерне* сăмах, лашасен паллă

[78] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 126—128 с.
[79] Çавăнтах. 126 с.

мар ушкăнлăхĕнчен пĕрне уйăрса илсе, вăл кӳлме юрăхсăр-тараххине, çитĕнсе çитменнине палăртать.

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *-скер* палăрту формиçуккине кура тĕпчевçĕсем ку аффикс мари чĕлхинчи *ӳзгар* «япала» сăмахран пулса кайма пултарнă теççĕ. В. Г. Егоров XVIII ĕмĕрти чăваш çыру палăкĕсенче *ӳскер* сăмах хăй тĕллĕнех «япала» пĕлтерĕшпе çӳренине те палăртать[80]. М. Р. Федотов пĕр кĕнекинче *-скер* аффикс мари чĕлхинчен кĕнине çирĕплетсех калама май çук тенĕ пулсан[81], тепĕр кĕнекере иккĕленерех: «Ку аффикс мари чĕлхинчи *ӳзгар, ӳжгар* «предмет, вещь» сăмахран пулса кайнă пулмалла»,—тет[82]. Ку шухăша И. П. Павлов хирĕçлет[83].

Хальхи чăваш чĕлхинче *-скер* палăрту формипур япала ячĕ çумне те хушăнмасть. Тĕслĕхрен, вăл пайăр ятсемпе çӳреместь. Хушăнасса вара чылай падеж формиçумне хушăнать:

а) тĕп падеж формиçумне: *ачаскер, тихаскер,* танлаштару форми хыççăн та: *ача-рах-скер, тиха-рах-скер, курăк-рах-скер;*

ă) вырăн падеж формиçумне: *вăрмантаскер, хулараскер, ялтаскер, хĕрĕх çултаскер;*

б) пĕрлелĕх падеж формиçумне: *машинпаскер, велосипедпаскер, ашшĕпескер;*

в) пирке падеж формиçумне: *сĕтшĕнскер, шывшăнскер, çăкăршăнскер* т. ыт. те.

Çитменнине тата, *-скер* аффикса а) *-и* палăрту аффиксĕ хыççăн (*вăрмантискер, ялтискер, çӳлтискер, аялтискер, шыврискер, айлăмрискер*); ă) *-алла(-елле)* сулăну аффиксĕ çумне (*Васук, Мирунпа пĕр çулаллаcкер*) хушма пулать. Юлашки предложенири *çулалласкер* сăмаха вырăн падеж аффиксĕпе те кăткăслатма пулать: *çулталласкер.*

Пур япала ячĕпе çӳрейменнине кура, *-скер* аффикслă формăсене япала ячĕсен палăрту категорийĕ тесе пăхаймастпăр. Палăрту категорийĕ паллă ячĕсен кăна пулма пултарать, мĕншĕн тесен *-скер* аффикс кирек мĕнле паллă ячĕпе те çӳреме пултарать: *сарăскер, хураскер, лутраскер, начарскер, уласкер, типшĕмскер, çӳллĕскер;*

*Пĕчĕкскер, хитрескер,*
Çĕр мăкăртса тухнăскер (туп. юм.).

Паллă ячĕсемпе çӳренĕ чухне *-скер* аффикслă формăсен субстантивациленес сĕмĕ те пур: *пĕчĕкскер, хитрескер* тенĕ

---

[80] Егоров В. Г. Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964. С. 192.

[81] Федотов М. Р. Исторические связи чувашского языка с волжскими и пермскими финно-угорскими языками. Чебоксары, 1968. Ч. 2. С. 206.

[82] Федотов М. Р. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматики. Шупашкар, 1975. 38 с.

[83] Павлов И. П. Категория выделения в современном чувашском языке // Исслед. по фонетике, морфологии и фразеологии современного чувашского языка. Чебоксары, 1985. С. 9.

чухне пирĕн куç умне паллăпа çыхăннă япала тухса тăрать (кăмпа); *Сарăскер, вăрăмскер хăй* предложенире калаçу çын çинчен пулнине тӳрех сисетпĕр; *уласкер* тени пĕр-пĕр выльăха палăртать; *-скер* формăллă субстантиваципеннĕ паллă ячĕсем япала ячĕсем пекех вĕçленеççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп. | пĕчĕкскер | уласкер |
| Ҫам. | пĕчĕкскер-ĕн | уласкер-ĕн |
| Пар. | пĕчĕкскер-е | уласкер-е |
| Выр. | пĕчĕкскер-те | уласкер-те |
| Тух. | пĕчĕкскер-тен | уласкер-тен |
| Пĕрл. | пĕчĕкскер-пе | уласкер-пе |
| Çукл. | пĕчĕкскер-сĕр | уласкер-сĕр |
| Пирке | пĕчĕкскер-шĕн | уласкер-шĕн |

Нумайлă хисеп аффиксне йышăнаççĕ: *пĕчĕкскерсем, сарăскерсем, хураскерсем*; хушăран камăнлăх-сăпат категорийĕн аффиксĕсене те йышăнаççĕ: *пĕчĕкскер-ĕм, пĕчĕкскер-ӳ, пĕчĕкскер-ĕ.*

Япалалăха палăртас сĕм шут хисеп ячĕсен вырăн падеж форми çумне *-скер* аффикс хушăнсан та çухалмасть: *вăтăртаскер, хĕрĕхрескер, аллăраскер, утмăлтаскер, çитмĕлтескер.* Местоименисене илес пулсан, чылайăшĕн тĕпĕ *-скер* палăрту формине тиркет: *эпĕскер, эсĕскер, вăлскер* формăсем чĕлхере çук, анчах та *çак, мĕнле* местоименисем *-скер* аффикса ирĕккĕнех йышăнаççĕ: *Ашшĕ м ĕ н л е с к е р, студентах-и?* (Арт. Салампи); *Ç а к с к е р с е м таçтан çăкăр тупса та килчĕç. Хай* сăмах *-скер* аффикса *-хи* палăрту форми хыççăн йышăнать: *хайхискер.* Палăрту форминче *темĕн, тем, темле* паллă мар местоименисем те тăма пултараççĕ: *темĕнскер, темскер, темлескер.*

Хальхи, иртнĕ, пулас причастисем пурте *-скер* аффикс йышăнаççĕ: *вулаканскер, килекенскер, лараканскер, тăраканскер, кайнăскер, килнĕскер, каясскер, килесскер* т. ыт. те. Паллă ячĕсенчи пекех, причасти формисемпе çӳрекен *-скер* аффиксăн субстантиваципес сĕмĕ пур: *килекенскер, килнĕскер, килесскер* тенĕ чух пирĕн куç умне чĕрĕ е чĕрĕ мар япаласен сăнарĕсем тухса тăраççĕ.

Кун пирки И. П. Павлов çапла çырать: «Сайра-хутра палăрту формине тăвакан *-скер* аффикс причастире кăтартнă ĕçĕн субъекчĕ предложенире кăтартнă урăх ĕçĕн субъекчĕпе çыхăнура тăнине пĕлтерет»[84].

Эпир тишкерекен палăрту форми вырăн наречийĕсем çумне те хушăнать: *унтаскер, кунтаскер, лерескер,* хушăран *пек, мар, çук, пур* татăксемпе те çӳрет: *кашкăр п е к с к е р, ç у к с к е р н е ăçтан тупас? кунта п у р с к е р* калатăр.

[84] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 269, 275, 278, 280 с.

Тĕслĕхсене пăхса тухнă хыççăн çакна калама пулать: япала ячĕсен палăрту форми пулать пулсан, паллă ячĕсемпе причастисен палăрту категорийĕ çинчен калама май пур, мĕншĕн тесен ку пуплев пайĕсем çумне *-скер* аффикс ирĕккĕнех пурин çумне те хушăнма пултарать.

Чăваш чĕлхинчи *-скер* аффикслă сăмахсем япала ячĕсене çывăххине морфологи тишкерĕвĕ тунă чух та асăрхатпăр, мĕншĕн тесен кашнинчех палăрту формин хисепне, падежне кăтартатпăр:

а) *ачаскерĕн* — япала ячĕ, сăмах тĕпĕ — *ача*, пĕрремĕшле сăмах, пайăр ят, пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра, *-скер* палăрту форми пĕрреллĕ хисепре, камăнлăх падежĕнче;

ă) *хитререхскерсемшĕн* — паллă ячĕ, сăмах тĕпĕ — *хитре*, пĕрремĕшле сăмах, танлаштару форминче, палăрту категори форми — нумайлă хисепре, пирке падежĕнче;

б) *кайнăскерпе* — ĕçхĕл, сăмах тĕпĕ — *кай*, пĕрремĕшле сăмах, иртнĕ причасти, палăрту категори форми — пĕрреллĕ хисепре, пĕрлелĕх падежĕнче.

## 20 §. -и, -хи АФФИКСЛĂ ПАЛĂРТУ ФОРМИ ПИРКИ

Чăваш чĕлхинчи *-и* аффикс пирки çырнă ятарлă ĕç пур. Ана вуласан: *-и* аффикс хăй çеç-ши? Тен, унăн омонимĕсем те пур? — тесе шухăшлатăн. Н. А. Андреев каланă тăрăх, *-и* аффиксăн функцийĕсем расна: пĕрремĕшĕнчен, ку аффикса камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ теме юрать: *лаши, ĕни, тырри, пулли, сĕлли, сасси, çĕççи;* иккĕмĕшĕнчен, вăл сăмах тăвакан аффикс та иккен, мĕншĕн тесен иртнĕ тата пулас причастисем çумне хушăнса, япала ячĕ тăвать имĕш: *вулани* «чтение», *вуласси* «чтение»; виççĕмĕшĕнчен, *-и* аффикс — пулма пултаракан тата пулма пултарайман причасти аффиксĕ: *К у р и  куçа  к у р м и  ту*; тăваттăмĕшĕнчен, *-и* аффикс паллă ячĕсемпе наречисем пулăвне хутшăнать: *вĕри, тулли, шăлами, юри* т. ыт. те; пиллĕкмĕшĕнчен, *-и* аффикс (*-ĕ* аффикс пекех) палăрту аффиксĕ те[85].

Чăнах та, мĕнле уйăрса илмелле-ха вĕсене пĕр-пĕринчен? Малтанах камăнлăх-сăпат категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕпе палăрту формин уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăрăпăр.

Чи малтанах çакă куçа курăнать: чăваш чĕлхинче, ытти тĕрĕк чĕлхисенчи пекех, камăнлăх-сăпат аффиксĕсем (кирек хăш сăпат аффиксĕ те) сăмах тĕпĕ çумне тӳрех хушăнса пыраççĕ:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | юлташ-ăм | ача-м | чĕлĕм-ĕм | сĕлл-ĕм |
| 2 с. | юлташ-у | ач-у | чĕлĕм-ӳ | сĕлл-ӳ |
| 3 с. | юлташ-ĕ | ач-и | чĕлĕм-ĕ | сĕлл-и |

[85] Андреев Н. А. Аффиксы чувашского языка: Аффикс *-и* // Зап./ЧНИИ. Чебоксары, 1952. Вып. 6. С. 185—195.

Асăрхăр: нихăш тĕпчевçĕ те ку таранччен тĕп мар падеж формисем çумне çыпçăнса пыракан *-и* аффикса камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ тесе кăтартман. Çакна шута илсен, камăнлăх-сăпат аффиксĕсем хăйсене сăмах тĕпĕ çумне (хушăран, сăмах хупă сасăпа пĕтнĕ чух, тĕп падеж форми çумне) хушăнса палăртаççĕ теме пулать. Тĕп мар падеж формисем çумне хушăнакан *-и* аффикса палăрту форми темелли сăлтав хăех килсе тухать:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Кам. | ашшĕнни, | амăшĕнни, | çынăнни | |
| Пар. | ? | ? | ? | |
| Выр. | вăрманти, | çырмари, | шыври, | çăлти |
| Тух. | хуларанни, | çăлтанни | ялтанни | |
| Пĕрл. | машинпали, | лашапали, | ĕçпине ĕçпех | килсеттĕм-те-ха |
| Çукл. | лашасăрри, | çĕлĕксĕрри, | укçасăрри, | кĕпесĕрри, амăшĕсĕрри |
| Пирке | укçашăнни, | шывшăнни, | сĕлĕшĕнни | |

Пулăвĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан та, ку аффикссем хурăнташлă маррине курма пулать. 3-мĕш сăпат аффиксĕ алтай чĕлхисенчи 3-мĕш сăпат местоименийĕнчен пулса кайнă текен шухăш пур[86]; *-и* палăрту аффиксĕ вара, вырăн падеж форми çумне çыпçăннă чух, М. Р. Федотов каланă тăрăх, ытти тĕрĕк чĕлхисенчи (сăмахран, тутар чĕлхинчи) *-дагы, -дэге, -тагы (-тэге), -гы(-ге), -кы(-ке)* аффикссемпе тӳр килет: *Хусанти* ~ тут. *Казандагы; çурхи* ~ тут. *язгы, каçхи* ~ тут. *кичке*[87].

Тĕрĕссипе каласан, пирĕн чăваш чĕлхинче *-хи* форма çӳренине йышăнмалла. Тутар чĕлхинчи *-дагы, -тагы* аффикс, мĕн тесен те, пĕр аффикс шайĕнче пăхмалли япала мар. Тутар чĕлхинче *-да, -та* вырăн падеж аффиксĕ, *-гы, -кы* палăрту форми шутланать. Çавна май *Хусанти* сăмахра та эпир *-т* вырăн падеж аффиксĕн варианчĕ тесе пăхма пултаратпăр. Тутар чĕлхинчи *-гы(-кы)* палăрту форми вырăнне чăваш чĕлхинче *-и* пулать. Çапла вара, *-ти, -ри, -чи* аффикссене пĕр аффикс морфема тесе пăхни килĕшӳллĕ мар. Ку аффикссене пĕр аффикс тесе пăхсан, *-ăнни, -ĕнни (Мишăнни, Петĕрĕнни); -пали (лашапали), -пи (ĕçпине ĕçпех-ха), -танни (ялтанни), -тенни (хиртенни), -шĕнни, -шăнни (шывшăнни, миршĕннисем)* формăсене те пĕр аффикс шайĕнчех пăхма лекет, анчах та вĕсене пĕр аффикс тесе калама май çук. Пĕр аффикс тесе пăхас çул çине тăрас пулсан, *вулани* сăмахра *-ни* аффикс, *вуласси* сăмахра *-си* аффикс, *илемли* сăмахра *-ли* аффикс пуррине ĕнентерме тивĕççĕ. Çапла вара, *-и* палăрту аффиксĕ падеж формисем хыççăн кăна мар, иртнĕ, пулас причасти формисем хыççăн та çӳрет.

[86] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. С. 15.
[87] Федотов М. Р. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматики. Шупашкар, 1975. 38 с.

Палăрту аффиксĕ тĕп падеж форми çумне пачах хушăнмасть, анчах И. П. Павлов ку шухăшпа килĕшмест.

Эп çирĕп те таса *йывăççине*
Пĕлеççĕ пурте. Эп — юман (Кăлкан)

предложенири *йывăççине* сăмахри *-и* аффикса вăл палăрту форми тенĕ. Автор кунта *йывăççине* сăмах уйрăммăн тăнине шута илнĕ пулмалла, мĕншĕн тесен вăл маларах камăнлăх формин 3-мĕш сăпачĕ япала ячĕсемпе, местоименисемпе çыхăнса сăмах майлашăвĕ туни çинчен каланăччĕ[88]. Анчах та сăмах майлашăвĕнчи (изафет 2) *-и* аффикслă сăмахсене кăна камăнлăх форми тенине ĕненес пулсан, 86-мĕш страницăра панă: *Ути ем-ешĕл* пуплеври *ути* сăмахра та *-и* палăрту аффиксĕ темелле, анчах та автор *ути* сăмах камăнлăх форминче пулнине çирĕплетет: «Камăнлăх формин 3-мĕш сăпат аффиксĕ япала çинчен унччен асăнса илнине, халĕ те çав япала çинченех сăмах пынине пĕлтерме пултарать, урăхла каласан, япала çинчен халь калани маларах каланипе çыхăннине кăтартать»[89].

Енчен те *-и* палăрту аффиксĕ тĕп падеж форми çумне хушăннипе килĕшсен, *-ĕ* аффикса та палăрту форми тесе йышăнма лекет: *Салтакĕ пит хитрескер вара* (Арт. Салампи) предложенири *салтакĕ* сăмахри *-ĕ* аффикса никам та палăрту форми темен. Куна хăйĕн рецензийĕнче И. А. Андреев та палăртса хăварнă[90].

Пирĕн шутпа, япала ячĕсен тĕп падеж форми çумне (е сăмах тĕпĕ çумне) хушăнакан *-и, -ĕ* аффикссене камăнлăх-сăпат категорийĕн аффиксĕсем тесех пăхмалла, вĕсен камăнлăх пĕлтерĕшĕ те, палăрту пĕлтерĕшĕ те пуррине палăртмалла. Тĕп мар падеж (е ытти формăсем) çумне хушăнакан *-и* аффикса яланах палăрту форми темелле. Глагол тĕпĕ çумне хушăнакан *-и* яланах пулма пултаракан причасти аффиксĕ шутланать *(Кури куçа курми ту)*, анчах та ку формăн та палăрту пĕлтерĕшĕ пулма пултарать: *Ман ытараймие — имажинизм поэзине* (Ç. М.). *Пули-пулмисемпе ан çыхлан* (Бурн.).

*Ытарайми* сăмахра *-и* аффикс глаголăн пулаюсăрлăх форми çумне *(-ай+-м)* хушăнать. Унăн палăрту пĕлтерĕшĕ куç умĕнчех. Тепĕр предложенири *пули-пулмисемпе* сăмахăн глаголлăхĕ сĕвĕрĕлсе, япалалăх пĕлтерĕшĕ вăй илсе пырать. Çавна май *пули-пулмисемпе* тени *пули-пулми çынсемпе* сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшне туянать.

---

[88] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 86 с.

[89] Çавăнтах. С. 87.

[90] Андреев И. А. Асăннă рецензи. 200 с.

## 21 §. ТĂТĂШЛĂХ ФОРМИ

Тăтăшлăх форми тени — çĕнĕ термин, ку форма *-серен* аффикспа пулать:

*Атăлсерен* кукрисем,
*Кукрисерен* хăвисем,
*Хăвисерен* йăвисем,
*Йăвисерен* чĕписем (чăв. хал. юр.).

Тăтăшлăх форминчи сăмахсем япала нумайййине, тăтăшах тĕл пулнине палăртаççĕ. *Атăлсерен* сăмахпа авалхи чăвашсем темиçе юханшыва каланă: *Мăн Атăл, Шур Атăл, Кăвак Атăл, Вилĕ Атăл, Кĕçĕн Атăл, Хура Атăл* (А II 143); Акă П. Хусанкай кун пирки мĕн çырать:

Чулман Атăл теекен
Юхăм шыв курса иртен,
Кама теççĕ вырăсла...
Нухрат Атăл теекен
Вятка — шыв тĕлне çитсен...
(Хус. Тăван çĕршыв).

*Кукрисерен* тени «кашни кукринче», «кукрисенче», *хăвисерен* «кашни хăва çинче», *йăвисерен* «кашни йăвинче» тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕ. Чылай тĕпчевçĕ *-серен* аффикс хыççăмах пулнине, *кашни* тенипе пĕр пĕлтерĕшлине палăртать[91]. И. А. Андреев *-серен* аффикслă сăмахсене наречисен ретĕнче пăхнине хирĕçлет, мĕншĕн тесен *-серен* аффикс сăмах тăвакан аффикс шайне лармасть[92]. Пирĕн шутпа, *-серен* аффикса университетăн чăваш чĕлхин кафедри кăларнă «Чĕлхе пĕлĕвĕсен программинчи» пек, форма тăвакан аффикс тесе пăхмалла, мĕншĕн тесен сăмаха улăштаракан аффикссем япала ятне падеж, хисеп, сăпат тăрăх улăштараççĕ, *-серен* аффикс пирки ăна калама май çук.

Чăваш чĕлхинче *-серен* аффикс япала ячĕсем çумне кăна мар, глагол формисем çумне те хушăнать. *Вуламассерен, каймассерен, килмессерен, ăсмассерен* тенĕ чухне вăл ĕç тăтăшлăхне, ĕç темиçе хут пулса иртнине пĕлтерет. Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсенче *-серен* аффикс *-ма(-ме)* инфинитив форми çумне хушăнни куçкĕретех. *Вула-ма-ссерен, кай-ма-ссерен* тенĕ чух <с> сасă икĕ уçă сасă хушшине лексе вăрăмланать, *-ма(-ме)* инфинитив аффиксĕ пулнине Сĕнтĕр калаçăвĕнчи тĕслĕхсем те çирĕплетеççĕ: *кай-мак-серен, кил-мек-серен* (ку тĕслĕхсенчи *-мак(-мек)* аффикс инфинитивăн авалхи форми шутланать). Танл.: *отурмак* ≈ чăв. *ларма; ёзамак* ≈ чăв. *çырма, билмек* ~ чăв. *пĕлме* т. ыт. те. Диалектсенче *-мак (-мек)* аффиксри *к* ~ *х* сасă ылмашăвне те курма пулать:

[91] Ашмарин Н. И. Материалы для исследования чувашского языка. С. 217.
[92] Андреев И. А. Асăннă рецензи. 199 с.

*Вăл каймахсайран, унăн арăмĕ патне...* (Ашм. Опыт исслед. чув. синтаксиса. Ч. 2. С. 31).

В. Г. Егоров *-массерен(-мессерен)* аффикс пулас причастин хирĕçлев аспекчĕн *-мас(-мес)* форми çумне *-серен* хыçсăмах хушăнса пулнă тенине ĕнентерӳллех мар тесе шутлать Л. С. Левитская[93]. Малтанах пăхсан, В. Г. Егоров каланине çак тĕслĕх çирĕплетет пек: *Чăвашсем ĕç пуçламас-пĕтермес сейăран кĕлтăваççĕ. Çавăн пек тыр вырнă чухне, ана пуçламас-пĕтермес сейăран кĕлтăваççĕ* (А XI 88—89). Çак тĕслĕхĕн хăйевĕрлĕхне Н. И. Ашмарин морфемăсен чиккисене пăтраштарнипе (переразложение морфем) пулнă тесе ăнлантарать[94]. Тĕрĕсрех *ĕç пуçлама-пĕтерме сейĕрен,* темелле пулнă. *Вуламассерен, килмессерен* йышши сăмахсенче *-ма(-ме)* инфинитив аффиксĕн хăйĕн уйрăм пĕлтерĕшĕ те, форми те питĕ лайăх палăрать. Апла пулин те, И. П. Павлов кунта *-ма(-ме)* аффикс çуккине, вăл *-серен* аффикспа пĕрлешсе кайнине ĕнентерет. Çавна пула *-массерен(-мессерен)* пĕр аффикс шайне ларать имĕш[95]. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *саен, сай* хыççăмах причасти форми хыççăн тăнине палăртса (тут. *кӧргэн саен,* хак. *кôргэн сай),* автор, чăнлăхран пăрăнсах, инфинитив та причасти форминчен пулса кайнине ĕнентерме тăрăшать. Анчах та автор маларах инфинитив причастирен мар, ят сăмахсенчен пулса кайнине каланă[96].

Çапла вара, *-массерен(-мессерен)* аффикса деепричасти аффиксĕ теме май çук, мĕншĕн тесен деепричасти сăмах хăех причастирен пулнă тенине пĕлтерет, кунта вара деепричасти инфинитивран пулса кайнă пек пулса тухать.

Пирĕн шутпа, *-массерен(-мессерен)* йышши формăсене инфинитивăн тăтăшлăх категори форми темелле, ку формăсем ĕç тăтăшлăхне палăртнине кăтартмалла. Кунсăр пуçне, *-массерен(-мессерен)* йышши формăсене, сăмахсене морфемăсем çине пайлас принципа тĕрĕс тытса пырсан, пĕр аффикс теме çук.

## ПĔТĔМЛЕТСЕ КАЛАНИ

Хăй вăхăтĕнче Л. В. Щерба çапла каланă: «Грамматика, пĕтĕмĕшле илсен, категори формисене çырса кăтартни çинче никĕсленет». Вырăссен чаплă чĕлхеçи калани çумне эпир çакна хушнă пулăттăмăр: «Чăваш чĕлхин морфологийĕ категориллĕ тата категорисĕр формăсен шайлашулăхĕ çинче никĕсленнĕ. Çав формăсене тĕпчесси — чăваш чĕлхин морфологийĕн тĕп тĕллевĕ».

---

[93] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. С. 110.

[94] Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Ч. 2. Симбирск, 1923. С. 32.

[95] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 295 с.

[96] Çавăнтах. 261 с.

Ӑнах та, ку таранчченхи чăваш чĕлхин морфологи ыйтă-вĕсене çутатса паракан ĕçсенче категори формисене пур ен-лĕн тишкерес тĕллев пулман. Çавна май, категорисĕр формă-сем пуррипе çуккине асăнман та.

Япала ячĕн яланхи падеж (вĕçлевлĕх), хисеп, камăнлăх-сăпат, вĕçленӳ категорийĕсем пуррине палăртнипе пĕрлех, ку ĕçре иртнĕ вăхăт категорийĕ пуррине кăтартнă, анчах та *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикслă евĕрлĕх категорийĕ пирки хал-лĕхе асăнман.

«Падеж системине кĕмен формăсем» категорисĕр формă-сем пулнине çирĕплетнĕ, вĕсен шутне сулăну, пурлă, валеçӳ, палăрту, тăтăшлăх формисене кĕртнĕ.

Категориллĕ тата категорисĕр формăсем çинчен вĕрент-нипе пĕрлех чăваш чĕлхин морфологи тытăмĕнче сăмах тата сăмах формин улшăнăвĕ пурри пирки çирĕплетсех калама пу-лать. Категориллĕ тата категорисĕр формăсен улшăнăвĕ пур-ри чăваш чĕлхин морфологине «сăмах улшăнăвĕ» текен тер-минпа кăна ăнлантарма май çуккине ĕнентерет.

Ӑнах та, ку таранччен хăшпĕр пуплев пайĕсен категори формисем пуррине пачах та асăнман. Чылай чухне «сăмах улшăнăвĕ» текен пĕтĕмĕшле терминпа витĕннĕ те, вырăс чĕл-хин грамматикин системине тĕпе хурса, чăваш чĕлхин морфо-логи системине, унăн хăйевĕрлĕхне пачах та курасшăн пул-ман.

Категориллĕ тата категорисĕр формăсем пуррине шута хуни пĕтĕм чăваш чĕлхин морфологине системăллă шайлаш-тарса тĕпчеме май парать, пуплев пайĕсене кĕрекен сăмахсене пĕлтерĕшпе морфологи паллисене кура уйăрмалли принцип тĕп вырăна тухать.

Паллах, кунта каланă çĕнĕ шухăшсем чăваш морфологи ыйтăвĕсене вырăс чĕлхи грамматикин саккунĕсене пăхăнтарса тĕпчекенсене килĕшмесен те пултарĕç, вĕсем çине тăрсах хи-рĕçлĕç. Анчах та чăнлăх тавлашура çуралнине шута илсе, ку кĕнекере аталантаракан шухăшсем кăвар чĕреллĕ пулас чăваш чĕлхин тĕпчевçисемшĕн усăллă пуласса шансах тăрат-пăр.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


Андреев В. А. Категория склонения в чувашском языке: Автореф. дис. ... канд. филол. наук. М., 1987. С. 18.

Андреев В. А. Основной падеж в системе категории склонения в чувашском языке // Совершенствование преподавания общетюркологических дисциплин в вузе / Материалы конференции. Чебоксары, 1986. С. 110—116.

Андреев И. А. К вопросу о выделении категории относительных прилагательных в тюркских языках // Вопр. чув. лит. и языка: Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1966. Вып. 32. С. 90—103.

Андреев Н. А. Имя существительное // Материалы по грамматике современного чувашского языка: Морфология. Чебоксары, 1957. Ч.1. С.5—61.

Ашмарин Н. И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 392.

Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Чувашский язык: Тр. / ЧНИИ. Чебоксары, 1976. Вып. 66. С. 3—86.

Благова Г. Ф. Тюркское склонение в ареально-историческом освещении. М., 1982. С. 301.

Гузев В. Г., Насилов Д. М. Словоизменительные категории в тюркских языках и понятие «грамматическая категория» // Советская тюркология. 1981. № 3. С. 22—35.

Егоров В. Г. Современный чувашский язык в сравнительно-историческом освещении. Чебоксары, 1954. С. 301.

Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1967. Вып. 34. С. 67—99.

Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1969. Вып. 39. С. 106—126.

О дискуссии по некоторым вопросам чувашской грамматики // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1955. Вып. 12. С. 230.

Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 343 с.

Павлов И. П. Категория выделения в современном чувашском языке // Исслед. по фонетике, морфологии и фразеологии современного чувашского языка. Чебоксары, 1985. С. 3—15.

Севортян Э. В. Категория падежа // Исследования по сравнительной грамматике тюркских языков: Морфология. М.: Изд-во АН СССР, 1956. С. 45—64.

Суник О. П. Существительное в тунгусо-маньчжурских языках. Л., 1982. С. 246.

Тимухха Хĕветĕрĕ. Чăваш чĕлхийĕн крамматикĕ. Шупашкар, 1924. 144 с.

Федотов М. Р. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматики. Шупашкар, 1975. С. 220.

Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 2. Чебоксары, 1983. Ч. 3. 1986. С. 136.

Щербак А. М. Очерки по сравнительной морфологии тюркских языков: Имя. Л., 1977. С. 190.

## ТУПМАЛЛИ


Сăмах тата сăмах формин улшăнăвĕ. Умсăмах . . . . . 3
1 §. Япала ячĕ . . . . . . . . . . . . . 5
2 §. Чăваш чĕлхинчи хисеп категорийĕ . . . . . 6
3 §. Ҫамăнлăх-сăпат категорийĕ . . . . . . . 9
4 §. Япала ячĕсен падеж категорийĕ . . . . . 20
5 §. Тĕп вĕçлевлĕх (падеж) пирки . . . . . . 25
6 §. Ҫамăнлăх вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . 26
7 §. Пару вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . . . . 31
8 §. Вырăн вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . . . 33
9 §. Туху вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . . . . 35
10 §. Пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . . 37
11 §. Ҫуклăх вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . . . 39
12 §. Пирке вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) . . . . . . . 42
13 §. Вĕçленӳ хăйъевĕрлĕхĕ тата вĕçленӳ категорийĕ . . . 43
14 §. Япала ячĕсен иртнĕ вăхăт категорийĕ . . . . . 45
15 §. Падеж системине кĕмен формăсем . . . . . 46
16 §. Ҫулăну форми . . . . . . . . . . . 47
17 §. Пурлă тата çуклă форма . . . . . . . . 49
18 §. Валеçӳ форми . . . . . . . . . . . 51
19 §. *-скер* аффикслă палăрту форми . . . . . . 53
20 §. *-и, -хи* аффикслă палăрту форми пирки . . . 56
21 §. Тăтăшлăх форми . . . . . . . . . . 59
Пĕтĕмлетсе калани . . . . . . . . . . 60
Усă курмалли литература . . . . . . . . . 62

*СЕРГЕЕВ Виталий Иванович*

ИМЯ СУЩЕСТВИТЕЛЬНОЕ В ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

Учебное пособие

Редактор М. М. Федорова

Тематический план 1990 г. поз. 1628

Сдано в набор 28.06.90. Подписано в печать 13.09.90. Формат 60×90/16. Бумага газетная. Печать высокая. Гарнитура литературная. Усл. п. л. 3,75. Усл. кр.-отт. 3,75. Уч.-изд. л. 3,5. Тираж 500 экз. Заказ № 856. Цена 20 к.

Чувашский государственный университет имени И. Н. Ульянова
Типография университета. 428015 Чебоксары, Московский пр., 15

20 к.